К84.89(=Чув)
Э53
Ч-48759



Национальная библиотека ЧР
4-048759

К 84,89(=4чув)
Э53

Улькка Эльмен

# Сарă кĕпе

Повесть, калав



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2016

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=635.1)-44
Э 53

**Улькка Эльмен**
Э 53 Сарă кĕпе: повесть, калав / Улькка Эльмен. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2016. — 95 с.
ISBN 978-5-7670-2473-5

Чи хĕрÿ вăхăт — экзаменсем пуçланмалла. Шкулта лайăх вĕренекен Дашăн чĕрине кĕтмен çĕртен юрату çатăрласа илет. Уншăн савăнмалла пек кăна ĕнтĕ, анчах хĕре хăйсем чухăн пурăнни тарăхтарать. Темле майпа хăвăрт пуйса кайнă çынсен ачисем, темиçе тантăшĕ, сăпайскере пĕрмай ура хураççĕ, элек сараççĕ. Пысăк инкек килсе çапас хăрушлăх тухса тăрать...

И-48759

**УДК 821.512.111**
**ББК 84(2Рос=635.1)-44**

Национальная библиотека
Чувашской Республики

© Улькка Эльмен, 2016

**ISBN 978-5-7670-2473-5**

© Чăваш кĕнеке издательстви, 2016

Проверено 1 СЕН 2017



# Сарă кĕпе

Повесть

Халăх çăварĕ хапха мар —
сăлăп ярса хупаймăн.

*Ваттисен сăмахĕ*

Шурă пĕсехеллĕ пĕр ушкăн кайăк юр çийĕн вĕссе иртрĕ те пар çĕкленсе çул хĕррипе ӳсекен шурă хурăнсем çине пырса ларчĕ. Акă сарă пĕсехеллĕ тепĕр йыш кăнтăр енчен вĕссе килчĕ. Ларма вырăн шырарĕç-ши: хурăнсем тăррипе вĕçе-вĕçе иртрĕç. Каялла вĕссе анса юр çине ларчĕç. Тяпписене сивĕ пулчĕ пулмалла: вăшт çеç пĕр харăссăн çĕкленчĕç те малтанхисемпе юнашарах вырнаçрĕç. Унччен те пулмарĕ — тепĕр ушкăн шыври пулăсем пек енчен енне вĕлтлете-вĕлтлете çул урлă вĕçрĕ. Çулпа утса пыракан хĕрачан пуç тăрринче çаврăна-çаврăна илчĕ те шурă хурăнсем еннелле пăрăнчĕ. «Кăсăясем», — пĕлĕтелле тинкерсе хуллен каларĕ хĕрача. Çулăн икĕ айккипе ӳсекен

хурӑнсем те хаклӑ хӑнасемшӗн савӑнчӗҫ пулас: ӑшӑ ҫиле майӑн турачӗсене вылята-вылята илчӗҫ те, канлӗхе пӑлхатас мар тесе-ши, шӑпланчӗҫ.

— Шел, пурне те палламастӑп. Калӑр-ха, мӗн ятлӑ эсир? — хӗр сарӑ вӑрӑм ҫивӗтне кӑкӑрӗ умне ҫавӑрса ячӗ те хурӑнсем еннелле тинкерсе ыйтрӗ. Унтан сумкине васкавлӑн ҫул хӗррине лартрӗ, икӗ аллине сарса вырӑнта ҫаврӑна-ҫаврӑна илчӗ, вӗҫен кайӑксем пек ҫӳлелле кармашса вӗҫсе каяссӑн хӑпартланчӗ, сиккелерӗ, куҫӗсене хупса уйри шӑплӑхпа, канлӗхпе киленчӗ.

— Эх, илемлӗ те ҫут тӗнче! Кам шухӑшласа тупнӑ-ши ҫак илеме? Пурӑнас, ашкӑнас, савӑнас килет!

Питне ҫурхи хӗвел пайӑркисемпе ӑшӑ ҫил ачисем ачашланине туйрӗ вӑл. Пуҫне каҫӑртса пӗлӗтелле тинкерчӗ. Шурӑ мамӑк ҫийӗн каркаланса сапаланнӑ кӑвак чӑмӑрккасем ӑна асламӑшӗн тӗррине аса илтерчӗҫ. Хӗр рехетленчӗ. Чӗринче ырӑ варкӑш хускалса илсе пӗтӗм кӗлеткене ӑшӑтса ячӗ. Ҫав самантра аякра хыттӑн кӗрленӗ сасӑ янӑраса кайрӗ. Хӗр хӑвӑрттӑн куҫне уҫрӗ те тавралӑха пӑхса ҫаврӑнчӗ: ял енчен лавккана тавар турттаракан машина кӗрлеттерсе килет иккен. Вӑл хӑй ашкӑннине никам та курмарӗ-ши тесе пӑшӑрханса илчӗ те сумки патнелле чупрӗ. Вӗҫен кайӑксем те таврана ҫуракан сасран хӑрарӗҫ пулас: пӗр харӑс ҫӗкленсе, ҫӗнӗ тусӗпе сывпуллашнӑн вӗҫсе ҫаврӑнчӗҫ, черченкӗ ҫуначӗсене вӗлтӗр-вӗлтӗр тутарса курӑнми пулчӗҫ.

— Эй, хӗрачи, Чалӑмкасси ялӗ ӑҫта вырнаҫнӑ-ши? — хӗрпе танлашсан хура кӑтра пуҫне кабинӑран кӑларса ыйтрӗ палламан каччӑ. — Ҫак еннелле терӗҫ те, ҫултан пӑрӑнтӑм пулмалла — ниепле те тупаймастӑп.

Хӗр сумкине хыҫалалла тытса качча тинкерчӗ. Ҫӳҫӗ хура пулсан та икӗ куҫӗ кӑн-кӑвак унӑн. Кулнӑ чухне пит ҫӑмартийӗсем ҫинче икӗ путӑк палӑрать. «Хӗрачанни пекех», — вӗлтлетрӗ шухӑш Даша пуҫӗнче. Чӗринче ӑшӑ варкӑш хумӗ шуса иртрӗ, вӑл вӑтанса пуҫне чикрӗ. Палламан каччӑ та хӗре тинкерчӗ. Хӑй ун умӗнче мӗн сӑлтавпа чарӑннине те манчӗ тейӗн: куҫӗсене хӗссе хӗре ура тупанӗнчен пуҫласа

пуç тӳпи таранах сăнарĕ. Куçĕсем пике кĕлетки тăрăх чупнă майăн хĕвел пайăркисен çутине тӳсеймесĕр шывланчĕç.

— Эсир йĕретĕр-им? — палламан çынна вăрах сăнанинчен аванмарланса ыйтрĕ хĕр. — Чалăмкасси — эпĕ çуралнă ял. Çак çул тăрăх тӳрĕ каймалла, кайран сылтăмалла пăрăнатăр та ял курăнсах ларать. Икĕ йăмра ӳсет унта. Çĕтсе каймастăр.

— Эс вăл ялтан пулсан атя, лар эппин, çул кăтартăн.

— Çу-ук, эп палламан çынсен машинисем çине лармастăп.

— Паллашăпăр ларсан. Эп сирĕн яла çеç пĕрремĕш хутчен килетĕп, ку тăрăхри лавккасене вара тăватă çул тавар турттаратăп. Сан пек чипер хĕр пĕрре те курман. Мĕн ятлă эс?

— Даша тесе чĕнеççĕ мана, — пуçне чиксе хуравларĕ хĕр. — Эсир кайăрах. Эпĕ çуранах утатăп.

— Эпĕ Саша ятлă. Епле илемлĕ илтĕнет: Саша — Даша, Даша — Саша, çапла-и?

Хĕрача именсе пуçне чикрĕ.

— Ку таврара кашкăрсем çӳреççĕ тенине те илтнĕччĕ эп, хăрамастăн-и? — Даша вăтаннине асăрхаса сăмаха аяккалла пăрчĕ каччă.

— Тахçан пулнă вăл. Сунарçăсем вĕсене йăлт персе пĕтерчĕç, курăнмаççĕ халь.

— Мĕншĕн пĕччен çӳретĕн? Йытă качка та тапăнма пултарать, атя, лар, пĕрле кайăпăр.

— Аюк, лармастăп. Аттепе анне курсан та ятлама пултараççĕ. Эсĕ каях. Ахальлĕн те санпа нумай пакăлтатса тăратăп, çынсем курсан тем калĕç, — Даша хăй малалла утма хатĕрленнине систерсе сумкине хул айне чикрĕ. — Пĕччен мар эпĕ, хам шухăшсемпе. Эртелпе чухне шухăшлама чăрмантараççĕ.

— Юрĕ эппин, хăвăн ирĕкӳ, — каччă та пуçне кабинăна каялла чиксе машинине тапратрĕ. — Эп ку тăрăха часчасах килсе çӳретĕп, курнăçăпăр-ха.

— Курнăçăпăр... Турă пулăшсан... — машина курăнми пулсан хуллен пăшăлтатрĕ Даша. Унтан сиккелесе илчĕ те ялĕ еннелле васкарĕ.

Кĕçĕн Çавал хĕрринче вырнаçнă Чалăмкасси ялĕ. Ялти ватăсем каланă тăрăх, ку вырăнта тахçан сĕм вăрман пулнă. Пăрхули ятлă каччă пуçарса янă иккен çак яла.

Халăхра ун пирки хурлăхлă халап та çӳрет. Пăрхулин ашшĕ-амăшĕ чухăн çынсем пулнă. Çемье йышлă, ачисем пĕринчен тепри пĕчĕк. Пăрхули пĕртен-пĕр ывăл пулнă. Çĕр арçынсене çеç уйăрса панă пирки лартса ӳстернĕ тырăпулă çĕнĕ çулччен çиме те çитмен. Ирĕксĕрех ялта лавкка тытакан çĕрме пуян Мирун патĕнче ĕçлекелесе тăранса пурăнма тивнĕ. Пăрхули ашшĕ те, ялти чылай хресчен пекех, акма-лартма вăй çитерейменнипе çĕрĕн пĕр лаптăкне Мируна тара парать. Тарçăра ĕçлесех ӳссе çитĕнет Пăрхули. Инкеке, пĕррехинче çул çинче ăнсăртран Мирунăн пĕртен-пĕр хĕрне Селимене тĕл пулать. Хытă упранă тет ăна Мирун. Питĕ хитре пулнăран урама та кăларман. Селиме ытларах чиркӳ çумĕнчи çуртра манашкăсем патĕнче пурăннă тет. Ашшĕ хулана кайсан çеç ăна амăшĕ урама тухма ирĕк панă иккен. Шăп çавăн пек самантра тĕл пулнă та ăна Пăрхули, улăхран курăк çулса таврăнаканскер кĕтмен-туман çĕртен сап-сарă икĕ вăрăм çивĕтне кăкăрĕ умне янă хĕр утса пынине асăрхать. Тĕрлĕ чечек ӳсекен улăхра хĕр хăй те чечек пекех курăннă. Селиме те качча асăрхать. Икĕ мăшăр куç чылайччен пĕр-пĕрне сăнаса тинкереççĕ. Пăрхули чĕринче çеç мар, Селиме ăш-чикĕнче те вут-кăвар ялкăшма пуçлать çак кунтан. Хĕрпе каччă вăрттăн тĕл пулма пуçлаççĕ. Кĕçех Селиме ача кĕтни паллă пулать. Мирун çакна пĕлсен тискер чĕр чун пекех тулхăрса каять. Шыçмак пичĕ хĕрлĕ кăвар пекех вут-хĕм сапать. Вăл ялта пурăнакан ытти пуянсен ывăлĕсемпе каварлашса Пăрхулине вĕлерме шут тытать. Вĕсен сăмахне вăрттăн итлесе тăнă Селиме япалисене пуçтарать та савниййĕ патне тухса чупать. Çĕр варринче çумăр витĕр вĕсем ялтан тухса тараççĕ. Çакă Селимешĕн ахаль иртмест: çул çинче чирлесе ӳкет вăл. Нимĕн тума аптăранă Пăрхули халĕ Чалăмкасси вырнаçнă тăрăхра чарăнса çĕрпӳрт алтать. Ывăлĕ те, Атнер, çавăнтах çуралать вĕсен. Анчах Селиме нумай пурăнаймасть: тăван килтен тухса тарнăшăн хурланса асап-

ланма пуçлать те пĕр ирхине кăн-кăвак куçĕсене ĕмĕрлĕхех хупать. Сĕм вăрманта ывăлĕпе çеç тăрса юлнă Пăрхули ашшĕпе амăшне хăй патне илсе килет. Вĕсем çĕре кĕрсессĕн мĕн ватăличчен ывăлĕпе çеç пурăнать. Вăл авлансан ун ачисене пăхать. Хĕрĕ хĕне кайса вилнĕ хыççăн Мирун та ялтан пĕр сассăр çухалать. Ун лаши Çавал хĕрринче пĕчченех тăнăран шыва путса вилнĕ текен сас-хура сарăлать. Çакăнтан пуçланса кайнă иккен Чалăмкасси ялĕ. Чăнах пулнă-и çакă е халап çеç — ăна халĕ никам та татăклăн калаймасть. Анчах улăхри икĕ тĕмеске патне тин çеç мăшăрланнă çемьесем кашнинчех пил илме кĕрсе тухаççĕ: Пăрхулипе Селимен вилтăприйĕсем телей парасса шанаççĕ.

Ял хĕрринчи йывăç çуртра паян иртенпех шăв-шав тăрать. Кил хуçи хĕрарăмĕ Натали аппа пӳртре кĕмсĕртеттерсе унталла-кунталла утнă хыççăн алăка шанлаттарса кил картине тухрĕ. Витерен тислĕк кăларакан упăшкине асăрхасан чышкисене чăмăртаса ун патнелле утрĕ.

— Миша! Миша тетĕп! Хур ами каллех çăмартисем çинчен анса тарнă. Миçе хутчен каламалла сана алăка хупса çӳре тесе!

— Уçалма тухнă ĕнтĕ. Кĕçех кĕрет. Алăкне эп мар, хур амин те ирĕке тухса çӳремелле тесе анне уçрĕ, — сенĕкне навус купи çине тăрăнтарса びаларĕ кил хуçи. — Иртенпех кĕрлесе çӳриччен мĕн те пулин пĕçерсе çитересчĕ сан пире. Ачасем кĕçех шкултан таврăнаççĕ. Ирхине те çинĕ-çимен тухса чупрĕç.

— Кам чарнă вĕсене çиме? Сĕт пур. Яшка та пĕçернĕ.

— Вĕсене валли мĕн те пулин тутлăраххине пĕçерсен аван та.

— Мĕн вăл тутлăраххи? Кăлпасси-сыр илме укçа кирлĕ. Юрĕ-ха, кун пек те аптăрамĕç. Хамăр та çаплах ӳснĕ. Пире анне шкула каяс умĕн сĕтел çине пĕрер кашăк песук хурса паратчĕ те çавна çăкăрпа пусса çисе шкула тухса чупаттăмăр. Çаплах вĕреннĕ, çын пулнă.

— Мĕн çынĕ ĕнтĕ эпир санпа?.. Пурăнатпăр нишлĕхре.

Хуçалăхĕ арканчĕ. Ĕç çук. Района каяс — çӳреме укçа кирлĕ. Юрать-ха, сĕтне-тăпăрчне ялах килсе туянса каяççĕ. Тата аннен пенси укçийĕ пулăшать. Тепĕр ĕне туянсан аван та çав. Укçине ăçтан тупмалла? — кил хуçи кивелнĕ çĕлĕкне хăлхисем çине туртса лартрĕ те пӳрт еннелле утрĕ. — Мĕн те пулин çимелли пур-и унта сан? Хырăм выçрĕ.

— Ирхи яшка пур. Паян аннӳн пенсине килсе памалла. Даша таврăнсан лавккана чуптарăпăр.

— Анне пурри аванах çав. Кил-тĕрĕшре те пулăшать, укçине те вăхăтра параççĕ вĕсене. Пĕрех хут, хăвăртрах пенсие тухасчĕ.

Даша шкултан таврăнсан сумкине стена çумне тирпейлĕн çакрĕ те тумне улăштарса асламăшĕ пурăнакан пӳлĕме кĕчĕ. Тĕрĕссипе, пӳлĕм те мар ĕнтĕ вăл. Пысăк пӳлĕмрен тата тĕпелтен тăрать Дашăсен пӳрчĕ. Вată çын чаршав карса хăйне валли уйрăм вырăн, пĕчĕк сĕтел лартгарчĕ. Пĕчĕк пулин те хăтлă асламăшĕн йăви. Çакăн пек ят панă вĕсем асламăшĕпе иккĕшĕ чаршав хыçĕнчи вырăна. Тепĕр чухне Даша та час-часах кĕрсе çывăрать кунта. Асламăшне пилĕкĕнчен ыталаса илет те хăйне çăтмаха лекнĕ пекех туйма пуçлать. «Ай-вай, ытлашши ан чăмăртаха, пăвса вĕлеретĕн», — текелет ун пек чухне ват çын ăна. Хăй çав вăхăтрах мăнукне пуçĕнчен ачашласа хăй çумне пăчăртать.

— Асанне-е, — асламăшне çупăрласа илчĕ Даша. — Пĕлетĕн-и эпĕ паян кама тĕл пултăм?

Асламăшĕ шарламарĕ. Мăнукĕн кăкăрĕ умне аннă çивĕчĕсене хыçалалла ячĕ те чеерехххĕн куçран пăхрĕ.

— Мĕншĕн кама тĕл пулнине ыйтмастăн, асанне? — асламăшĕ чĕнменни Дашăн чăтăмлăхне пушшех те хĕстерчĕ. Тӳрех каласа пама пуçласран хăйне аран чарчĕ.

— Ыйтмасăрах пĕлетĕп, мăнукăм. Куçусем çиçеççĕ. Йăлт куранса тăрать: эсĕ юрату авăрне лекнĕ пулас, — çепĕççĕн хуравларĕ асламăшĕ.

— Нимĕнле юрату авăрне те лекмен эпĕ. Калаçатăн та, асанне, кирлĕ мара. Тата... мĕншĕн авăра? Авăр вăл

хăрушă япала, унта лексен шыв çавăрттарса кĕрсе каять те путса вилме те пулать.

— Юрату та çавăн пекех, мăнукăм. Сисмесĕрех хăй тыткăнне илет те этем чĕрине вут хурать. Кам çунса каять унта, кам вăй илсе çӳлелле çĕкленет.

— Ытла та хăрушла калаçатăн эс. Мĕншĕн çунса каять? Ман шутпа, юрату çынна илем кӳрет, çунат хушать. Сăмахран, Саламни юратăвĕ. Кирек мĕн пулсан та вăл хăй туйăмĕсене упрать, кĕтет... Акă эсир, асаттепе иксĕр, юратса пĕрлешнĕ-и?

— Мĕн юратăвĕ пулнă ун чухне? Аттепе анне кама суйласа илнĕ, çавна качча кайнă. Эп аслаçуна туйра пĕрремĕш хутчен куртăм.

— Епле апла, асанне?

— Аслаçу кӳршĕ ялтанччĕ. Çавăнпа эпир вăйăсенче те тĕл пулман. Çитĕнсе çитсен пырса çураçрĕç. Пурăна киле килĕштертĕм ăна. Унтан сан аçу çуралчĕ, хыççăнах — Ухванеçпе Петĕр. Хĕр памарĕ пире Турă. Çуралнисем вилсе пычĕç. Кайăк ятне те парса пăхрăмăр, усси пулмарĕ. Чĕкеç те, пирĕнле каласан Танюк, çуралсан виçĕ уйăхранах вилчĕ.

— Епле... кайăк ятне панă, асанне?

— Ĕлĕк йăли çапла пулнă: çемьере ачасем пĕрин хыççăн тепри вилсе пырсан çĕнĕрен çуралнисене çăлса хăварас тесе кайăк ятне панă... Усси пулмарĕ...

— Мĕнле çын пулнă асатте, каласа пар-ха мана, асанне? Хитреччĕ-и вăл?

— Юрату хитрипе усаллине пăхса тăмасть, мăнукăм. Мĕншĕн çынсем пĕрисен умĕпе, тем пек хитре пулсан та, ним пулман пекех иртсе каяççĕ, теприсене тĕл пулсан вара чĕрисем сиксе тухасла тапма пуçлаççĕ, канăçа çухатаççĕ. Акă аçу ĕнер хаçат кĕртсе пачĕ, — асламăшĕ вырăн çинче выртакан хаçата илсе мăнукĕ умĕнче саркаларĕ. — Акăлчан ученăйĕсем çынна пĕрремĕш хут курсанах юратса пăрахма май çуккине çирĕплетсе панă иккен. Эп, паллах, нумай вĕренеймерĕм, анчах ученăй мар пулсан та çакна алă пуссах çирĕплетме пултаратăп: юрату туйăмĕ, çынна хисеплесси пĕрремĕш тĕлпулуранах пуçланать. Енчен те

çак туйăм малтанах ăшра хускалмарĕ пулсан, ман шутпа, вăл кайран килесси иккĕленӳллĕ, — Даша асламăшĕ хаçата тирпейлĕн хуçлатса сунтăхне хучĕ. — Аслаçу вара сан аван çынччĕ. Алли-ури те питĕ çыпăçуллăччĕ. Ялта кашни килте тенĕ пекех вăл тунă урапа-çуна ларнă. Хисеплеттĕмччĕ эп ăна. Хисеплени юратуран та вăйлăрах туйăм тесе çыраççĕ хăш-пĕр хаçат-журналта. Кам тĕрĕссине калĕ?.. Шел, манран вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ.

— Юрату... — Даша ассăн сывласа асламăшне пырса ыталарĕ. — Манăн мĕнле пулать-ши вăл, асанне?

— Куна вăхăт çитсен хăвах пĕлĕн. Халĕ атя-ха санпа каçхи апат хатĕрлеме пуçлар. Унсăрăн аçупа аннӳ таврăнсан каллех пĕçерккĕ парĕç иксĕмĕре. Акă, ме, пенси укçи пачĕç, лавккана кайса мĕн те пулин тутлине туянса кил. Гриша ăçта тата? Шкултан таврăннине асăрхамарăм.

— Вăл уроксем хыççăн спортзала волейболла выляма юлчĕ.

— Юрататъ вăл мечĕкле выляма. Миша, сирĕн аçу ĕнтĕ, ача чухне çаплаччĕ. Тĕттĕм пулмасăр та урамран кĕместчĕ. Питĕ юрататчĕ мечĕк тапса выляма. Халĕ ватăлчĕç-ши, кӳрше каçса ларма та пăрахрĕç, ялан телевизор умĕнче.

— Ывăнаççĕ пулĕ кун каçа. Ăçта кайнă вĕсем, асанне? Килте курăнмаççĕ.

— Аçу тепĕр тына пăру туянасшăн, ĕнинех илме укçа çитереес çук терĕ. Правление кайса килетпĕр тесе тухса кайрĕç. Хуçалăхĕ саланнă та, çын та çук пулĕ унта.

— Пуçтарăнаççĕ. Эпир шкула кайнă чухнех арçынсем чĕлĕм мăкăрлантарса тăраççĕ. Килте ĕç çук пулĕ-и вĕсен?

— Ай-вай, ачам, пĕчĕклех мăннисене сивлесе калаçатăн-çке эсĕ. Ача-ха эс вĕсене сӳтсе явма. Пурнăç малалла мĕнле пулассине никам та пĕлмест. Çавăнпа нихăçан та никама та сивлесе ан калаç. Хăвнах малашне аван пулĕ. Турă та теприне тӳре тума хушман.

— Пĕлетĕп, асанне, Мария Магдалина историне. Халăх суд тума пуçланăскере Турă çитсе çăлать. Сирĕнтен хăшĕ пĕр çылăхсăр, çавă Марийăна чулпа петĕр тет. Анчах пе-

рекен пулмасть. Ҫавӑнтан тухса кайнӑ-ши чулпа перекене ҫӑкӑрпа пер текен ваттисен сӑмахӗ? Юрӗ, эп лавкка хупиччен чуптарам-ха. Нина аппа ӗнер те эпир шкултан таврӑннӑ чухнех хупса кайнӑ лавккине. Килӗнче вут татаҫҫӗ терӗҫ.

— Чуптарах эппин. Эп яшка пӗҫерме шывне лартса ярам-ха.

Килтен ирӗке тухсан Даша сывласа илчӗ те урампа аналла хыпаланса анса кайрӗ. Асламӑшӗн сӑмахӗсем канӑҫ памарӗҫ хӗре. «Юрату... Авӑр... Пӗрремӗш юрату...» Мӗнши вӑл, юрату? Епле пуҫланать-ши вӑл этем чӗринче? Мӗншӗн, асламӑшӗ калашле, юрату хитрелӗхе пӑхса тӑмасть? Эпир вӗт пурте хитре япалана юрататпӑр. Акӑ вӗсен класӗнче вӗренекен Ритӑнах илер. Унӑн ашшӗпе амӑшӗ район центрӗнче ӗҫлеҫҫӗ. Укҫине те аван ӗҫлесе илеҫҫӗ пулӗ ӗнтӗ. Рита пӗртен-пӗр хӗр пулнӑран пурте пур унӑн. Шкул тумне те кашни ҫулах ҫӗннипе улӑштарать. Арҫын ачасем явӑнаҫҫӗ кӑна ун тавра. Шкултан таврӑннӑ чухне ун сумкине йӑтасшӑн тӗрткелешсе те илеҫҫӗ. Даша вара иккӗмӗш ҫул пӗр тумпа ҫӳрет. Те йывӑр ӗҫленӗрен, те урӑх сӑлтавпа — ыттисем пек хӑвӑрт ӳсеймерӗ вӑл. Хӗр ачан, кӑҫалхи авӑн уйӑхӗн пӗрремӗш кунне аса илсен, чунӗ хурланса килчӗ, куҫӗ шывланчӗ...

— Анне, вун пӗрмӗш класа та ҫак тумпах ан яр-ха мана, пӗрле вӗренекенсенчен намӑс, тӑрӑхласа кулӗҫ, — тарӑхса шкул тумне вырӑн ҫине печӗ Даша.

Амӑшне хӗрӗн кутӑнлашӑвӗ килӗшмерӗ пулас: шӑлӗсене шӑтӑртаттарса илчӗ те костюма хӗрне алӑран вӑйпах тыттарчӗ.

— Министр ачи мар, кун пек те юрӗ. Эпир анне ҫӗлесе панӑ тумтирпех ҫӳренӗ шкула, никам та кулман. Ман сумки те пиртен ҫӗлеиччӗ. Чи кирли, — амӑшӗ сылтӑм аллипе хӗрне пуҫӗнчен тӗллесе кӑтартрӗ, — ҫакӑнта пултӑр. Тум вӑл ниме те пӗлтермест.

— Анне, вӑл сирӗн вӑхӑт пулнӑ. Халӗ пырса пӑх-ха эсӗ шкула, пӗринчен тепри чаплӑ тумланать. Рита кашни кун тумне улӑштарать. Пирӗн ҫине куҫ айӗн ҫеҫ пӑхса ҫӳрет.

Намăс мана иккĕмĕш çул çак тума тăхăнма. Курас килми пулчĕ.

— Аçупа аннӳ туянса панă япала пирки çакăн пек калама епле хăятăн эсĕ, мур илесшĕ?! — амăшĕ аллинчи ал шăллипе хĕрне çурăмĕнчен туртса çапрĕ те хашлатса пукан çине ларчĕ. — Ритăпа мĕн калаçан эс? Ун ашшĕ районти пысăк çын. Амăшĕ те пысăк укçаллă ĕçре. Вĕсем укçине кĕреçепе ăсмалăх ĕçлесе илеççĕ, пирĕн ывăç тупанне вырнаçмалăх та çук.

— Çулла эпĕ те ĕçлерĕм. Клубра сан вырăна урай сĕрсе пурăнтăм. Кăшт укçи пуçтарăнчĕ пулĕ, анне? Тархасшăн, çĕнĕ тум туянса парăр. Тăхăнмастăп эп куна! — Даша костюма пукан çине хучĕ те асламăшĕ патне кĕрсе кайрĕ.

— Мĕншĕн шеллемеççĕ вĕсем мана, асанне? Эпĕ ĕнтĕ кăçал шкултан вĕренсе тухатăп. Ача мар текех, çитĕнтĕм.

— Çитĕннĕ вăл! Эпир те вĕреннĕ! Атте-аннене нихăçан та хирĕçлемен! Пăх-ха ăна, тути çинче сĕт типмен, хирĕç кăшкăрать.

— Эп кăшкăрмастăп, анне, тĕрĕссине калатăп! Нивушлĕ сан манран пĕтĕм класа култарас килет?

— Ара, кин, Ташук тĕрĕсех калать, халĕ ĕлĕкхи мар, çынсенчен те аван мар. Тăлăх турат мар вĕт, — асламăшĕ мăнукне хăй çумне лартса пуçĕнчен ачашларĕ. — Ман вилсен пытарма тесе пуçтарни пурччĕ çавăнта, тыт-ха, кĕçнерни кун пасара кайса туянăр. Ан йĕр, Ташук, санăн та çĕнĕ тум пулĕ.

— Пулмасть! — алăри укçине шутланă май касса татрĕ Даша амăшĕ. — Ку укçи чухах-ха. Вите тăрри кĕç-вĕç йăтăнса анать, çавна юсамалла. Ĕнер кăна Мишăпа укçа ăçтан тупас тесе пăшăрханаттăмăр.

— Ара, кин...

— Анне! Ку вăл асанне укçи! Хăйне валли пуçтарнине мана парать. Ун укçи пулман пулсан мĕнпе юсанă пулăттăр вите тăррине?

— Халĕ ун пирки калаçмăпăр. Укçа пур-и? Пур. Тумĕ сана кирлех те мар, ман шутпа. Кăçал шкултан вĕренсе

тухатăн. Кайран кама парас ăна? Ахалех йăваланса выртĕ. Кăçал Гришăна туянса пани те çитет.

— Ки-ин... Куна пĕлнĕ пулсан паман та пулăттăм укçине.

— Эсир, мĕн, пурте мана хирĕç-им? Сĕтне-турăхне эп пĕччен çиеп-им? Сутса та укçа тăватпăр! Тепĕр чухне çăкăр туянма та укçа çук енчĕкре! Эсир вара — тум... хитрелĕх. Мана анчах нумай кирлĕ.

Амăшĕ кил картине тухса кайсан Даша ĕсĕклесех йĕрсе ячĕ.

— Мĕншĕн ăнланмасть вăл мана, асанне? Хăех çуратнă-çке-ха. Гриша çиччĕмĕш класа çеç каять пулин те ăна çĕнĕ тум туянса пачĕç.

— Ан пăшăрхан, Ташук. Санăн та пулĕ. Укçине татах та парĕç. Эпĕ пĕчĕккĕн пухса пырăп. Гришăна ан кӳрен. Такама хывнă вăл: çулсерен мар, сехетсерен ӳсет тейĕн. Аçуна та хăваласа çитрĕ ĕнтĕ. Те мечĕк хăваласа чупни усаллă. Пĕлтĕрхи япалисем чавса таран çеç.

— Эпĕ вара ӳсейместĕп. Физкультура урокĕнче те чи хыçалта тăратăп.

— Эсĕ те ӳсĕн-ха, мăнукăм. Хĕрачасем вĕсем часах ӳсмеççĕ. Мана хывнă пулас эсĕ. Эпĕ те малтан ӳсмерĕм те кайран пĕр çул хушшинче кантăр пек ӳссе яштакалантăм. Каччăсем те пăхма пуçларĕç мана. Эсĕ те ӳсĕн-ха.

...Лавкка умне çитсе тăрсан Даша куççуль тумламĕсене çанă вĕçĕпе шăлса илчĕ те алăк хăлăпне ярса тытрĕ. Шалта халăх лăк тулли. Çĕнĕ тавар кӳрсе килнĕ иккен. Хĕрарăмсем сентре çинче выртакан тутăрсене, кофта-юбкăсене тыта-тыта пăхса хăйсем çинче виçеççĕ. Даша та çиелте выртакан сарă кĕпене илсе çаврăкаласа пăхма пуçларĕ.

— Туян-ха, Даша, шăп сана валли ку кĕпе, — сутуçă хĕрачана асăрхаса ун патне çывхарчĕ, кĕпене вăйпах тăхăнтартрĕ те хăй енне çаврăнса куçран пăхрĕ. — Сăнупа килĕшӳллĕ, чăн-чăн пирĕшти эсĕ капла.

— Ай-вай, Нина аппа, сан сутмалла та — темĕн те калăн эс, — Даша кĕпене хывса сентре çине хучĕ. — Ман укçа та çук ăна туянма.

— Мĕнле çук? Асаннӳне паян çеç пенси укçи патăм, — ялта хаçат-журнал валеçекен Çинук аппа та кунтах пулнă иккен, Даша ăна çынсем хушшинче асăрхаман та. — Туян, Даша, кĕпи, чăн та, сан валли çĕленĕ пекех, питĕ хитре.

Даша кĕпе енне çаврăнса пăхса шухăша путрĕ. Туянас — амăшĕ вăрçма пултарĕ. Асламăшĕнчен те ыйтман. Вăл вара ăна апат-çимĕç туянма тесе пачĕ укçине. Кĕпе туянсан вăл та пăшăрханĕ. Çук, ахальлĕн те килте хирĕçмелли сăлтавĕсем тупăнсах пыраççĕ. Кун пек те пырĕ-ха, амăшĕ калашле, паян-ыран качча каяс çук.

— Çук, туянмастăп, вăл мана хальлĕхе кирлех мар-ха. Нина аппа, пĕр кило сахăр виçсе пар-ха мана, васкатăп, — ушкăнран пăрăнса сутуçă умне пырса тăчĕ Даша.

— Мĕнле кирлĕ мар, Даша? — Çинук аппа кĕпене йăтса хĕрача патнелле çывхарчĕ. — Кĕçех хĕрарăмсен уявĕ. Сирĕн те шкулта уяв пулмалла терĕ Вера. Эсир унпа пĕр класра вĕренеттĕрччĕ вĕт?

— Пĕр класра, юнашар ларатпăр. Анчах та, Çинук аппа, ман кĕпе туянма укçа та çук. Асанне мана сахăрпа çăкăр, кăлпасси илмелĕх çеç пачĕ, — хĕрача хăйсем чухăн пурăннинчен аванмарланса пуçне чикрĕ. Хăй тавра пуçтарăннă çынсене куç айĕн сăнарĕ.

— Ара, Даша, кĕпи килĕшет пулсан эп сана кĕтмелле те парăп. Ме, ил, укçа пулсан килсе тӳлĕн, — мĕншĕн ăнланмасть-ха Нина аппа хĕрача чĕрине, унсăрăн та хĕссе ыратаканскере тăварпа чыхать. — Эп ун пек суткаланă. Эс шанчăклă хĕр, улталас çук.

— Юрĕ, тепре тăхăнса пăхам-ха эппин, — пĕр вăхăт шухăша кайса тăнă хыççăн Даша кĕпене илсе чаршав хыçне кĕчĕ. — Ну, мĕнле пек?

Утмăл турат çеçкиллĕ сарă кĕпене хĕрĕн çинçе кĕлеткипе виçсе çĕленĕ тейĕн. Икĕ вăрăм çивĕтне кăкăрĕ умне янă Даша аллисене кĕç-вĕç вĕçсе каясла саркаланă, кăвак куçĕсенче вут-çулăм вылять, çӳхе тутинчи ăшă кулли такама та илĕртмелле. Йăл-йăл кулкаласа Даша Çинук аппа умне пырса тăчĕ.

— Ну, мĕнле пек, Çинук аппа? Килĕшет пек-и мана?

Çав вăхăтра алăк умĕнче хыттăн алă çупни янăраса кайрĕ. Айкашăвĕшĕн аванмарланса тăп чарăнса тăчĕ те алăк еннелле пăхрĕ Даша. Паян çул çинче тĕл пулнă каччă иккен. Хĕрача чаршав хыçне чăмрĕ.

— Ан хыв ку кĕпене, Даша. Сана питĕ килĕшет, — илтрĕ чаршав хыçĕнче хĕрача. — Эпĕ туянса паратăп, хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе парне пултăр.

Лавккара пĕр вăхăт шăна вĕçни илтĕнмелле шăплăх тăчĕ. Пурте кăтра пуçлă каччă çине пăхса илчĕç. Çав вăхăтра пуçне чиксе чаршав хыçĕнчен Даша тухрĕ, кĕпене сутуçă умне хуллен хучĕ. Ют çын ун калаçăвне йăлт илтнине ăнланса хĕрача тавар туянмасăрах лавккаран тухма хатĕрленчĕ.

— Мана сирĕнтен нимĕн те кирлĕ мар! — каччă енне пуçне çĕклеме хăяймасăр çынсене тĕрткелесе алăк патнелле талпăнчĕ Даша.

— Даша! Таварна илсе кай! — Нина аппа кĕпене ытти таварсемпе пĕрле сентре çине хучĕ.

— Пар-ха мана кĕпене, хăваласа çитсе аллинченех тыттаратăп, — каччă кĕпене туртса кăларчĕ те урама тухма хатĕрленчĕ.

— Кирлĕ мар, Саша, — аллинчен тытса чарчĕ сутуçă каччă. — Пушшех кӳрентерĕн. Эпир вĕт, укçа-тенкĕ енчен япăх пурăнатпăр пулин те, хамăра хисеплетпĕр, кĕлмĕçленме, хамăра хĕрхеннине юратмастпăр.

— Укçа мар кунта, — касса татрĕ каччă. — Эпĕ ăна паян тĕл пултăм, мана çул кăтартса ячĕ. Çавăнпа парне туянса парас терĕм. Кĕпин хакĕ калаçмалăх та çук.

— Саша, — ăна хулĕнчен туртса хăй еннелле çавăрчĕ Нина сутуçă. Унтан çынсем илтмелле мар хуллен: «Парнине парасах тетĕн пулсан çапла тăвăпăр. Эс туян, эп каçхине килне кайса килĕп, пирĕнтен инçех мар пурăнаççĕ вĕсем», — терĕ.

— Кала эс ăна, эп кӳрентерсе мар, чĕререн хисеплесе, ыр сунса парнелетĕп. Кĕпи, чăн та, хăйĕн çинче виçсе çĕленĕ пек.

— Калăп-çке, калăп.

— Сан пата вара эпĕ çакна пама таврăнтăм, машина çинче пытанса юлнă, — качча аллинчи тĕркене сутуçа тыттарчĕ те лавккаран тухрĕ.

— Калап манăн тутăрсен шучĕ çитмест, таçта хутăмши тесе шыраса ывăнтăм.

Даша лавккаран тухсан чыхăна-чыхăна ĕсĕклесе килĕ еннелле чупрĕ. Çул çинче тĕл пулакансем: «Мĕн пулнă, Даша, такам вилмен пулĕ те?» — тенине те илтмерĕ.

Тĕпелте апат пĕçерекен асламăшĕ мăнукĕ алăка шанлаттарса хупса кĕрсе хутаçа сĕтел çине çиллĕн пăрахнине, ун «йăвине» кĕрсе вырăн çине лап ӳксе хыттăн хӳхлесе йĕме пуçланине асăрхарĕ те аллисене шăлкаласа чаршава туртса уçрĕ.

— Мĕн пулчĕ, Даша? Çул çинче такам тем каларĕ-им? — мăнукне çурăмĕнчен ачашларĕ вăл. — Кала, кам кӳрентерчĕ, часах кайса тустарса килетĕп.

— Мана никам та кӳрентерме-е-ен, — куççулĕ витĕр хуравларĕ Даша.

— Мĕншĕн йĕретĕн тата?

— Мана парне парасшăн пулчĕ-ĕç...

— Парне? Мĕнле парне? Парне панăшăн йĕреççĕ-и вара?

— Асанне, вăл эп лавккара мĕн каланине йăлт итлесе тăнă-ă-ă!

— Кам, мĕн итлесе тăнă, ăнланмалларах кала-ха эс? Даша лавккара мĕн пулса иртнине йĕре-йĕре каласа пачĕ. Асламăшĕ мăнукĕ мĕншĕн йĕнине ăнланса ăна çупăрларĕ те пуçĕнчен ачашларĕ.

— Эх, ачам, куншăн йĕреççĕ-и вара? Парнене ăна кӳрентерес тесе мар, хисеплесе параççĕ. Килĕшнĕ ĕнтĕ эсĕ ăна, çавăнпа сана савăнтарас тенĕ. Эпир начар пурăнатпăр тесе каламастăп эпĕ. Пӳрт-çурт хăтлă, выльăхсем те усратпăр, выçă лармастпăр. Халĕ нумайăшĕ çапла пурăнать ялта.

— Çук, асанне, вăл мана кӳрентерес тесе çапла турĕ. «Кур, эп санран укçаллăрах, мĕскĕн, аçупа аннӳ кĕпе те илсе параймаççĕ сана», — тесе шухăшларĕ пулĕ ĕнтĕ.

— Хе-хе-хе, — тутине аллипе хупласа кулчӗ асламӑшӗ.

— Эс мӗншӗн кулатӑн, асанне? — Даша пуҫне ҫӗклесе асламӑшӗ енне кӳренӗҫлӗн пӑхрӗ.

— Санран кулатӑп. Ара, эс уншӑн шухӑшлатӑн вӗт. Ун пуҫӗнче мӗн пулнине пирӗн ӑҫтан пӗлес, ачам? Ҫитменнине, эсӗ ун ҫинчен нимӗн те пӗлместӗн. Тен, вӗсен ҫемйи пирӗнтен те начартарах пурӑнать. Вӑл сана парне парса савӑнтарас тенӗ. Ҫавӑ ҫеҫ. Эсӗ вара пуҫунта тем ҫӳп-ҫапӗ пуҫтаратӑн.

— Асанне, эсӗ чӑннипех те ҫавӑн пек пулӗ тетӗн-и? — куҫӗсене ал тупанӗпе шӑлса тӑрса ларчӗ Даша. — Кӗпи вара хитреччӗ. Мана питӗ килӗшрӗ, асанне.

— Нина лавккана хупрӗ пулӗ ӗнтӗ. Ыран кайса туянӑпӑр эппин. Ан пӑшӑрхан, унччен сутса ямӗ-ха.

— Аттепе анне укҫана усӑсӑр тӑккалатӑр тесе ятламӗҫши?

— Укҫи хамӑн, мӗн туянас тетӗп, ҫавна туянатӑп. Юратнӑ мӑнукӑма йӗртес ҫук. Укҫа вӑл татах пулать, кӗҫех тепӗр пенси килсе парӗҫ, ҫамрӑклӑх вара — пӗрре. Халь савӑнса юлмасан хӑҫан савӑнас?

— Эх, эсӗ манӑн ырӑ-ырӑ асанне! — Даша асламӑшне ыталаса илчӗ.

— Ай-яй, пӑчӑртаса вӗлерен, ярах, ачам! Вӑт, мур илесшӗ, тин ҫеҫ йӗретчӗ, пӑх-ха ӑна, епле ҫиҫет.

— Асанне, эпӗ кил картине тухса выльӑхсене апат парам-ха, аттепе анне килеймерӗҫ тем. Гриша та курӑнмасть. Эсӗ апатне пӗҫерсе пӗтер.

— Тухах, ачам. Ҫамрӑклӑ-ӑх. Кӑмӑл ҫурхи кун пек хӑвӑрт улшӑнать. Сӑмах вӑйӗ питӗ пысӑк ҫав. Этеме путарма та, ҫӑлса кӑларма та пултарать, — Даша асламӑшӗ хӑйпе хӑй калаҫса тӗпеле кӗчӗ.

Даша юрла-юрла ӗҫлерӗ кил картинче. Сарӑ йытти те пӑрӑнмарӗ унран: хуҫи апат парасса кӗтсе ури тавра явӑнса куҫран пӑхрӗ. Ӗҫленӗ май хӗр пуҫӗнче тӗрлӗ шухӑш пӑтранчӗ. «Юрату... Мӗнлерех туйӑм-ши вӑл? Ҫыравҫӑсем те чылай калаҫҫӗ ун пирки. Чӑвашсен Нарспи, Салампи... Вырӑссен Наташа Ростова, Анна Каренина... Вӗсем юратнӑ

Национальная библиотека
Чувашской Республики
И-48759

Юратăва ытти мĕнпур туйăмсенчен çӳлерех шая çĕкленĕ. Уншăн вилме те хатĕр пулнă, вилнĕ те. Нивуш-лĕ тепĕр çыншăн хăйсен пурнăçĕ те шел пулман вĕсене? Ĕненмелле мар пек. Анчах çакăн пек тĕслĕх пурнăçра пулнă. «Юрату çынна путарма та, вĕлерме те, çӳле çĕклеме те пултарать», — терĕ асламăшĕ. Мĕнле пуçланать-ши вăл çын чĕринче? Акă вăл паян Сашăна тĕл пулсан чĕри хытăн тапма пуçланине туйрĕ. Халиччен курман-пĕлмен туйăм. Ыратрĕ те чĕре, савăнчĕ те. Çав вăхăтрах таçта шалта çĕçĕпе каснăн вĕри хум чупса иртсе пуçа ыраттарчĕ, куççуль кăларчĕ. Çавăн пек пуçланать-шим вăл, юрату?» Даша ĕçне вĕçлесе кил картине тухрĕ.

— Буран, кил-ха ман пата! — йытă çури хĕр ача тухасса кĕтсе вите умĕнчех ларать иккен. Даша пĕшкĕнсе ăна алла илчĕ. — Мĕншĕн Буран ят панă-ха сана? Чăвашла каласан, çил-тăман. Мĕн çил-тăманĕ эсĕ, вĕрме те пĕлместĕн. Кам килет, çавна кĕртсе яратăн.

Йытă çури çамрăк хуçине куçран пăхса шăпăрт итлерĕ. Унтан питĕнчен çуласа илсе çĕр çине сиксе анчĕ те хапха айĕнчен шăвăнса тухса урамалла вĕçтерчĕ. Кĕç урамра хамлатса вĕрни илтĕнчĕ.

— Эсĕ вĕрме те пĕлетĕн иккен, пăх-ха ăна. Кам килчĕши тата? — текелесе Даша урама тухрĕ. Нина сутуçă иккен.

— Ним калама ĕлкĕриччен вĕткеленсе тухса кайрăн та пĕлмесĕрех юлтăн, — сумкинчен хутпа чĕркенĕ тĕркене кăларнă май калаçрĕ вăл. — Саша туянчĕ кĕпене. Сана пама ыйтрĕ. Парне пултăр терĕ.

— Кирлĕ мар мана палламан çын парни, Нинук аппа! Кайса пар каялла! Эп кĕлмĕç те, ыйткалакан та мар! — Даша киле кĕме хатĕрленсе алăк хăлăпне тытрĕ.

— Ара, Даша, йĕркеллĕ пул-ха эс! Ман ăçтан шыраса тупас халĕ ăна? Парнерен тармаççĕ. Пĕтĕм чунтан хисеплесе парнелетĕп терĕ. Каччи усал мар вăл. Эпĕ ăна тахçантанпах пĕлетĕп.

— Çинук аппасен Верукне пар. Эпир унпа пĕр пек кĕлеткеллĕ, иксĕмĕр те ӳсейместпĕр.

— Ӳсĕр-ха. Сана валли туяннă япалана такама памăп ĕнтĕ, — тарăха пуçларĕ пулас Нинук аппа: тĕркене Дашăна вăйпа тыттарчĕ те сумкине хупрĕ. — Киле каям-ха. Çапакантан тарма, паракантан илме хушнă ваттисем. Сана пурпĕр мар-им кам тӳлени? Кĕпи килĕшет? Килĕшет. Хăв та туянасшăн пултăн.

— Мана асанне укçа паратăп терĕ. Эппин, эпир çапла тăвăпăр. Эп кĕпине илсе юлатăп, укçине ыран пырса парăп. Эс ăна, Сашăна ĕнтĕ, парăн кайран, юрĕ-и?

Нинук аппа пĕр вăхăт шухăша кайса тăчĕ. Унтан тем аса илнĕн йăл кулчĕ те пуçне сулса Дашăпа килĕшрĕ.

— Кампа нумай калаçса тăтăн эсĕ унта урамра? — ыйтрĕ асламăшĕ пӳрте кĕрсен. — Ку мĕскер япали тата?

— Кĕпе, — тĕркене салатса асламăшĕ умĕнче саркаласа пăхрĕ Даша. Унтан ăна йăпăр-япăр тăхăнса ячĕ те куç кĕски умĕнче çаврăнкаласа хуллен юрларĕ. — Мĕнле пек, килĕшет-и, асанне?

— Питĕ килĕшӳллĕ, сана валли çĕленĕпе пĕрех. Ку леш кĕпи-им?

— Çавă! Эсĕ мана ыран укçа паратăп терĕн вĕт, асанне?

— Парăп-çке. Сана валли уяв парни пултăр манран.

— Тавтапуç, асанне. Ыран Нина аппа ăна Сашăна тавăрса парĕ.

Çывăрма выртсан та ыйхи килмерĕ Дашăн. Кăтра пуçлă, кăн-кăвак куçлă качча ун чĕринчен ниепле те тухма пĕлмерĕ: çамки çине антарса лартсах тăхăннă шурă карттусĕ айĕнчен ăшшăн кулса пăхакан качча куç умне кăларса тăратсан хĕр чĕри пушшех те пăлханса кайрĕ. Ăшра савăк та, ыратуллă та. Икĕ хире-хирĕçле туйăм пĕр-пĕринпе ылмашăнса куççулĕ кăларчĕç.

— Мĕн пулса иртрĕ манпа? — хăйĕнчен пăшăлтатса ыйтрĕ хĕр. — Юрату чĕрене çакăн пек ыраттарать пулсан мĕн тума кирлĕ вăл? Халиччен эпĕ юрату этеме савăнăç çеç кӳрет тесе шухăшланă. Мĕншĕн-ха, эппин, ман ăшăм вăркать? Нимĕн те пулман çке-ха. Чĕрем вара кăкăртан сиксе тухасла тапать. Ăна... Сашăна курас килет.

...Хӗрарӑмсен уявне Рита эрне малтан хатӗрленме пуҫларӗ. Паян та шкултан таврӑннӑ-таврӑнман сумкине диван ҫине ывӑтса ячӗ те пӗчӗк арчинчен тӗрлӗ ҫӗрӗ-шарҫа кӑларса сӗтел ҫине сапаласа хучӗ.

— Хӑшне ҫаксан илемлӗрех курӑнатӑп-ши? — сасӑпа калаҫса кӗрен шӑрҫана мӑйне ҫакса ячӗ Рита. Унтан тӗкӗр умне пырса хӑйне сӑнарӗ. — Куна эпӗ Ҫӗнӗ ҫул уявне ҫакнӑччӗ, кирлӗ мар ку, — шӑрҫана арчана ҫиллессӗн печӗ хӗр. Унтан теприне илсе пӑркаланчӗ. — Куна та килӗштерместӗп. Йӑлт тахҫанхисем. Пӗрле вӗренекенсем пурне те курнӑ.

— Эсӗ таврӑннӑ-ҫке, — урамран кӗнӗ амӑшӗ куҫ кӗски умӗнче явкаланакан хӗрне асӑрхасан ассӑн сывласа илсе диван ҫине ларчӗ. — Чирлерӗм пулмалла, пуҫ ҫаврӑнать, вӑй та ҫук, ӗҫрен ыйтса килтӗм.

— Сан ялан мӗн те пулин ыратать, анне, — хӗрӗ кӑмӑлсӑр пулса амӑш енне ҫаврӑнса пӑхрӗ. — Ман уява хатӗрленмелле, эсӗ вара чирлесшӗн.

— Чир вӑл хӑҫан аптӑратса ӳкермеллине ыйтса тӑмасть, ачам. Уншӑн уявсем ҫук. Эп мӗнпе чӑрмантаратӑп-ха сана уяв иртterме?

— Мана укҫа кирлӗ. Санпа пӗрле район центрне кайса ҫӗнӗ кӗпе, шӑрҫа, хӑлха ҫакки тата ҫӗрӗсем туянасшӑнччӗ. Эсӗ вӗт мана пӗччен ямастӑн, шанмастӑн, ҫапла-и?

— Шанманшӑн мар, хӗрӗм. Ан улталаччӑр тетӗп-ҫке. Халь тӗрлӗ чула ҫиелтен сӑрласа ылтӑн тесе сутаҫҫӗ. Сан пек айвансене улталаҫҫӗ.

— Пуҫларӗ хӑй юррине... Эп те ухмах мар, анне. Ылтӑна палласа илетӗпех. Шанмах тивет. Эсӗ чирлетӗн. Эп Динӑпа та кайса килме пултаратӑп. Эс укҫине ҫеҫ пар.

— Укҫине парӑп-ха. Эсӗ паян выльӑхсене апат парса ӗнене су-ха, ман пуҫ ыратать. Кӑшт выртса илем, — текелесе Рита амӑшӗ ҫывӑрмалли пӳлӗме кӗрсе кайрӗ.

— Анне-е, эп Тереза патне пымастӑп урӑх! Вӑл иртнинче мана тапса ячӗ. Мӗнле те пулин хӑвах су-ха.

— Пуҫ ҫаврӑнать тетӗп-ҫке, ӗҫре те лараймарӑм.

— Ҫинук аппана чӗн эппин. Хӑй килмесен Вери сутӑр.

— Выльăха юратмалла ăна, вара вăл та сана тĕкĕнмест. Эс пӳртренех хурах кăшкăрса тухатăн, çапатăн ĕнене. Выльăх та этем пекех, ачашланине юратать. Кӳршĕсене чĕнсен хăвнах намăс пулĕ.

— Мĕн намăсси уншăн? Эп пурпĕр ялта пурăнмастăп.

— Хулара ăçта ĕçлес тетĕн-ха? Вĕренмелле малтан. Ĕнер тетрадьсене уçса пăхрăм санăнне, çырла уйнех аса илтереççĕ. Мĕншĕн малаллахи пирки шухăшламастăн, хĕрĕм? Ниçта та вĕренме кĕреймесен малалла мĕнле пурăнас тетĕн?

— Халь вĕренмесĕр те пурăнма пулать. Пĕр-пĕр пуян упăшка тупатăп та шик шăхăрса кăна пурăнатăп.

— Пуяннин укçи ахаль килет тетĕн-им? Пуян кил-çуртра ĕçлемелле унта, пуç касăртса кăна çӳремелле мар. Пуянлăх ĕçлемесĕр пулмасть.

— Ман мĕншĕн ĕçлемелле? Арçын ĕçлетĕр. Эп ытни-не пурне те тивĕçтерме пултартăр.

— Ăçта сутаççĕ вара ун пек арçынсене, хĕрĕм? Эп хам ĕмĕрте тĕл пулман ун пеккисене.

— Пурнăçран кая юлнă эсĕ, анне. Халь чылай хĕр упраç çапла пурăнать. Хăйсенчен ватăрах арçынна качча тухаççĕ те çу çинчи пек пурăнаççĕ. Мĕн тума кирлĕ вĕренни...

— Ун пек тĕслĕхсем пур, паллах. Анчах укçашăнах хĕр ĕмĕрне çапла сая ямалла-и вара? Кай, илтес те килмест. Ăстан килет пуçна çавăн пек шухăш? Кампа калаçса çапла пĕтĕмлетӳ турăн? Эпир аçупа иксĕмĕр сана йĕркеллĕ çын туса ӳстерес тесе ырми-канми тăрăшатпăр, эсĕ пур... Укçа çитмест-им сана? Эс пирĕн пĕртен-пĕр ача. Сана вĕрентсе кăларатпăрах.

— Юрĕ ĕнтĕ, анне, лăплан. Вĕренме кĕртсен вĕренĕп. Халĕ пурпĕрех пур çĕрте те укçалла вĕренмелле. Эс мана кала-ха, укçа пур-и сан мана валли?

— Мĕн тăватăн укçапа? Мĕн кирлине йалт туянса панă.

— Пăх-ха, — Рита пĕчĕк арчинчи пурлăхне амăшĕн вырăнĕ çине силлесе аяккалла кайса тăчĕ. — Миçе çул каялла туяннă çаксене? Хăшĕсен тĕсĕсем кайса пĕтнĕ.

— Юрĕ-çке, пĕртен-пĕр ача эс пирĕн, намăс курмăн. Çавăнта сунтăха хунăччĕ ĕнер, хăвна кирлĕ чухлĕ ил, эппин.

— Ур-р-а-а! Клевăй аттепе анне эсир манăн! — Рита сиккелесе пӳлĕмрен тухса чупрĕ.

— Шăрçусене кам пуçтарать? Ĕне сума ан ман.

— Хăвах пуçтар-ха, анне! Выльăххисене пăхма Çинук аппана чĕнсе каçатăп. Çĕр тенкĕ паратăп та — сăвать ĕнтĕ. Атте те çынсене укçалла ĕçлеттерет вĕт.

— Ун хăйĕн ĕçлеме вăхăчĕ çук.

— Анне, мана çĕнĕ кĕпе те кирлĕ, — амăшне илтмерĕ те тейĕн Рита: тăрăшсах кĕписене шифоньертан кăларса диван çине сапаласа хучĕ.

Амăшĕ туянса панă кĕпе килĕшмерĕ ăна. Ячĕшĕн тенĕ пек тăхăнса пăхрĕ те тарăхса пукан çине печĕ.

— Анне, миçе хутчен каламалла сана мана валли япала мансăр ан туян тесе! Халĕ кун пек кĕпесем модăра мар!

— Чи хаклине туянтăм, укçа шеллемерĕм, хĕрĕм. Пĕртен-пĕр кĕпе, Италирен кӳрсе килнĕ терĕ сутуçă та, — упăшки алăк уçса кĕнине сиссе вырăн çинчен ахлаткаласа тăчĕ те кĕпене хăй çине хурса куç кĕски умне пырса тăчĕ Рита амăшĕ Зоя Гавриловна. — Питĕ илемлĕ, мĕншĕн тирketĕн, ăнланмастăп.

— Килĕшет пулсан, эппин, хăв тăхăнса çӳре! Мана урăххине туянса парăр. Атте, эсĕ мĕншĕн чĕнместĕн тата? Е пĕртен-пĕр хĕрӳшĕн укçа шел-и сана?

— Эсир хăвăрах татса парăр ку ыйтăва, маншăн пурпĕрех. Эпĕ саншăн хăçан укçа шелленĕ? Килĕшмест пулсан — урăххине туянăр. Ку та пултăр. Кайран тăхăнăн, — хывăннă май хуравларĕ ашшĕ.

— Вăт ку аван. Ыран уроксем хыççăн Динăпа район центрне кайса килетпĕр. Вăл та çĕнĕ кĕпе туянасшăнччĕ. Халĕ ун патне каятăп. Вăл çĕнĕ юрăсен дискне туянтăм терĕ, итлетпĕр. Çула май Çинук аппа патне те кĕрсе каласа хăварăп.

— Юрĕ, эппин, каях. Тепĕр тесен, хам та ĕçлесе ӳсрĕм. Ĕç пур тесе анне урама та кăлармастчĕ. Эсĕ те пулин са-

вăнса юл çамрăк чухне, ĕçлеме ĕлкĕрĕн-ха, — килĕшрĕ амăшĕ.

— Çапла мар-и, савăнтăр. Урăх кам валли пурăнмалла пирĕн? Чун ăшши те вăл анчах, — сăмах хушрĕ ашшĕ.

— Çапли çаплах-ха та, пăсăлса анчах ан кайтăр. Çав Динăпа çӳреме пуçларĕ юлашки вăхăтра, — иккĕленĕвне пĕлтерчĕ хĕрарăм.

— Динăн ашшĕ Сергей Мускава ĕçлеме çӳрет, эрехпе аташмасть. Амăшĕ — лавккаçă. Мĕн тиркешмелли пур? — тĕлĕнчĕ арçын.

— Ашшĕ-амăшĕ лайăх çынсем-ха, хăй мĕнле-ши? — лăпланмарĕ арăмĕ.

— Хамăра хывсан пăсăлмасть хĕрĕмĕр, — çинех тăчĕ упăшки.

— Çаплах пултăрччĕ.

— Сана тата мĕн пулнă паян? Ĕçе кĕтĕм те — чирлесе ӳкнĕ, киле кайрĕ терĕç.

— Юн пусăмĕ ӳссе кайрĕ. Киле килсен эмел ĕçрĕм те — иртрĕ.

— Ытлашши пăлханан, лăпкă пулмалла.

— Рита пирки шухăшласа пуç ыратакан пулать. Ĕнер те çур çĕр иртсен таврăнчĕ, — пăлханчĕ хĕрарăм.

— Çамрăк. Çӳреччĕр. Хамăра мантăн-им? Тул çутăлсан тин уйрăлаттăмăр.

— Вĕренӳ çине сӳрĕк пăхма пуçларĕ-ха. Кăçал шкултан вĕренсе тухать вĕт. Малалла вĕренме ямалла.

— Яратпăр. Пĕртен-пĕр хĕре вĕрентетпĕрех ĕнтĕ.

— Çапла пултăрччĕ те...

Уроксем вĕçленессе кĕтмерĕ тепĕр кунне Рита: виç-çĕмĕшĕ хыççăнах юнашар ларакан Динăна çавăтса авто-бус чарăнакан вырăна чупнă пекех уттарчĕ.

— Рита, Ольга Якимовна каçармасть пире урокран тарнăшăн. Эпĕ сочинени те çырман. Эсĕ çырнăччĕ-и?

— Çырман çав, çавăнпа «иккĕ» илесрен хăтартăм та сана. Спаçипă кала! Тепĕр урок валли çырса каятпăр.

— Каллех Дашăран ыйтатăн-и? Хамăртан пулмасть вĕт

çырасси. Кĕнекерен çырса илнине йышăнмастăп терĕ Якимовна. (Çапла чĕнеççĕ вĕрентекене куç хыçĕнче ачасем.) Даша та иртнинче юлашки хут паратăп, малашне хăвăр çырăр терĕ.

— Пара-ать. Ан хăра, вăл эпир мĕн хушни-ыйтнине йăлт пурнăçлĕ. Эпĕ ун пирки пĕр япала пĕлетĕп. Шкулта кун пирки никам та ан пĕлтĕр тесен пĕр сăмахсăр итлĕ эпир каланине.

— Мĕн пĕлетĕн вара эс, мана та кала-ха?

— Вăхăт çитсен хăвах пĕлĕн.

— Ялан çапла эс: эпĕ сана йăлт каласа паратăп, эсĕ вара — пытаратăн, — Дина кӳренсе хăйне хулран çавăтнă Ритăн аллине сирсе ячĕ. — Юлташ те сана çакăн хыççăн.

— Юрĕ-çке, ан кӳрен. Кĕçех хăвах пĕлĕн. Тăхта кăштах. Лавккара калаçмăпăр ĕнтĕ ун пирки.

Лавккара халăх йышлă пулманран Ритăпа Дина пĕрпĕрне тĕрткелесе, кулкаласа сентре çинче çакăнса тăракан кĕпесене тыта-тыта пăхрĕç. Сутуçă та асăрхарĕ вĕсене: ăшшăн кулса хĕрсем умне пырса тăчĕ.

— Кĕпе туянасшăн-и, хĕрсем? Пирĕн пата кĕрсе тĕрĕс тунă эсир. Ĕнер кăна Белоруссирен туянса таврăнтăмăр. Чи юлашки модăпа çĕленисем. Польшăран илсе килнисем те пур.

— Эп Италирен кӳрсе килнине тиркерĕм те эсĕ мана таçти Белоруссире кăларнине туянма сĕнен, — сарă çӳçлĕ тăпăлкка кĕлеткеллĕ хĕрарăмпа тӳрккессĕн калаçрĕ Рита. — Дина, атя тепĕр лавккана каятпăр, кунта нимĕн те çук.

— Белоруссипе Польша япалисене хапăл тусах туянаççĕ. Акă пăхăр, ĕнер çеç туянса таврăнтăм, шăп сире валли çĕленĕ пек.Ременĕ те пур. Ку кĕпене тăхăнсан мĕнпур каччă сирĕн пулĕ. Мĕн ятлă-ха эсир? — лавккаран тухма хатĕрленнĕ хĕрсем умне пырса тăчĕ сутуçă.

— Дина тата Рита, — тантăшĕ каличчен хăвăрттăн хуравларĕ Дина. — Мана ку кĕпе килĕшет, тăхăнса пăхам.

— Тархасшăн, — сутуçă Динăна шалти пӳлĕме кĕртсе яма хатĕрленсе чаршава сирчĕ.

— Мана парăр, эп малтан тăхăнса пăхап,— Рита кĕпене Дина аллинчен карт туртса илчĕ те чаршав хыçне кĕчĕ.

— Мĕншĕн яланах сан пĕрремĕшĕ пулмалла, эпĕ те çынах! — Дина кӳренсе аяккалла пăрăнса тăчĕ.

— Эсĕ ман хыççăн тăхăнса пăхăн. Мана килĕшмесен туянăн та.

— Ялан эс çапла: ман хыççăн, эп пĕрремĕшĕ... Тĕрĕс мар кун пек.

Хĕрсен хирĕçĕвне итлесе тăракан сутуçă тӳссе тăраймарĕ: Динăна хулĕнчен çавăтса кĕпесем çакăнса тăракан вырăна илсе кайрĕ.

— Кунта тата хитрисем пур, суйла, — терĕ хуллен. — Акă санăн куçусем симĕс, çакна, куçупа пĕр тĕслине, туян, чи хитре хĕр пулăн.

— Эй! Мĕн пăшăлтататăр эсир унта? — çĕнĕ кĕрен кĕпе тăхăннă Рита куç кĕски умне тухса тăрса хăйне тăрăх пăхма пуçларĕ. — Мĕнле, хитре пек-и?

— Ой, Рита, эсĕ чăн-чăн пирĕшти ку кĕпене тăхăнсан! — Çӳлте çакăнса тăракан кĕперен куçне илеймесĕр хăпартланса каларĕ Дина.

— Туянатăп эппин!

— Тăхтăр-ха, ан хывăр. Ман ку кĕпе валли мăя çакмалли те, хăлха çакки те пур, — сутуçă хыпаланса Ритăна тĕрлĕ тĕслĕ чулсем тирсе тунă шăрçа çакса ячĕ. — Ытарма çук илемлĕ хĕр пулса тăтăн. Туянмаллах сан çак япаласене. Анчах укçу çитет-и?

— Укçа пур ман. Аттепе анне маншăн нимĕн те шеллемеççĕ.

— Ку аван, юратаççĕ эппин. Тен, туфлине те илетĕр? Шăп çак кĕпе валли пур пирĕн.

— Илсе килĕр-ха, тăхăнса пăхам.

Рита туфлине тăхăнса куçкĕски умĕнче çаврăнкаларĕ.

— Чăннипех те хитре кун пек. Туянатăп пурне те! Дина, ăçта эсĕ унта? Киле васкамалла, автобусран юлма пултаратпăр.

— Хăв туянтăн та васкама пуçларăн. Кĕт кăштах, ĕлкĕретпĕр.

— Фу-у, ку илемсӗр кӗпене мӗншӗн тӑхӑнтӑн, хывса пер-ха, — чаршав хыҫӗнчен тухнӑ тантӑшне сӑнанӑ май йӗрӗнерех каларӗ Рита.

— Манӑн санӑнни пек чаплисене илме укҫа ҫук. Атте те Мускавран халех таврӑнмасть. Анне мана нумай укҫа парса яман, — те ӑмсанса, те хурланса каларӗ Дина: Рита ун енне ӑнланмасӑр пӑхса илчӗ те тутине тӑсса аяккалла пӑрӑнчӗ. — Мана та чӗркесе парӑр-ха эппин.

Хӗрсем тин ҫеҫ урлӑрах калаҫнине манса лавккаран савӑнӑҫлӑн тухрӗҫ.

— Пуринчен хитрисем пулӑпӑр. Коля сӗлекине юхтарса пӑхтӑр ман ҫине, ха-ха-ха! — Рита хаклӑ япалана тытнӑ пек сумкине хӑй ҫумне чӑмӑртарӗ. — Пӗлетӗн-и, ӗнер Коля питрен чуптурӗ. Питӗ юрататъ пулас.

— Темӗн. Нумай пулмасть эпӗ ӑна Дашӑпа курнӑччӗ. Иккӗшӗ шкултан пӗрле таврӑнатчӗҫ.

— Э-э, тупнӑ пӑшӑрханмалли! Вӗсем кӳршӗсем вӗт. Даша ҫине пӗр-пӗр упӑте кӑна пӑхма пултарать. Мӗн пур ун ҫумӗнче? Шӑммипе тирӗ ҫеҫ. Хӑма пек тӳрӗскер, акӑ кам сан Дашу!

— Мӗншӗн ман тата вӑл? Эпӗ те ӑна сан пекех кураймастӑп. Ӗнер физикӑпа задача ҫыртарса илтер-ха терӗм те, хӑв шутла терӗ мана.

— Малашне ун пек калаймӗ. Эпӗ ун пирки ҫавӑн пек вӑрттӑнлӑх пӗлетӗп, кайса ӳкӗн.

— Мана та кала-ха, — тусӗ умне тухса ӑна малалла утма чарчӗ Дина.

— Вӑхӑт ҫитсен пӗлӗн тетӗп-ҫке, ан васкат.

— Ялан эс ҫапла. Эпӗ те сана малашне нимӗн те каласа памастӑп.

— Юрӗ, эппин, итле, — Рита Динӑна хӑлхинчен пӑшӑлтатса хавхаланса калаҫрӗ. — Кӳренместӗн-и халь?

— Ӗненместӗп. Даша ҫапла хӑтланма пултарасса ӗненместӗп.

— Эпӗ хӑҫан сана суйнӑ? — кӳренсе тусне аяккалла тӗртрӗ Рита. — Ӗненместӗн пулсан урӑх нимӗн те каласа памастӑп сана.

— Юрĕ, ĕненетĕп. Ҫапах та тĕлĕнмелле...

— Тĕлĕнмеллисем татах та пулĕҫ-ха, тăхта кăштах. Лăпкă кӳлĕре шуйттан нумай тенĕ. Эпир ăна часах пуҫне каҫăртма пăрахтаратпăр. Атту ялан «Сидорова Даша...», «Сидорова Даша...»

— Хăрушă та иккен эсĕ, Рита. Санпа хирĕҫме те хăрамалла.

— Эсĕ ан хирĕҫ. Ялан туслă ҫӳре манпа, вара пурте йĕркеллĕ пулĕ. Каччисем те чи чаплисем асăрхĕҫ пире. Вăт кала, эсĕ кама килĕштеретĕн?

— Кулмастăн-и?

— Ҫук, паллах.

— Эпĕ... Герăна килĕштеретĕп.

— Герăна? — тĕлĕннипе чарăнса тăрса Динăна куҫран пăхрĕ Рита. — Каларăн та. Каллех ҫав Дашкăн кӳрши. Ăнать ăна: йăлт каччăсем ун ҫывăхĕнче. Чим-ха... Вăл вĕт вуннăмĕш класра вĕренекен Регинăпа туслă.

— Пĕлетĕп. Ҫавăнпа канăҫа ҫухатрăм та. Ĕнер те уроксем хыҫҫăн шкул умĕнче ăна кĕтсе тăратчĕ. Кайран киле пĕрле кайрĕҫ.

— Чим-ха, Регина пирĕн хур амипе Дашăпа туслă. Иккĕшĕ те аван вĕренеҫҫĕ, — чарăнса пĕр вăхăт шухăша кайса тăчĕ Рита. — Хирĕҫтерсе ямалла вĕсене.

— Камсене?

— Мĕнле ăнланмастăн? Регинăпа Дашăна.

— Мĕншĕн?

— Вăт тăр ухмах эсĕ. Акă итле эппин. Вĕсем Гера умĕнчех хирĕҫеҫҫĕ. Даша Регина пирки аван мар сăмахсем калать.

— Даша Регина пирки нихăҫан та аван мар сăмахсем каламĕ! Вĕсем пĕчĕкрен пĕрле выляса ӳснĕ, пĕр урамра пурăнаҫҫĕ, асламăшĕсем те туслă!

— Ҫавăнпа хирĕҫтермелле те! Даша пустуй сăмах калас ҫуккине ăнланса Гера Регинăран сивĕнет. Эсĕ вара ăна ăшăлла ярса илетĕн. Малтанах ăнлананҫи, хĕрхененҫи пул. Кайран Регина мĕнле ҫавăн пек тума пултарни пирки пăшăрханса калаҫăн.

— Мĕн тума пултарнă пирки?

— Кун пирки вара кăштах пуç ватма тивет, тусăм. Анчах эпир санпа ухмахсем мар, пуçсем ĕçлеççĕ, шухăшласа тупатпăрах.

— Хăрушă çын эсĕ, Рита.

— Хăрушă мар, пурнăç тума пĕлекен çын эпĕ! Телей алла кĕрессе кĕтсе ларсан ват хĕр пулса юлăн, кĕсйӳнти кашни пусна шутласа пурăнăн. Ман атте калашле, телей вăл кайăк пек, тытрăн пулсан упра, унсăрăн алăранах вĕçсе тухса кайма пултарать. Сăмсу çине картсах хур çак сăмахсене.

Даша кил-тĕрĕшри ĕçсене пуçтарсан уçăлмалла тесе урама тухрĕ. Тӳпери пин-пин çăлтăр хавассăн ялкăшса ăна саламларĕç тейĕн: пĕрин хыççăн тепри йăлтăр-йăлтăр çуталса илсе хĕре куç хĕснĕн вăй вылярĕç. Йывăççсем симĕсленме пуçламан пулин те таврана çуркунне шăрши сарăлнă: сĕлкĕшлĕ юртан пăсланакан нӳрĕк сывлăш сăмсана кăтăклать. Хуллен утса Даша Çавал хĕррине çитрĕ. Пăр аяла аннăран шыв хăпарнă ĕнтĕ кунта. Таçтан аякран шыв шăнкăртатса юхни те илтĕнет. «Иртерех мар-ши?» — шухăшларĕ хĕр. Вăл нумай пулмасть асламăшĕпе калаçнине аса илчĕ.

— Кăçал çуркунне ир килет, — кил картине тухсан çӳлелле пăхса каларĕ асламăшĕ.

— Мĕншĕн, асанне? — картишĕнчи юра урама туртма чарăнса тăрса ыйтрĕ Даша.

— Пĕлĕтсем тахçанах янкăр та таса. Куракасем те ир вĕçсе килчĕç кăçал. Кун пеккине тахçанах курманччĕ.

— Пире пĕрех мар-им, çуркунне хăвăрт килни аван вăл, асанне, — пĕлĕтелле пăхса каларĕ Даша. — Çĕр юртан хăвăртрах тасалать.

— Лайăхах мар çав, ачам. Юр хăвăрт юхса кайса пĕтет, çĕр нӳрĕк илсе юлаймасть, пахча çимĕç, тыр-пул начар пулать. Çут çанталăкăн хăйĕн йĕрки пур. Вăл та, этем пекех, васкама пуçларĕ. Эрне — пĕр кун пек, уйăх эрне пек иртсе каять. Сиссе те юлаймарăм, ватăлтăм.

— Эсĕ ватă мар-ха, асанне. Ларма та пĕлместĕн, ялан мĕн те пулин ĕçлен.

— Ĕҫсĕр пурӑнаймастӑп, ачам. Сана валли вырӑн ҫитти тĕрлеме пуҫларӑм, качча кайнӑ чухне парнелĕп.

— Каларӑн та, асанне. Эп качча каймастӑп.

— Хе-хе-хе, — ҫӑварне хупласа кулса илчĕ асламӑшĕ. — Ҫамрӑк чухне пурте ҫапла калатпӑр. Кĕтмен ҫĕртен пĕрпĕр качча тĕл пулса юратса пӑрахатпӑр та хамӑр мĕн каланине те манса каятпӑр.

— Асанне, кала-ха, сан чĕрӳне юрату килсе кĕнине епле пĕлсе тавҫӑрса илмелле? Тата мĕншĕн шӑп ҫав ҫынна суйласа илет-ха чĕре? Вӑл вĕт ыттисенчен нимĕнпе те уйрӑлса тӑмасть,— асламӑшĕ умне пырса тӑрса ыйтрĕ ун чухне Даша.

Асламӑшĕ каллех тутине хупласа кулса илчĕ те мӑнукĕ енне ҫаврӑнса шухӑша кайрĕ.

— Мĕнле пĕлмелле тетĕн-и? — ыйтрĕ вӑл кӑшт тӑрсан. — Ку ыйтӑва ху кӑна хуравлама пултарӑн. Юрату вĕри шĕл кӑвар пек, хаяр ҫил-тӑвалла, вӑйлӑ хумла хирĕнсе кĕрсе каять те этем ӑшне шалтан тустарма пуҫлать, мӑнукӑм. Ӑна юратнӑ ҫынсӑр пуҫне никам та лӑплантараймĕ. Этем нимĕн те тӑваймасть ҫав туйӑмпа. Чĕре пуҫа итлеми пулать. Сан хӑвӑн тӑнӑҫлӑхна аркатнӑ ҫынна аякран та пулин курас, пĕр сӑмах та пулин хушса илес килет. Вӑл саншӑн ҫĕр ҫинчи чи хаклӑ ҫын пулса тӑрать. Ӑна курман кунсем — чи телейсĕр кунсем. Унпа калаҫса илсен, куҫран куҫ пӑхсан эсĕ вӑйланса, ҫĕнелсе кайса темĕнле ĕҫ тума та пултаратӑн. Санӑн чуну та пĕлĕтри кайӑк пек ярӑнса вĕҫет.

— Асанне, — ватӑ ҫыннӑн куҫĕсем шывланнине асӑрхаса Даша ӑна аллинчен тытрĕ. — Эсĕ... поэт пекех калаҫатӑн. Эс асаттесĕр пуҫне такама, урӑххине юратнӑ пулас?

Асламӑшĕ чĕнмерĕ. Унтан пĕркеленчĕк питне аллипе сӑтӑрчĕ те тӳпенелле пӑхса сӑхсӑхса илчĕ.

— Санпа калаҫса ҫылӑха кĕтĕм, ачу-пӑчу. Шӑлсем те пĕтрĕҫ, ҫаплах юрату пирки калаҫса тӑратӑп. Атя кĕрер пӳрте, каҫ пулчĕ.

— Эс хуравламарӑн, асанне, — Даша асламӑшĕ умне пырса тӑрса ӑна пилĕкĕнчен ыталаса илчĕ.

— Санпа ҫылăха кĕрсе пĕтрĕм. Ватă ĕнтĕ эп юрату пирки калаҫма. Леш тĕнчене кайнă аслаҫу та каҫармĕ.

Асламăшĕн сăмахĕсем пирки чылай шухăшласа ҫӳрерĕ Даша. Ун шучĕпе, этемĕн хăйĕн туйăмĕсене лăплантарса пусарма та, вăйлатма та пĕлмелле. Халĕ мĕн пулса тухрĕха Дашăпа? Ăнсăртран тĕл пулса калаҫнă ҫын ун асĕнчен ниепле те тухасшăн мар. Йывăҫа пăра шăтарнă пек шалта пăркăчласа ыраттарсах тăрать. Мĕн тумалла? Камран пулăшу ыйтмалла? Амăшĕ хĕрне калаҫма пуҫласанах касса татать. Вĕсем никамран та ыйтса тĕпчемен имĕш, килĕштернĕ те — пĕрлешнĕ. Вăхăт ҫитсен Даша та качча кайса упăшкана юраса пурăнма пуҫлĕ, ача ҫуратĕ. Ашшĕпе калаҫма вăтанчĕ Даша. Гриша ҫамрăк-ха. Асламăшĕ ҫеҫ чун уҫҫи. Анчах унпа калаҫни те хĕрĕн ҫулăм хыпнă чĕрине лăплантармарĕ. Даша шывланнă куҫĕсене кукленсе ларса сăтăрса илчĕ. «Мĕншĕн йĕретĕп-ха эпĕ? — хăйĕнчен куҫҫулĕ витĕр ыйтрĕ хĕр. — Куҫҫулĕ хăех юхать. Чĕрем ыратать. Сашăна тепĕр хутчен те пулин тĕл пулса калаҫас килет. Акă асанне калани ман пата та ҫитрĕ. Мĕнпе сӳнтермелле ăшри ҫулăма? Ман пирки манса та кайрĕ пулĕ ĕнтĕ вăл. Сахал-им ун ҫул ҫинче тĕл пулса калаҫнă хĕрсем... Эпĕ вара хама асаплантаратăп. Кĕпепе те аван мар пулса тухрĕ. Тен, эпир начар пурăннине пĕлсе мĕскĕне шеллерĕ кăна... Нина аппа укҫине пачĕ-ши? Ыранах шкултан таврăннă чухне кĕрсе ыйтатăп. — Хĕр пуҫне ҫӳлелле ҫĕклесе куҫĕсене хупрĕ. — Эй, ҫăлтăрсем, лăплантарăр ман чĕрене... Манăн халь юрату пирки шухăшламалла мар, шкултан вĕренсе тухмалла. Эй, ҫил ачисем, вĕҫсе килсе ман куҫ умĕнчен Саша сăнарне сирсемĕрччĕ. Тулли те ҫутă уйăх... Мана валли тарăн та лăпкă ыйхă илсе килсемччĕ». Хирĕҫ чĕнекен пулмарĕ. Ҫавал шывĕ ҫеҫ пăр айĕнче лăпкăн хумханса, хуллен шĕпĕлтетсе юхрĕ. Даша пуҫне усса килĕ еннелле утрĕ.

Ирхине амăшĕ пӳрт тăрăх каллĕ-маллĕ утнипе вăранса кайрĕ вăл. Аллисене карăнтарса анаслаcа илчĕ те асламăшĕ выртнă еннелле ҫаврăнчĕ. Лешĕ тăрса кайнă та иккен. Ура вĕҫĕнче шăллĕ ҫеҫ харлаттарса ҫывăрать.

— Вăрантăн пулсан тăр, мĕн карăнса выртан? — те ятласа, те шкула кайма васкатса каларĕ амăшĕ — Даша тавçăрса илеймерĕ. Вырăн çинчен яшт сиксе тăчĕ те тумланма пуçларĕ.

— Уроксем хыççăн таçта çапкаланса ан çӳре, килте те ĕç нумай.

— Эп хăçан çапкаланса çӳренĕ, анне? Шкултан тухсан тӳрех киле таврăннă. Выльăхсене те асаннепе иксĕмĕрех пăхатпăр.

— Калаç тата! Выльăх та пăхмасан мĕн туса усрамалла сире? Аçу Мускава каясшăн, кашни кунах Çеруш патне калаçма çӳрет. Леш çынсем пуçтарать тет-и? Каять пулсан — кайтăрах. Мунча та çĕнĕрен тумалла. Клубра урай сĕрнĕшĕн паракан укça çăкăр çиме çеç çитсе пырать, пуçтарма çук. Асаннӳ хăйĕн пенсине пĕтĕрсе чикнĕ, пĕр пус ыйтса илеймĕн.

— Вăл пире Гришăпа иксĕмĕре кунсерен шкулта апат çиме парать. Лавккана та час-час ярать. Мĕн ĕнтĕ ун пенси укçийĕ? Хăй калашле, чăх мар, çерçи сăхмалăх та çук, мĕнле килет, çапла пĕтет.

— Асаннӳпе çывăрса ун пекех калаçма пуçланă. Сире парать-ха вăл. Пире, аçупа иксĕмĕре, ыйтсан та памасть. Юрать-ха, ĕнер Нина сутуçă чĕнсе кĕртсе укça тыттарчĕ... — амăшĕ хĕрĕ енне çаврăнса çăварне аллипе хап! хупларĕ те хыпаланса тĕпеле кĕрсе кайрĕ.

Даша амăшĕн хăтланкаларăшĕнчен тĕлĕнсе тумланма та чарăнчĕ, тĕпелелле тинкерчĕ.

— Нина аппа мĕн укçи пачĕ тата сана, анне? Мĕн каласа пĕтермерĕн?

— Ара... Тăпăрчă туяннăччĕ вăл манран. Çавăншăн пачĕ. Эс Гришăна вăрат-ха, эп асаннӳне пулăшма тухам. Утта аслăк тăрринчен пĕччен антараймĕ, хамах тухам-ха.

— Нина аппасен хăйсен те ĕне пур-иç, мĕн пирĕн тăпăрча туянать тата?

— Пирĕн... çуллăрах тет. Эс Гришăна хăвах апат çитерха, эп кил картине тухам.

— Юрĕ, анне, пĕрремĕш хут мар. Хамăрах хатĕрленсе кайăпăр.

Амăшĕ кил картине тухнă хыççăн Даша пуçĕнче шухăшсем пĕрин хыççăн тепри шуса иртрĕç: «Ытти чухне хăр-хар калаçакан амăшĕ мĕншĕн-ха паян куçне пытарать, юриех васкаса тухса кайрĕ? Нина аппа чăннипех те тăпăрчă туяннă-ши аннерен?» Даша шухăшне пӳрте васкаса кĕрсе тăнă ашшĕ татрĕ.

— Аннӳ ăçта, Даша? — ашшĕ хыпкаланса тĕпелти чаршава уçса пăхрĕ. — Каллех кӳрше каçрĕ-им?

— Асаннене пулăшма тухрĕ. Эпир Гришăпа шкула каятпăр. Эй, ăçта эсĕ унта, атя хăвăртрах, кая юлатпăр.

— Ĕлкĕретпĕр.

Даша шăллĕн сумкине хулпуççи урлă çакса алăка уçрĕ.

— Çула май аннӳне калăр-ха, пӳрте кĕтĕр, калаçмалли пур.

— Юрĕ, атте, калăпăр.

Дашăпа Гриша шкула шăнкăравччен кăшт маларах çеç çитсе кĕчĕç. Шăллĕ иккĕмĕш хута чупса хăпарса кайрĕ, Даша пĕрремĕш хутри тăваттăмĕш кабинета васкарĕ.

— Сидорова! Собственнăй персоной! Мĕншĕн кая юлтăн, Сидорова?! — сĕтел хушшинче юлташĕпе калаçса ларакан Рита Дашăна асăрхаса ура çине тăчĕ те аллисене саркаласа ун умне çывхарчĕ. — А-а, ăнланмалла, Сидорова. Çывăрса юлнă. Асаннӳ каланине итлемелле, Сидорова, ир çывăрма выртмалла. Асаннӳпе юнашар, кăмака хыçĕнче, ха-ха-ха!

— Эп асаннепе пĕрле çывăрнинче мĕн кулăшли пурши, ăнланмастăп, — Даша лăпкăн хуравласа Верăпа юнашар кĕрсе ларчĕ.

— Паллах, нимĕн кулăшли те çук, Сидорова, — Рита класри ачасем еннелле пăхса куçне хĕссе илчĕ те Дашăна хирĕç сĕтел çине хăпарса ларса вăл хăй умне кăларса хунă тетрадьсене пăтратрĕ. — Енчен те пĕр кăлтăк пулмасан.

— Рита, эсĕ мана кирек мĕн каласан та урăх çыртарса илтерместĕп, — мăн кăмăллăн хĕре куçран пăхса ачасем илтмелле мар шăппăн каларĕ Даша. — Ольга Якимовна

та пĕлет эсир манран ҫырса илнине. Тепре ҫакăн пек хăтлансан хăвна та «иккĕ» лартса паратăп терĕ.

— Эппин, сан вăрттăнлăхна пĕтĕм шкул пĕлĕ, — сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса хуравларĕ Рита. Унтан йалт! сиксе тăчĕ те доска умне тухса урок пуҫланасса кĕтекен вĕренекенсем еннелле ҫаврăнчĕ. — Ачасем! Сире валли ман пĕр тĕлĕнмелле новоҫ пур! Илтсен тĕлĕннипе кулса вилĕр!

— Рита, тен, кирлĕ мар калама? — хыҫалти сĕтел хушшинче ларакан Дина тусне чарма хăтланчĕ.

— Кирлĕ! Ăна пурте хисеплеҫҫĕ, ăслă, сăпайлă хĕр ӳсет Сидоровсен теҫҫĕ ялта. Вăл вара мĕн хăтланать-ха? Ĕнер...

— Рита! Чарăн! — Даша пуҫне чиксе ларнине асăрхаса ун юлташĕ Вера та ура ҫине сиксе тăчĕ. — Шăнкăрав пулчĕ! Кĕҫех Ольга Якимовна килсе кĕрет!

— Пулин! — чарăнмарĕ Рита. Вăл Даша умне пырса тăчĕ ҫеҫ — класа вĕрентекен килсе кĕчĕ те урок пуҫланни ҫинчен пĕлтерчĕ.

— Ырă кун пултăр пурне те, — Ольга Якимовна кĕнекисене сĕтел ҫине хучĕ, класс еннелле ҫаврăнчĕ. — Эпĕ сире ирĕклĕ темăпа сочинени ҫырма панăччĕ. Паян вĕсене хаклăпăр. Сочиненисене вуласа пĕтĕм класпа сӳтсе явăпăр. Кам малтан пуҫлать?

Класс шăпланчĕ. Шăна вĕҫни илтĕнет тейĕн. Пурте пĕрпĕрин ҫине пăхса илчĕҫ те, калаҫса таталнă пекех, Даша еннелле ҫаврăнчĕҫ.

— Сидорова, тăрах, яланхи пекех санран пуҫлар, — вĕрентекен те журналне уҫса пуканĕ ҫине вырнаҫрĕ.

Даша куҫ айĕн Рита енне пăхса илчĕ те доска умне тухрĕ.

— Манăн сочинени теми: «Тăван ялăм мана пурнăҫра вăй-хал парать». Эпĕ хамăн ҫуралнă яла питĕ юрататăп, — лăпкă сасăпа вулама пуҫларĕ Даша. Рита енчененне пăхкаласа ыттисене култарма хăтланса питне-куҫне выляткаларĕ. Анчах пурте доска умĕнче тăракан Дашăна тимлесе итленĕрен унăн та лăпланма тиврĕ. — Вăхăт малалла шăвĕ. Эпир ҫитĕнсе, вĕҫен кайăксем кăнтăралла вĕҫсе

кайнă пек, ялтан тухса кайăпăр. Пирĕнтен кашни хăйне килĕшекен ĕçе вĕренĕ. Хăшĕсем пысăк пуçлăха та тухĕç. Тĕрлĕ çынсем пулăпăр эпир. Анчах пире пурне те пĕр тымар — тăван ял — пĕрлештерсе тăрĕ. Кунта илнĕ пархатар пире малашне пулăшса, вăй-хал парса пырĕ. Манăн ĕмĕт вара — тăван тавралăхăм, унăн çыннисем çинчен ылтăн кĕнеке çырасси, — хуллен вĕçлерĕ çырăвне Даша.

— Маттур, Даша. Питĕ сăнарлă çырнă. Район хаçатĕнче пичетлеме сĕнсе пăхăпăр. Малалла вулăпăр. Никитин Герман, вула-ха ху çырнине.

Гера доска умне мăнаçлăн утса тухса тетрадьне уçрĕ. Хыçалти сĕтел хушшинче хуллен ахлатни илтĕнчĕ.

— Эпĕ шкултан вĕренсе тухсан малалла мĕнле профессие суйласа илесси пирки çыртăм. Мана тухтăр ĕçĕ, чирлĕ çынсене сиплесси илĕртет. Эпĕ ку професси паянхи кун чи кирли тесе шухăшлатăп.

Герăпа ытти вĕренекенсем вуланине те класс шăппăн итлерĕ. Черет чĕрнине якатса ларакан Рита патне çитрĕ.

— Иванова, эсĕ пире мĕнпе савăнтарăн? — ун еннелле пăхса ура çине тăчĕ Ольга Якимовна. — Сана мĕнле професси килĕшет е эсĕ урăх тема суйласа илнĕ-и? Вула-ха.

— Хальлĕхе суйламан-ха. Аттепе анне ăçта ыраççĕ вĕренме, çавăнта каятăп. Ялта юлмастăпах. Çав пылчăка çăрса çӳресе пурăнмастăпах.

— Аçупа аннӳ суйлĕç-ха вĕсем. Анчах хăвна мĕнле ĕç килĕшет? Тăван ял пирки те ахалех япăх калатăн. Питĕ илемлĕ вырăнта вырнаçнă вăл. Кунта та ăслă, пултаруллă çынсем пурăнаççĕ. Аван пурăнасси вăл эсĕ ăçта пурăннинчен мар, хăвна пурнăçра мĕнле тытнинчен, камсемпе хутшăннинчен нумай килет, Иванова. Даша ав чăн-чăн çыравçă пек сăнарланă пирĕн Чалăмкассине. Вĕренсе тухсан та ялах таврăнма, ăна малалла аталантарма ĕмĕтленет. Эп ăнланнă тăрăх, эсир Сергеева Динăпа иксĕр сочинени çырман, çапла-и?

— Ман вăхăт пулман, анне чирлет, — вĕрентекене куçран пăхса каларĕ Рита. — Выльăхсене пăхмалла пулчĕ.

— Санăн, Сергеева, мĕнле сăлтав?

— Эпĕ... Эпĕ Ритăна пулăшрăм, — аран илтĕнчĕç Динăн сăмахĕсем.

— Суяççĕ вĕсем! — класри шăплăха татрĕ Дашăпа юнашар ларакан Герăн сасси. — Эпĕ вĕсене район центрĕнче куртăм ĕнер, япаласем туянатчĕç!

— Вара мĕн?! — Гера енне хаяр куçне ывăтрĕ Рита. — Санран ыйтмаллаччĕ-им унта кайма юранипе юраманнине?

— Иванова, хирĕçсе ан кай, — вĕренекенсене чарас тесе сылтăм аллине çĕклерĕ Ольга Якимовна. Вăл хыçалалла пуçтарса çыхнă сарă çӳçне майлакаласа илчĕ те вĕренекенсем умне тухса тăчĕ. — Ачасем, пирĕн пурин те харпăр хăй ĕçĕсем пур. Çапах та кирлĕ, палăртнă тивĕçсем валли шкулта вĕреннĕ чухнех вăхăт яланах тупмалла тата вĕсене пурнăçламалла. Мĕншĕн тесен çак йăла ӳлĕм сирĕн пурнăçа кусĕ. Атьăр пĕрле шухăшласа пăхар. Аякра пурăнакансене шкула автобус илсе килет, çапла-и? Енчен те паян сире водитель эпĕ сире илсе каймастăп, мĕншĕн тесен чирлетĕп тесе е урăх сăлтав тупса килĕнче юлчĕ пулсан сирĕнтен чылайăшĕ шкула килеймен пулĕччĕ. Пĕр çыншăн миçе çын хур тӳсĕччĕ. Чирлесси, паллах, пулать. Анчах та ун пирки кама та пулин асăрхаттарса каламалла. Ун вырăнне урăх çынна яраççĕ. Килти ĕçе пурнăçламанни эсир хăвăр тивĕçĕрсем çине сӳрĕккĕн пăхнине, вĕренӳ çине алă сулнине пĕлтерет. Çакă йăлана кĕрсе сирĕнте çирĕпленсе ларсан ӳлĕм йывăр килĕ. Мĕншĕн тесен пĕрре ултalaма пулать, иккĕ... Кайран сире ĕненме пăрахĕç. Юлташăрсем, пĕрле ĕçлес кăмăллисем саланса пĕтĕç. Пĕччен тăрса юлас хăрушлăх пур. Çавăн пекех сире ултaлакансем те тупăнĕç.

— Кун пирки ваттисен сăмахĕ те пур, Ольга Якимовна, — Даша алă çĕклесе ура çине тăчĕ. — Саншăн ырă ĕç туччăр тесен хăв та ыттисем валли ыррине çеç ту.

— Тĕрĕс, Даша. Эпĕ сирĕншĕн вĕрентекен çеç мар, класс ертӳçи те. Çавăнпа та эсир мĕн хăтланнине курмăш тума пултараймастăп. Паян эсир урока хатĕрленсе килменни те, сăлтавне суйни те аван мар.

Рита Даша енне хаяр куçĕсемпе тепре пăхса илчĕ те

кӗнекине шатлаттарса хупрӗ. Шӑнкӑрав янӑраса кайни ҫеҫ ӑна киревсӗр сӑмах каласран тытса чарчӗ пулас: вӑл тути айӗн мӑкӑртатса кӗнекисемпе тетрачӗсене сумкине хыпаланса чикрӗ те ыттисене тӗрткелесе коридора васкарӗ.

— Сидорова! — хыттӑн чӗнчӗ вӑл Верӑпа калаҫса класран тухакан Дашӑна. — Кил-ха кунта!

Даша Верӑран уйрӑлса Рита умне пырса тӑчӗ.

— Мӗн кирлӗ сана? Сочинени ҫырса пама ыйтатӑн пулсан ан та тӑрӑш, пурпӗрех ҫырмастӑп.

— Мана санран тек нимӗн те кирлӗ мар, Сидорова! Атте компьютер туянса пачӗ. Кӗҫех ман интернет пулать. Унта темӗн те тупма пулать. Эсӗ мӗн, Сидорова, хӑв кам чӗппи пулнине мансах манран кулас терӗн-им? Е ҫӗрӗк асаннӳпе кӑмака хыҫӗнче ҫывӑрса ӑслӑланса кайрӑн-и?

— Ман асаннене ан тӗкӗн! Вӑл пурнӑҫ курнӑ ҫын! Сана унран тӑрӑхлаттармастӑп!

— Мӗн тунӑ пулӑттӑн-ха тӑрӑхланӑ пулсан та?! Ҫӑварӑрсене карсан пыршусем курӑнаҫҫӗ вӗт сирӗн. Аннӳ урай сӗрет. Аҫу ӗҫсӗр ларать. Динӑн ашшӗне, Ҫеруш пиччене, калатӑп та — Мускава та илсе каймаҫҫӗ ак ӑна. Выҫӑ ларатӑр. Ҫапах пуҫ каҫӑртасшӑн тата.

— Сана сочинени ҫыртарса илтерменни пуҫа каҫӑртнине пӗлтермест, Рита. Янтӑ япала пуҫна ӗҫлеттермест. Уроксене хатӗрленме пулӑшма пултаратӑп.

— Эсӗ?! Мана пулӑшасшӑн-и?! Пӑх-ха хӑвӑн ҫине, Сидорова! Эсӗ кам та эпӗ кам? Нивушлӗ эп санран пулӑшу ыйтакан ҫын пек туйӑнатӑп? Тумтирӳ те виҫ ҫул каяллахи. Курӑпӑр-ха, паянхи уява мӗн тӑхӑнса килӗн, — Рита Даша енне йӗрӗнсе пӑхса илчӗ те утса кайма хатӗрленчӗ. Унтан каялла ҫаврӑнса пӑхса чарӑнчӗ. — Тен... — калас сӑмахне каласа пӗтерейменӗ: Ольга Якимовна класран тухнине асӑрхаса пусма тӑрӑх чупса анса кайрӗ.

— Мӗн итлесе тӑратӑн ҫак эс ӑна? — Шӑп тӑракан Вера тинех юлташне ҫанӑран пырса туртрӗ. — Пӑрахса утмаллаччӗ. Пулӑшу ыйтмасть иккен вӑл. Пирӗн ӗҫсене пӑхса ҫырни пулӑшу мар-шим уншӑн?

— Пулӑшу мар, Вера. Ҫын аталантӑр тесен ӑна пӑхтар-

са та çыртармалла мар, ĕçлесе те памалла мар. Хăйне ĕçлеме вĕрентмелле. «Янтти пăсать, кахаллантарать, çӳлелле ӳстермест, вырăнта тăратать», — тет ман асанне. Атя кайрăмăр, ав пире Гера кĕтсе тăрать. Паянхи уява та хатĕрленмелле.

— Ну, Даша, маттур та эсĕ, эпĕ сан пек пултараяс çук, — кӳршине хулĕнчен çавăтса малалла утрĕ Гера. — Мĕнлерех сăмахсемпе çырнă! Чуна пырса тивеççĕ. Манăн куççулĕ те тухрĕ.

— Каларăн та... Чун мĕнле шухăшлать-калать, çавăн пек çырнă. Санăн та питĕ аван. Мана килĕшрĕ. Вера авă ĕне сăвакансен ĕçĕ пирки чĕрене хускатмалла çырнă.

— Эпĕ анне епле асапланнине кашни кунах куратăп. Ирхи виççĕрех ĕçе тухса утать. Аллисем те ыратаççĕ ĕнтĕ. Атте ку ĕçе пăрах тесен урăх ăçта каяс тет. Вĕренмен те — ĕç тупма та йывăр. Эх, вĕренсе тухса аслă пĕлӳ илесчĕ. Эпĕ зоотехник пулатăп. Тен, эпир те ялта мĕн те пулин улăштарма пултарăттăмăр.

— Паллах, пултаратпăр, Вера! Тăрăшсан — пурте пулать. Акă эпĕ тухтăра вĕренесшĕн. Халĕ ялсенче тухтăрсен офисĕсене уçаççĕ. Пирĕн ялта та пур. Эпĕ ял çыннисем, çав шутрах, санăн аннӳ те, Вера, ан чирлеччĕр тесе хамран мĕн килнине пурне те тăватăп.

— Питĕ аван, ачасем! — Даша çаврăна-çаврăна сиккелесе ума тухса тăчĕ. — Эпĕ вара журналист пулатăпах! Пурте эпир шухăшланă пек пултăр тесен паян пирĕн мĕн тумалла-ха?

— Тăрăшса вĕренмелле-е-е! — ачасем кулкаласа, тĕрткелешсе килĕсем еннелле вĕçтерчĕç.

Тусне кӳреннĕ Дина шкултан пĕчченех таврăнасшăнччĕ. Анчах ăна Рита урамра кĕтсе тăнă иккен. Вăл ăна тухнă-тухман аллинчен ярса илчĕ те çывăхри пĕрене куписем патнелле çавăтса ертсе кайрĕ.

— Куртăн-и, мана тавăрма каварлашаççĕ, — инçех мар тăракан Дашăпа Вера енне кăтартса каларĕ Рита.

— Эсĕ мĕншĕн-ха пĕлмесĕрех çавăн пек усал шухăш-

латăн? Тен, вĕсем паянхи уяв пирки калаçаççĕ, — тусĕнчен аллине туртса илсе сиввĕнрех хуравларĕ Дина.

— Çапла пулĕ. Куртăн-и, хăйсен ушкăнне Герăпа Кольăна та илнĕ. Эс кӳршĕсем çеç тетĕн. Кур, еплерех пăхаççĕ вĕсем Даша куçĕнчен.

Дина Ритăна сирсе мала тухса тăчĕ. Çав вăхăтра Гера выляса сиккелекен Даша сулăнса кайнине асăрхарĕ те ӳкесрен тытса чарас тесе аллинчен тытрĕ. Коля та кӳршине ӳкме памарĕ: пилĕкĕнчен çупăрласа ура çине тӳрлетсе тăратрĕ. Даша иккĕшне те ыталаса илчĕ.

— Куртăн-и, Дина, кăнтăр кунĕнчех ыталанаççĕ! Эсĕ пур... Ну, кампа эсĕ паян: манпа е..?

— Санпа... — хăйне те аран илтрĕ Дина.

— Виççĕре пурте ман патра пуçтарăнатпăр.

— Камсем «пурте»?

— Вуннăмĕш класри Петьăпа Гена тата... Коля пирĕнпе пулатпăр терĕç.

— Юрĕ, пырăп. Анчах та Коля ун кӳрши-çке-ха. Амăшĕсем те туслă тенине илтнĕччĕ. Пире пулăшма килĕшĕши?

— Ан пăшăрхан, Коля ман алăра. Эп каласан пурне те пурнăçлĕ. Ыттисемпе те калаçса татăлнă. Укçа тесен темĕн тума та хатĕр.

— Укçа? Эсĕ, мĕн, вĕсене Дашăна хур кӳнĕшĕн укçа тӳлетĕн-им?

— Паллах. Ытла та тăмсай эсĕ, çавна та ăнланмастăн: паянхи кун сана укçасăр кам пулăшĕ?

— Юрĕ, эппин, эс пĕлетĕн пулĕ мĕн тумаллине. Виççĕре тĕл пулăпăр.

Наталья Петровна, ялти пек каласан Натали аппа, клубран урай сĕрсе таврăнсан выльăхĕсене апат пачĕ те упăшкине кĕтмелле тесе урама тухрĕ. Лешĕ кашни кун тенĕ пекех ял варринче пурăнакан Çеруш патне утать. Вунă çул ытла ĕнтĕ Сергей Игнатьевич ял çыннисене Мускава илсе çӳрет. Сидоровсен çемйи халиччен ялта ĕçлекеленипех, ытлашши сĕт-турăхне сутнипех майлаштаркаласа пу-

ръннăчче-ха. Анчах çемьере пулса иртнĕ юлашки харкашу упăшкине хытах шухăша ячĕ пулас...

Хĕрĕ шкултан кăмăлсăр таврăннине чӳречеренех асăрхарĕ амăшĕ. Даша пӳрте кĕнĕ-кĕмен сумкине пукан çине печĕ те асламăшĕ патне кĕрсе йĕме пуçларĕ.

— Ай-вай, мĕн пулчĕ, Ташук? Такам кӳрентерчĕ-им? — вырăн çинче ӳпне выртакан мăнукне çурăмĕнчен ачашларĕ асламăшĕ.

— Анне-е-е... Мĕншĕн çапла хăтланнă-ха вăл?

— Мĕн тунă вара эп? — Натали аппа та кăсăкланса чаршав хыçне кĕчĕ. — Эс мана асаннӳ умĕнче мĕншĕн тасаран варалан çак?

— Асанне мана çав телейсĕр кĕпешĕн тӳлеме укçа панăччĕ, — куççулĕ витĕр чыхăна-чыхăна калаçрĕ Даша. — Эпĕ ăна Нина аппана тыттартăм, Сашăна пама ыйтрăм. Вăл çав укçана сана каялла парса янă. Эсĕ вара мана Нина аппа тăпăрчăшăн тӳлерĕ тесе суеçтертĕн, анне-е-е...

— Тăхта-ха, кам каласа пачĕ вара сана кун пирки? — хĕрне хулпуççийĕсенчен лăскарĕ амăшĕ. — Эпир Нина аппупа иксĕмĕрехчĕ ун чухне лавккара.

— Эпĕ паян çул çинче каллех Сашăна тĕл пултăм. Унран укçа пирки ыйтрăм та, вăл тĕлĕнсе: «Мĕнле укçа?» — терĕ. Лавккана кĕрсе ыйтрăм. Нина аппа ăна нимĕнле укçа та паманнине тӳрех тавçăрса илтĕм. Унăн хĕрĕ Дина та пĕлнĕ. Нина аппах каласа панă-ши? Шкулта та усал хыпар сарнă ман пирки. Эпир... Сашăпа вăрттăн тĕл пулатпăр иккен.

— Мĕнле Саша пирки калаçатăн эсĕ? Мĕншĕн каллех тĕл пултăм тетĕн? Эсир унпа тĕл пулкалатăр-им? Дина, тен, тĕрĕссине калать — ăçтан пĕлес сире, çамрăксене? Сана сыхласа çӳреместĕп вĕт эпĕ. Мĕншĕн эпир, аçупа аннӳ, нимĕн те пĕлместпĕр? Эс каччăсемпе çӳренине пĕлем тулĕк, пуçунта пĕр çӳç пĕрчи хăвармастăп! Шкултан вĕренсе тух малтан! Э-э, эсĕ хăвăн сăмахусемпе ун пуçне пăтрататăн пулĕ-ха? — Натали аппа хунямăшĕ енне çаврăнса ăна сивĕ куçĕсемпе пăраларĕ. — Пăрах Дашăна

кирлĕ-кирлĕ мар сĕнӳсем пама! Эпир, ун ашшĕ-амăшĕ, хамăрах пĕлетпĕр ăна мĕн кирлине!

— Ара, кин, ман айăп çук кунта. Эп хăй ыйтсан çеç... А-а-ах! — сасартăк асламăшĕ чĕри тĕлне тытса каялла чакса пычĕ те урайне кайса ӳкрĕ.

— Асанне! Асанне тетĕп! Мĕн пулчĕ? Анне, шыв илсе кил хăвăртрах!

— Ай-тур-тур, нимех те каламарăм-çке, инкек сиксе ан тухтăрччĕ. Тухтăра чĕнсе илер пулĕ.

Асламăшĕ больницăрах выртса сипленчĕ. Даша кашни кун тенĕ пекех çӳрерĕ ун патне. Те ватă çынпа пулса иртнĕ инкек, те çамрăклăх хуйха час манни — Дашăна кĕпе пирки мантарчĕ: вăл ун çинчен урăх сăмах хускатмарĕ. Ашшĕ те час-часах шухăша кайса çӳрерĕ çакăн хыççăн.

— Çитет пулĕ аннен пенси укçине шанса пурăнса, — каларĕ вăл татăклăн çемье касхи апата сĕтел хушшине пуçтарăнсан. — Çамрăк мар ĕнтĕ анне, унпа кирек хăш вăхăтра инкек пулма пултарать. Укçа кирлĕ. Вите тăррине те юсаса пĕтермелле. Ачасем ӳсеççĕ. Даша ав хĕр пулса çитрĕ, кĕçех вĕренме тухса кайĕ. Мускава ĕçлеме каймах тивет. Çеруш ыран-паян çула тухатпăр терĕ. Мана та пĕрле илме шантарчĕ.

— Хăвăнне ху пĕл. Укçи кирлĕ. Даша, тĕрĕсех калатăн, хĕр пулчĕ. Тăхăнас та килет ун. Гриши те хăвăрт ӳсет, таçта васкать, — терĕ амăшĕ те ачисем çине пăхса.

— Манран килмест те вăл ӳсесси. Ӳсес мар тесе хама вĕренпе çыхса лартас-им? — кăмăлсăррăн хуравларĕ амăшне ывăлĕ.

— Уншăн каламастăп-ха, — ывăлне пуçĕнчен ачашларĕ амăшĕ. — Япалисене туянса çитерме çук, пĕчĕкленсех пыраççĕ.

— Каймах тивет, — арăмне итлемен пекех малалла каласрĕ ашшĕ.

— Мускав-Мускав тетĕр, кунтах ĕç тупма май çукшим? — калаçăва хутшăнчĕ асламăшĕ те. — Уйăх кайса ĕçлесе килеççĕ те тепĕр уйăх ялта ĕçсе пурăнаççĕ. Мĕн ĕçлесе илнине ĕçсех яраççĕ пулĕ тетĕп эп вĕсене.

— Пурте ӗçмеççӗ, анне. Ак Çерушах илер. Мускавра ӗçлесех çӗнӗ пӳрт хӑпартса лартрӗ. Халӗ машина туянма хатӗрленет.

— Хӑварӑнне хавӑр пӗлӗр эппин. Тем пуç ыратать, эп выртам-ха...

...Упӑшки аллисене сулласа хыпаланса утнине курсанах Натали аппа унӑн ӗçӗ ӑннине ӑнланчӗ.

— Çула пуçтар мана, кӗçӗр тухса каятпӑр.

— Юрӗ, эпӗ часах.

Ашшӗпе амӑшӗ пӳрте кӗнӗ вӑхӑтра Даша куç кӗски умӗнче çӳçне майлатчӗ. Вӑл икӗ çивӗтне кӑкӑрӗ умне ярса пуçне чалӑштарчӗ те çаврӑна-çаврӑна хӑйне сӑнарӗ.

— Çитет сана якӑлтатса, — амӑшӗн сивӗ сӑмахӗсем хӗрӗн аллисене лаштах усрӗç. — Аçу Мускава кайма хатӗрленет, пулӑш мана ун япалисене пуçтарма.

— Юрӗ, анне. Ку питӗ аван. Пирӗн те укçа пулӗ малашне. Анне-е-е, — амӑшне куçран ӑшшӑн пӑхса сассине çемçетрӗ Даша. — Эпир Гришӑпа тата асаннепе пӗрле сана валли уяв парни туянтӑмӑр, акӑ тыт, — Даша амӑшне ыталаса илсе пуçне тутӑр уртса ячӗ.

— Ара, чӑрманмалла марччӗ... — амӑшӗ аванмарланса куçӗсене аяккалла тартрӗ пулин те тутӑра çыхса куç кӗски умне кайса тӑчӗ. — Хаклӑ пулӗ ку тутӑр?

— Укçаран хаклӑ мар, анне.

— Манӑн нимӗн те çук. Капла аван та мар.

— Юрӗ-çке, Мускавран килсен туянса парӑпӑр. Халӗ кайма вӑхӑт çитрӗ. Авӑ Çерушсем килчӗç, васкатӑп. Лайӑх пурӑнӑр. Укçаллӑ килесчӗ. Хуçи аван теççӗ, — хыпаланчӗ ашшӗ.

— Çапла пултӑрччӗ, Миша, — куççульне çанӑ вӗçӗпе шӑлса илчӗ Натали аппа.

— Мӗн йӗретӗн, вӑрçа каймастӑп вӗт.

— Çапла та-ха... Хӑнӑхнӑччӗ пӗр-пӗрне... Эпир килте пурӑнкалӑпӑр-ха, эс йӗркеллӗ çӳре.

— Анне, акӑ атте валли çул çине апат хатӗрлерӗм, ӑçта чикес?

— Сĕтел çине хурах, хамах вырнаçтарăп.

Натали аппа упăшкине ăсатма урамах тухрĕ. Машина курăнми пуличчен те кĕмерĕ. Вăл пӳрте кĕнĕ çĕре Даша сĕтел çинчен пуçтарма та ĕлкĕрнĕ. Вăл йĕрекен амăшне лăплантарас тесе хирĕç утса пычĕ те çавăтса сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕ.

— Мĕншĕн йĕретĕн-ха эсĕ, анне? Хăв укçа çитмест тесе вăрçаттăн, халĕ аттене Мускава ярасшăн мар йĕретĕн. Ăнланмастăп сана эп, анне.

— Уйăх ытла пĕчче-ен... Сире мĕн... Ир тухса каятăр та каç килсе кĕретĕр. Асаннӳ тухса çӳреймест. Ман пĕччене тапăлтатмалла-а-а...

— Ара, кин, килет ĕнтĕ Мишша. Ачусем пулăшаççĕ вĕт сана. Ташук тĕрĕсех калать, пĕрре укçа çук тесе вăрçан, тепре йĕрен...

— Юрĕ-çке, эсир каланă пек пултăр. Тепĕр тесен, вилме кайман, кĕçех таврăнĕç. Çăва тухнă тĕле витене те юсăпăр. Çил витĕр вĕрет, выльăхсене сивĕ.

— Анне-е, — амăшĕн кăмăлĕ çаврăннине туйса Даша ун çумне кĕрсе ларса ăна ыталаса илчĕ. — Паян пирĕн шкулта хĕрарăмсен уявĕ пулать. Эпĕ те каясшăн, яратăн-и?

Амăшĕ хыпкаланса варт сиксе тăчĕ те пӳрт тăрăх унталла-кунталла утрĕ, тăпах чарăнса тăрса хĕрне куçран пăхрĕ.

— Каясса кай, чармастăп, анчах хăвна йĕркеллĕ тыт. Каччăсем пирки ман. Ав кӳршĕри Маруксен Герипе пĕрле кай, никам та тĕкĕнме хăймĕ.

— Тавтапуç, анне, эпĕ нумай тăмăп!

— Вĕçтер ĕнтĕ, атту урама тухма васкакан тиха пекех тапăртатса тăрататăн куç умĕнче.

Даша амăшне кансĕрлес мар тесе сарă кĕпине тăхăнчĕ те асламăшĕ патне йăпшăнса кĕчĕ.

— Мĕнле пек, асанне, килĕшет-и мана?

— Хитреленсех кайрăн эс капла, Даша. — Аппăшĕ хыççăн Гриша та асламăшĕ патне кĕнĕ иккен. — Кун пек эсĕ пирĕштипе пĕрех.

— Каларăн та... Пирĕшти... Пирĕшти камне пĕлетĕн-и эс?

— Пĕлетĕп. Чи хитре хĕр е хĕрарăм.

— Ир-ха сана пирĕшти пирки калаçма, урокусене вĕрен.

— Ыран шкула каймалла мар, ĕлкĕрĕп-ха. Эп асанне патне кĕнĕччĕ, сан пата мар.

— Ăхă, каллех укçа ыйтасшăн пулĕ-ха унран, пĕлетĕп сана. Мĕн туянасшăн-ха, тӳрех кала?

— Мĕншĕн тӳрех укçа, ахаль кĕтĕм, — Гриша кăмăлсăрланса тухса кайма хатĕрленчĕ.

— Юрĕ-юрĕ, ан кӳрен, эп шӳтлерĕм çеç. Асанне, эс мĕншĕн чĕнместĕн тата?

— Эп сире юратса итлесе ларап. Мухтав Турра, таса шĕкĕр ӳсетĕр. Гриша, ме пилĕк çĕр тенкĕ, ыран лавккана кайса мана валли çемçе пĕремĕк туян та юлнипе хăвна кирлĕ пек усă кур.

— Асанне, эсĕ ăна ытлашши памастăн-и? Анне пĕлсен вăрçма пултарать.

— Кашни кун памастăп-çке... Çитĕр ĕнтĕ. Ача чухне пылак та çиес килет.

— Асанне, пăх-ха ман çине, мĕнле пек? — Даша асламăшĕ умĕнче çаврăнкаласа илчĕ.

— Питĕ чипер, — терĕ асламăшĕ куççулĕ витĕр мăнукĕ çине савăнса пăхса. Унтан тем аса илсе мăнукĕ енне куçĕсене чарса пăхрĕ те арчине уçса темĕн шырама пуçларĕ. — Акă миçе çул ĕнтĕ арча тĕпĕнче пытанса выртать. Шкултан вĕренсе тухсан паратăп тенĕччĕ те юрĕ ĕнтĕ, паянхи уяв парни пултăр.

— Асанне-е-е... Епле илемлĕ тутăр! Чăн-чăн пурçăн! Куна сана асатте парнеленĕ-и?

— Çук, мăнукăм, аслаçу мар. Эпĕ те ялан ватă пулман. Сан пекех илемлĕ, яштака хĕр пулнă, — асламăшĕн куçĕсем савăнăçлăн çиççе шывланчĕç. — Эпир çамрăк чухне пирĕн яла кӳршĕллĕ Чул хула облаçĕнчен таварсем сутма килсе çӳретчĕç. Пĕррехинче пирĕн пата та икĕ çамрăк кĕчĕç. Кăвак куçлă çырă каччă ман çине пăхмассерен çĕр çырли пек хĕрелчĕ. Эпĕ те ăна пĕрре курсах килĕштертĕм. Вăрттăн тĕл пулма пуçларăмăр. Анчах куракансем пулнă:

аттене систернĕ. Аттĕ ларайми пуличченех чĕн йĕвенпе хĕнерĕ те кӳршĕ ял каччине, аслаçуна ĕнтĕ, çураçса килчĕ.

— Вăл вара, кăвак куçлă каччă, ăçта кайса çухалчĕ-ха?

— Аттепе упăшка кĕртме пăрахрĕç вĕсене пирĕн яла. Çак тутăр çеç мĕн ĕмĕр тăршшĕпе ман чуна ăшăтса пурăнчĕ.

— Акă мĕншĕн эсĕ ăна час-часах алла тытса шухăша кайса лараттăн. Асанне-е-е, эпĕ юрататăп сана, — Даша асламăшĕн куççуль тумламĕсене ал тутрипе шăлса илчĕ те ун çумне йăпшăнса кĕрсе ларчĕ. — Эпĕ те сан пекех ĕмĕр-ĕмĕр пĕр çынна юратса пурăнăп.

— Ташук, эсĕ çамрăк-ха апла калама, пурнăçра темĕн те пулать. Анчах çакна асту: юратупа выляма кирлĕ мар.

— Эпĕ нихăçан та вылямăп, асанне. Анчах юрату килнине мĕнле пĕлмелле?

— Кун пирки сана чĕрӳ пĕлтерĕ. Халĕ вĕçтерех. Сансăрах уява пуçлĕç тата.

Даша шкула чупса çитнĕ тĕле ачасем шкул столовăйне туллиех пуçтарăннăччĕ ĕнтĕ. Вăл мăйĕ тавра çыхнă шупка тутăрне майлакаларĕ те тантăшне шыраса сцена патнелле утрĕ. Кĕçех шкул директорĕн çумĕ Маргарита Лаврентьевна Петрушова уяв пуçланнине пĕлтерсе ертсе пыракансене сцена çине хăпарма ыйтрĕ. Çав вăхăтра Даша хăйне хыçалтан такам çанăран туртнине туйрĕ.

— Сидорова, атя хăвăртрах, сана Ольга Якимовна шырать, — терĕ Гера. Шурă кĕпе çийĕн мăйне хăмăр галстук çакнăскер, Дашăна çитĕннĕ çын пекех туйăнчĕ. — Регина чирлесе ӳкнĕ. Уява сан ертсе пымалла пулать.

— Епле апла? Эпĕ хатĕр мар! — Даша турткаланса аллине вĕçертрĕ.

— Мĕн хатĕрленмелли унта? Пуçна мĕн килнине кала та — пулчĕ те!

— Вăт хăв хăпар та кала! Пымастăп!

— Вăт кутăнскер. Хут тăрăх вуламалла вĕт, мĕн турткаланан? Репетицисенче пулнă-и эс? Пулнă! Атя хăвăртрах. Якимовна сана илсе килмех хушрĕ.

— Юрĕ, эппин. — Юратнă вĕрентекен сăмахĕсене итлемесĕр тăма пултараймарĕ Даша. — Анчах япăх пулсан мана ан айăплăр.

— Тахçанах çакăн пек каламаллаччĕ сан, турткалашса вăхăта ирттеретĕн.

Даша сцена çине тухса тăрсан вĕренекенсем шавласа илчĕç.

— Регина ăçта?

— Каллех çав вĕçкĕне кăларчĕç сцена çине, — Рита сассине уйăрса илчĕ сцена çинчи хĕр.

— Дашăсăр пуçне урăх çын çук-ши пирĕн шкулта?

Даша çак сăмахсене аванах илтрĕ пулин те пуçне каçăртса ÿсĕркелесе илчĕ те хăй сисмесĕрех юрă пуçарчĕ.

— Илемлĕ, илемлĕ,
Илемлĕ чăваш юрри... —

хĕрĕн янăравлă сасси шкул тăрăх саланса урамалла вирхĕнчĕ. Пурте шăп пулса сцена еннелле тинкерчĕç. Даша юрласа пĕтермесĕр те вырăнтан хускалакан пулмарĕ. Хĕр енне сиввĕн пăхакансем те шăпланчĕç: ахăртнех, Дашăн хăтланкаларăшĕ вĕсене те тĕлĕнтерчĕ пулас.

— Юратнă вĕрентекенсем, тантăшăмсем, сире пурне те уяв ячĕпе саламласа ырлăх-сывлăх, ăнăçу, телейпе юрату сунса уява уçма ирĕк ыйтатăп. — Даша залра ларакансем енне ăшшăн пăхса пуç тайрĕ, алă çупма чарăнасса кĕтсе пуçне кăштах каçăртрĕ. — Пуш уйăхĕн саккăрмĕш кунĕнче хĕрарăмсене чысласси ăçтан пуçланса кайнă-ха? Пин те сакăр çĕр аллă çиччĕмĕш çулта Нью-Йорк хулинчи çĕвĕпе атă-пушмак фабрикинче ĕçлекен хĕрарăмсем манифестацие пуçтарăнса хуçасенчен хăйсене вунă сехет çеç ĕçлеттерме, ĕçшĕн арçынсемпе танах тÿлеме ыйтнă. Çавăн пекех вĕсем хăйсен профсоюзне туса хунă. Вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтернĕ. Çакă хĕрарăмсен пĕрремĕш çĕнтерĕвĕ пулнă. Çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Чикаго хулинче пурăнакан килте ларакан хĕрарăмсем кастрюльсем, çатмасем тата хăйсем килте усă куракан ытти савăт-сапа йăтса урам тăрăх шаккаса утнă, хăйсене хисеплеме ыйтнă.

Анчах çакă вĕсен пурнăçне пачах та улăштарман. Çак ĕçе Германире пурăнакан Клара Цеткин вĕçне çитерме пултарнă. Унăн упăшки Раççей çынни пулнă. Вăл Кларăна Раççейрен тарса килнĕ революци шухăшĕллĕ студентсемпе паллаштарнă. Кайран Клара та хĕрарăмсен прависемшĕн, ирĕклĕхĕшĕн, вĕсене те суйлава хутшăнтарассишĕн кĕрешме пуçлать, пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен конференцине ирттерет. Унта вунçичĕ çĕршыв хутшăнать. Çавăнта Клара пуш уйăхĕн саккăрмĕшĕнче хĕрарăмсен уявне ирттерме сĕнет. Раççей хĕрарăмĕсем пăлхава пин те тăхăр çĕр вун виççĕмĕш çулта тухаççĕ, ĕç укçине ӳстерес, суйлава хутшăнтарас ыйтусене çĕклеççĕ. Пин те тăхăр çĕр вун çиччĕмĕш çулхи пуш уйăхĕн саккăрмĕшĕнче Петроград хулинчи пир-авăр фабрикинче ĕçлекенсем пăлхав пуçараççĕ. Пĕртанлăх, çăкăр, тăнăçлăх ыйтса Патшалăх Думи патнелле утаççĕ. Çакна асра тытса пин те тăхăр çĕр утмăл пиллĕкмĕш çулта пуш уйăхĕн саккăрмĕшне хĕрарăмсен уявĕ тата кану кунĕ тесе çирĕплетеççĕ.

Залра ларакансем шăп ларни Дашăна та хумхантарчĕ: вăл çамки çинчи тарне ал тутрипе шăлса типĕтрĕ те уява малалла тăсма ыйтса ташă ăстисене сцена çине чĕнчĕ.

— Тупăннă ученăй, пуçне каçăртать тата, интернетран вуласа пĕлнĕ те хăйне мăнна хурса тăрать. — Шăл витĕр сăрхăнса тухакан сăмахсене кам каланине Даша сассинчен уйăрчĕ. Анчах чĕрре кĕрсе хăйĕн кăмăлне те, уява та пăсас темерĕ. — Атя, кайрăмăр!

Вĕренекенсем пĕрин хыççăн тепри сцена çине тухса хăйсен пултарулăхĕпе тĕлĕнтерчĕç. Кĕçех ташă каçĕ пуçланчĕ.

— Киле пыратăн-и эс? — хăйне такам хыçалтан хыттăн тĕртнĕрен Даша сулăнсах кайрĕ.

— Гриша! Ӳкеретĕн вĕт! Эсĕ кунта мĕн туса çӳретĕн? Санпа тантăшши никам та çук.

— Анне сана пĕрлех илсе таврăнма ячĕ мана, атя киле.

— Гриша, эсĕ каях. Эпир Герăпа кăшт каярах юлса таврăнатпăр.

— Сана пĕрле илсе пымасан анне вăрçать мана.

— Ҫыварать вăл халĕ, каях.

— Эп кайăп-ха, анчах эс йĕркеллĕ тыт хăвна, — тесе Гриша Дашăран уйрăлчĕ.

— Вăт шĕпĕн, — ачашшăн пăхса ăсатрĕ шăллĕне Даша. — Вĕрентет тата. Вера, атя зала кĕретпĕр. Манăн кăмăл питĕ лайăх паян, ташлас-юрлас килет.

Тантăшĕ вырăнтан хускалмасăр алăк еннелле тинкернине асăрхасан Даша та унталла ҫаврăнчĕ.

Тин ҫеҫ алăкран кĕнĕ виҫĕ ҫамрăк кулкаласа хĕрсем патнелле ҫывхарчĕ. Даша вĕсем хушшинче хăйĕн чĕрине хускатса канăҫсăр тапăлтаттаракан Сашăна асăрхасан куҫĕсене чарса хускалмасăр тăчĕ. Унтан пĕрре кĕпи ҫине, тепре ăна куҫран тинкерекен каччă енне пăхса илчĕ те вăтаннипе пуҫне чикрĕ.

— Салам, хĕрсем, — шăплăха татрĕ яшсенчен пĕри. — Пире уява кĕртетĕр-и?

Хĕрсем чĕнмерĕҫ. Даша пуҫне ҫĕклемесĕр пӳрнисемпе мăйри тутăрне пĕтĕркелерĕ. Вера тантăшĕ мĕн каласса кĕтсе шăпăрт тăчĕ.

— Мĕншĕн чĕнместĕр? Ҫăвара шыв сыпрăр-им? — Саша пĕр утăм малалла пусса Даша патнелле ҫывхарчĕ. — Епле чипер иккен эсĕ. Мăкăнь ҫеҫки пек. Хитре хĕрсене юрататăп эпĕ.

Даша вăтаннипе пуҫне татах та пĕкрĕ.

— Саша, ан именте хĕрсене, кĕҫ сакайне анса кайĕҫ вăтаннипе. Тен, паллашăпăр. Мана Петя тесе чĕнеҫҫĕ. Сашăна паллатăр. Ку вара, — сарă ҫӳҫлĕ вăрăм качча хĕрсем умнелле тĕртрĕ Петя. — Миша, ман кӳршĕ.

— Питĕ хавас сирĕнпе паллашма, — Вера умĕнче пуҫне тайрĕ Миша текенни. — Тен, зала кĕретпĕр? Питĕ хаваслă кĕвĕ илтĕнет. Сана ташша чĕнме юратчĕ-ши?

— Атьăр, кĕрер. Пире тăхăр сехетчен ҫеҫ ташлама ирĕк пачĕҫ. Кайран хӳтерсех кăларса яратпăр терĕ сирĕн Якимовна, — Саша Дашăна алăран тытса хăй еннелле туртрĕ. Хĕр, ҫакна пачах кĕтменскер, каччă еннелле сулăнчĕ. Саша хĕре ачашшăн хăй ҫумне чăмăртарĕ. — Эпĕ те сана ташша чĕнетĕп.

Даша ерипен пуçне çĕклесе качча куçран тинкерчĕ. Пĕлĕт пек кăн-кăвак, тинĕс евĕр тарăн вĕсем. Хĕрĕн чĕри кăкăртан сиксе тухас пек тапăлтатса тапма пуçларĕ. Вăл сывлăшĕ пӳлĕннине, сывлама йывăрланнине туйса ассăн сывласа илчĕ те Верăна аллинчен çавăтрĕ, сĕтĕрнĕ пекех туртса ташă пӳлĕмне кĕрсе кайрĕ. Вĕсем хыççăн каччăсем те хускалчĕç. Даша тантăшне пилĕкĕнчен çупăрласа илчĕ те кĕвĕ майăн çаврăнма пуçларĕ. «Амур хумĕсем»... Миçе çын чĕрине пăлхантарман-ши çак кĕвĕ? Хĕр хăйне асамлăх тĕнчине лекнĕн туйрĕ. Утмăл турат çеçкиллĕ сарă кĕпе арки вăр-р та вăр-р çаврăнчĕ. Çав вăхăтра Даша кĕç-вĕç çӳлелле вĕçсе хăпарма хатĕрленекен лĕпĕше аса илтерчĕ. Шупка тутăрĕпе пĕр тĕсленнĕ пит çăмартийĕ, ялкăшакан çутă куçĕсем хĕр сăнне тата та илемлетрĕç. Çакна Саша çеç мар, кĕтесре пăшăлтатса каварлашакан ушкăн та асăрхарĕ.

— Даша, — çав вăхăтра тусĕнчен шăппăн ыйтрĕ Вера. — Эсĕ ку яшсене ăçтан паллатăн?

— Кайран каласа парăп. Халĕ ташлар, тусăм.

— Пăхăр-ха пирĕн ботаничкăна! Вăт, чăннипех те лăпкă кӳлĕри шуйттан. Мĕне кура çапла савăнать-ши?! — Пӳлĕм кĕтесĕнчи ушкăнра тăракан Ритăн йĕкĕлтесе каланă сăмахĕсене çывăхра тăракансем те илтрĕç пулас: ун еннелле çаврăнчĕç. — Тăхтăр-ха, — темĕн аса илнĕ пек шута кайса Рита шĕвĕр пӳрнине çӳлелле çĕклерĕ. — Кĕçех мыскара кăтартăп сире. Дина, пирĕн хур амине куç хывнă каччă хăшĕ çавăнта?

— Кăвак куçли, — хăлхаран хуллен пăшăлтатрĕ Дина. — Мĕн тума кирлĕ вăл сана?

— Курăн кĕçех.

Илемлĕ кĕрен кĕпе тăхăннă, майне тĕрлĕ шăрçа çакнă Рита пуçне вăшт çеç сулласа илчĕ те алăк умĕнче тăракан каччăсен ушкăнĕ еннелле хăюллăн утрĕ.

— Сире ташша чĕнме юратчĕ-ши? — хулпуççийĕ çине сапаласа янă сарă кăтра çӳçне сăрланă вăрăм чĕрнеллĕ пӳрнисемпе юсанçи туса Сашăна куçран пăхрĕ Рита. —

Халиччен курман сире, пирĕн патра пĕрремĕш хутчен пулас?

Дашăпа Вера ташланине куç илмесĕр сăнакан Саша малтанлăха çухалса кайрĕ. Унтан хĕрĕн хăй çине ачашшăн пăхакан куçĕсене, йăл кулакан çӳхе тутине асăрхасан хирĕçлеме хăяймарĕ, ăна хăй еннелле туртса илсе ташлама пуçларĕ. Çĕнĕ мăшăра Дашăпа Вера та асăрхарĕç. Вĕсем сăнанине курса Рита Саша çумне тачăрах çыпăçса ăна куçран пăхрĕ.

— Питĕ хитре ташлатăн эсĕ, ăçта вĕрентĕн?

— Хам тĕллĕн. Салтакра кăштах ташланă. Эсĕ те аван çаврăнатăн.

— Каларăн та... — Рита вăтананçи туса пуçне пĕкрĕ те хыттăн ахăлтатса кулса ячĕ.

— Эпĕ нимĕн кулăшли те каламарăм-çке.

— Пĕр пăтăрмаха аса илтĕм, ха-ха-ха, — качча майĕнчен икĕ аллипе ыталаса илсе куçран пăхрĕ Рита. — Каласа парас-и?

— Эпĕ итлеме хавас.

— Тăхта эппин.

Рита ахăрса кулни Дашăн чĕрине çурмалла çурчĕ тейĕн: вăл хăй пăлханнине никама та кăтартас мар тесе Верăна вĕçертрĕ те ирĕкелле тухма хатĕрленчĕ. Дашăна куç айĕпе вăрттăн сăнакан Рита çакна асăрхаса ун çулне пӳлчĕ. Хăй çав вăхăтрах тусне те, Кольăна, сăнама пăрахмарĕ. Дашăн кӳрши аллисене хире-хирĕç тытнă, мĕн пуласса кĕтнĕ пек пĕрре Даша енне, тепре Рита енне пăхса илчĕ. Çакна асăрханă Ритăн куçĕсенчен çулăм сирпĕнме пуçларĕ тейĕн: вăл йĕри-тавра çиллессĕн пăхса илчĕ.

— Мĕскĕн, кам тата мĕншĕн парнеленĕ-ши сана ку тутăх тĕслĕ кĕпене — паллă мар. Аçу-аннӳ кĕпе те туянса параймасть, ют çын кĕпипе çӳретĕн, — пуçне чиксе утакан Дашăна аларан тытса чарчĕ Рита. — Мăйунта та асаннӳн ĕмпӳ вăхăтĕнчи шăрçи. Ăçтан тупса çыхрăн эс ку тутăра? Ун врăнĕ тахçанах çӳп шăтăкĕнче. Пăхăр-ха ун çине, чи пултарулли имĕш вăл шкулта! Мĕн пăхмалли пур сан çинче, Сидорова?! Пукан пек лутра эсĕ! Куçусем те

мăшкăлтăк шывĕ пек тĕссĕр! Урусем... Ха-ха-ха, — Рита каçăрăлса кулса илчĕ те Дашăна хулĕнчен туртса çавăркаларĕ. — Çитмĕл çулхи карчăкăн — асаннӳн пекех кукăр.

Шава илтсе ташлакансем те чарăнчĕç. Кĕвĕ те шăпланчĕ. Ушкăн Дашăпа Ритăна хупăрласа илчĕ.

— Ну, мĕн чĕнместĕн, Сидорова? Тĕрĕслĕх куçна çиетим? Е нимĕн те каламалли çук? Тĕрĕс, Сидорова! Сана пурте ырлаççĕ. «Сидорова аван вĕренет...» «Сидорова пур ĕçре те маттур...» Пĕлетпĕр эс ăçта маттур пулнине. Кала пурне те, Сидорова, çак кĕпене сана мĕншĕн туянса панă-ха? Чĕнместĕн. Пĕлетпĕр эпир эс шкултан мĕншĕн пĕччен таврăннине! Уроксем хыççăн пурте автобус çине васкаççĕ, пирĕн Сидорова вара шурă хурăнсем айне!

— Рита! Мĕнле намăс мар сана çавăн пек калаçма?! Чар чĕлхӳне! Унсăрăн... — Вера тантăшĕ умне тухса Ритăна куçĕсемпе пăраларĕ.

— Мĕн унсăрăн? Кала малалла, Вера?! Эсĕ вĕт ун хӳрешки анчах. Сан вырăнта пулсан эп унпа пĕр утăм та туман пулăттăм. Мĕншĕн тесен вăл хăйне çапла киревсĕр тыткаланипе сан ятна та варалать! Ăна хурăнсем айне каччӑпа кĕрсе кайнине пĕтĕм ял курнă! Ĕненмесен Лисук аппаран ыйтăр! — Рита хăйне майлă çынсене шыраса тавралла пăхса илчĕ. Никам та чĕнмерĕ. Пурте малалла мĕн пуласса кĕтсе шăпăрт тăчĕç. — Хăçан пулнă вăл пач палламан каччă хĕре кĕпе парнелени? Паллах, мĕншĕн те пулин илсе панă!

Даша пĕрре Рита енне, тепре Саша çине пăхса илчĕ, пуçне чикрĕ. Çав вăхăтра Рита Сашăна аллинчен ярса илсе хăйĕнпе çумăн тăратрĕ. Даша пуçне чиксе ушкăна икĕ еннелле сирчĕ те чупнă пек алăк еннелле васкарĕ. Таврара шăна вĕçни илтĕнчĕ. Ритăн ашшĕпе амăшĕ ялта ятлă çынсем. Вĕсен хĕрне хирĕç кайни ӳлĕм сиен кӳме пултарнине пурте ăнланаççĕ.

— Рита, — терĕ çав вăхăтра Саша никам илтмелле мар хуллен. — Пурне те хăв виçӳпе ан виç.

— Мĕн терĕн эс?! — Сашăн сăмахĕсем Ритăшăн вăкăр умĕнчеваркăшакан хĕрлĕ пусма пекех пулчĕç пулас: вăл

хĕремесленсе кайрĕ. — Епле хăятăн эс мана хирĕç калама?! Ман атте камне пĕлетĕн-и эс?

— Пĕлетĕп. Шел вĕсене. Эс аçу-аннӳ çитĕнĕвĕсемпе мар, хăв мĕн пултарнипе мухтан. Хальлĕхе эс маншăн хăй тĕллĕн нимĕн тума пултарайман, çав вăхăтрах ыттисене ăмсанса ним айăпсăр кӳрентерме пултаракан этем пек курăнатăн.

— Эпĕ... Нимĕн тума пултарайман этем? Епле хăятăн эс ман пирки çапла калама?! Э-э, ăнлантăм эсĕ мĕн пирки каланине, — Рита сиввĕн кулкаласа тавралла пухăннă вĕренекенсене сăнарĕ. — Ăçтан-ха пурте сан пек пултаруллă пулĕç? Эсĕ вĕт пурне те пултаракан хĕре хăв май çавăрма пултарнă. Вăл пур çĕре те ĕлкĕрет. Ĕнер ăна лавкка хыçĕнче палламан арçынпа тăнине курнă. Кӳршĕ каччисемпе те каççерен ыталанса çӳрет. Хамăр куртăмăр Динăпа! Намăса пĕлесчĕ ун. Гера хăйĕн юлташĕпе Регинăпа туслă пулнине пĕлсе тăрсах урам тăрăх унпа ыталанса çӳрет. «Пурпĕрех туртса илетĕп», — тесе каланине çынсем илтнĕ. Вăлах Регинăна «вăрра тытаканни»!

Регина çак сăмахсене илтсен темĕн калама хатĕрленсе çăварне уçрĕ... Анчах сывлăшĕ пӳлĕнсе килнипе тутисене сиктеркелесе илчĕ те куçĕсемпе Герăна шырарĕ.

— Мĕнле «вăрра тытнă»? — Гера туххăмрах хĕрсем умне çитсе тăрса Ритăна хулĕнчен чăмăртаса тытрĕ.

— Эпĕ никамăнне те нимĕн те вăрламан... — ушкăнра тăракан Регинăн сассине илтсе вĕренекенсем айккалла сирĕлчĕç.

— А-ай, ыраттаратăн, яр теççĕ сана! Кӳршӳнтен ыйт! Калаканни вăл, эп мар!

— Даша, ăçта эсĕ? Регина санне хăçан тата мĕн вăрланă? — Гера Дашăна шыраса тавралла тинкерчĕ.

— Куртăн-и, Гера? Тухса тарнă сан кӳршӳ! Мĕн калатăр ĕнтĕ вăл?! Мĕншĕн тесен эп калани — йăлтах тĕрĕс! Ĕненмесен Лисук аппаран ыйтăр! — Рита çĕнтерӳллĕн тавраналла тинкерчĕ. — Пĕлтĕр пирĕн ăслă-пăслă Сидорова аллине çыхмалли сехетне çухатнă иккен. Пурне те Регина вăрланă тесе ĕнентернĕ. Анчах кайран ун сехет пачах та

пулманни палăрнă. Кĕпине те юттисем парнелеççĕ те, ашшĕпе амăшĕ ăçтан-ха ăна сехет туянса паччăр? Иккĕшĕ те ĕçе çӳремеççĕ! Ял халăхне сăмакун сутса сиен кӳреççĕ!

Вера хăй енне ыйтуллăн пăхакан Сашăн куçĕсене асăрхарĕ те аллисемпе ушкăна сиркелесе тантăшĕ хыççăн алăк патнелле талпăнчĕ.

— Вера! Тăхта тетĕп! Вера! — Саша хĕре тытса чарас тесе ун хыççăн ăнтăлчĕ. Анчах Рита тавра пуçтаранннă ушкăн варринчен ниепле те хăтăлса тухаймарĕ.

— Куртăр-и? Нимĕн те хуравласа калаймаççĕ! Мĕншĕн тесен эпех тĕрĕс! Акă тинех пĕлтĕр Сидорова кам иккенне! Ун пичĕ çинчен маска сирĕлчĕ!

— Эй, эсĕ, пурне те пĕлекен, чĕлхӳ ывăнмарĕ-и калаçса? — Саша сурчăкне сирпĕтсех янрашакан хĕр умне туххăмрах çитсе тăчĕ. — Шел, арçын ача мар эсĕ, унсăрăн... Хĕрсемпе çапăçмастăп эпĕ. Петя! Миша! Кайрăмăр!

— Эп никамăнне те, нимĕн те вăрламан... — Регина куçĕсене хупласа вĕсем хыççăнах урамалла чупса тухрĕ.

— Регина! Тăхта, эпĕ те пыратăп! — Унтан Гера Рита еннелле çаврăнчĕ те ăна хулĕнчен ярса тытса хыттăн чăмăртарĕ. — Ну, Иванова, сăмсу çине картсах хур: сан суюна çиеле кăларатăпах! Ун чухне шеллемĕп сана!

— Аҥ хăрат! Сан пеккисенченех хăрамастăп-ха! Малтан хăвăн кӳршӳпе вĕçне-хĕрне туп. Мана ĕненмесен Динăран ыйт.

Ушкăн Дина еннелле çаврăнчĕ. Хĕр вăрттăн савса пурăнакан савнийĕн хаяр куçĕсене асăрхасан пуçне чикрĕ.

— Эпĕ... пĕлместĕп... — терĕ пуçне татах та пĕксе.

Рита хаярланса тантăшне хулĕнчен чĕпĕтрĕ. Гера Дина енне йĕрĕнсе пăхса илчĕ те курткине уртса ярса Регина хыççăн тухса чупрĕ.

—Эсĕ... Эсĕ малашне хăвăн хура ĕçӳсене пĕчченех ту! Пулăшать иккен вăл... Эсĕ йалт аркатрăн. Усал çын эсĕ... — Дина та йĕрсе ярса васкавлăн чупса тухса кайрĕ.

— Мĕн пулнă кунта? Мĕн пуçтарăнтăр? Уяв вĕçленчĕ пулсан килĕрсене саланăр, — çав вăхăтра ачасем патне çитсе тăнă Ольга Якимовнăн сасси пурне те шартах сик-

терчĕ пулас: вĕренекенсем пĕр-пĕрин çине пăхса хуллен саланма пуçларĕç. — Иванова, мĕн пулнă кунта? Мĕншĕн пĕри те чĕнместĕр? Мĕншĕн питĕ хăвăрт салантăр?

— Нимĕн те пулман! Уява пуçланнă-пуçланман сирĕн юратнă Сидорова пăсрĕ.

— Даша-и? Тем, ĕненес килмест. Вăл паян тĕлĕнмелле аван ертсе пычĕ уява. Питĕ хитре, хăйне килĕшӳллĕ кĕпе тăхăннăччĕ. Ăçта халĕ вăл?

— Эсир пурне те пĕлместĕр, Ольга Якимовна. Ăна...

— Рита, чарăн! — пӳлĕмре пĕччен тăрса юлнă Коля Ритăна куçран тинкерсе вĕсем патнелле çывхарчĕ. — Эпĕ Дашăна мĕн ачаран пĕлетĕп. Вăл ун пек хăтланма пултарайман. Сан пирки класс пухăвĕнче калаçма тивет.

— Кам та пулин кунта мĕн пулса иртни пирки ăнлантарса парăр-ха мана, тархасшăн, — Ольга Якимовна куçĕсене сиктеркелесе вĕренекенĕсене сăнарĕ. — Даша ăçта?

— Ольга Якимовна, эпĕ çывăх кунсенчех класс пухăвне иртterme сĕнетĕп. Паян кунта мĕн пулса иртнине сӳтсе явмаллах.

— Коля... Эпĕ... — Рита пуçне чиксе шурă туфлийĕн кĕлипе урай хăмине пăраларĕ.

— Сывă пулăр, Ольга Якимовна, эпĕ те вĕçтертĕм, ачасене хăваласа çитесшĕн.

— Нимĕн те ăнланмастăп, — аллисене сарса Коля кайнă еннелле çаврăнчĕ вĕрентекен. — Иванова, тен, эсĕ ăнлантарса парăн.

Вĕренекенсенчен пĕчченӗх тăрса юлнă Рита нимĕн каламасăр пӳлĕмрен тухса вирхĕнчĕ. Ольга Якимовна та çутта сӳнтерсе килне васкарĕ.

Сашăпа юлташĕсем ушкăна икĕ еннелле сирсе ирĕке тухрĕç. Тавралăх тĕттĕмленме те ĕлкĕрнĕ иккен. Каччăсем тĕрлĕ еннелле саланса Дашăна шыраpĕç. Анчах хĕр ниçта та курăнмарĕ.

Даша куççуль тумламĕсене шăла-шăла, чыхăна-чыхăна ӳсĕрсе килĕ еннелле чупрĕ. Шĕпĕр-шĕпĕр тăкăнакан юрпа хутăш çăвакан çумăрăн шултра тумламĕсем хĕр питне

перёнсе ыраттарчӗҫ. Анчах ним айӑпсӑр кӳнӗ чӗрери суран ытла та пысӑк пулни ӳт-тир ыратӑвне туйтармарӗ. «Мӗн тунӑ эп Ритӑна? Мӗншӗн вӑл мана паян пӗтӗм шкул умӗнче ҫапла ҫапса хуҫрӗ? Нивушлӗ килти ӗҫе ҫыртарса илтерменшӗнех ҫын чунне ҫапла варалама пулать? Ӑҫта тӗрӗслӗх? Малашне шкула мӗнле ҫӳремелле? Саша... Мӗн шухӑшларӗ-ши вӑл ман пирки? Мӗншӗн-ха вӑл Ритӑна ташша чӗнчӗ? Нивушлӗ вӑл та манран тӑрӑхлать? Куҫӗсем вара ӑшӑ. Вӑтанчӑклӑн пӑхаҫҫӗ. Ырӑ ҫын пек курӑнчӗ мана. Вӑл вара...»

Даша пӳрте шӑппӑн кӗрсе тӑчӗ. Тем пек хуллен утас терӗ пулин те ҫӑмӑл ыйхӑллӑ асламӑшӗ вӑранчех.

— Ташук, эс килтӗн-и? — вырӑн ҫинче тӑрса ларса ҫӳҫне майларӗ асламӑшӗ. — Мӗнле иртрӗ уяв? Кӗпӳне пахаларӗҫ-и? Пукане пекехчӗ те — асӑрханах ӗнтӗ.

— Килтӗм, асанне, — нӗшӗклесе хуравларӗ Даша.

— Эсӗ йӗретӗн тем? — мӑнукне хӑй еннелле ҫавӑрса ыйтрӗ асламӑшӗ. — Такам кӳрентерчӗ-им?

— Никам та кӳрентермен. Урамра ҫумӑр ҫӑвать. Такӑнса ӳксе чӗркуҫҫине ыраттартӑм.

— Эс уншӑнах йӗрес ҫук-ха, ан суеҫтер. Кӗркунне утӑ капанӗ тӑрринчен ӳксен те шӑпах лартӑн та... Каласа пар, мӗн пулчӗ? — ҫине тӑрсах ыйтрӗ асламӑшӗ.

— Асанне-е-е, — асламӑшӗ умне кукленсе ларчӗ Даша. — Мана Ивановсен Рити пӗтӗм шкул умӗнче темӗн те пӗр каласа пӗтерчӗ-ӗ. Мана ҫак кӗпене Саша парнеленине ӑҫтан пӗлет-ха вӑл?

— Ара, Ташук, ялта сӑмаха пытарса усраймӑн. Пӗри теприне, «сана анчах калап, анчах эс никама та ан шарла», — тенипех пӗтӗм ял пӗлет. Вӑрттӑнлӑха икӗ ҫын пӗлет пулсан вӑл вӑрттӑнлӑх пулма пӑрахать, ан ман ҫавна, пепкем. Панӑ-панӑ, вара мӗн? Кама мӗн ӗҫ?

— Асанне-е-е, эс пурне те пӗлместӗн. Вӑл мана... Калама та намӑс... Эп темӗнле арҫынпа хурӑнсем айне ҫӳретӗп тесе каларӗ-ӗ.

— Ай-тур-тур, ҫаплах каларӗ-и? Намӑс та мар-и ӑна, шкул ачине, ҫапла калаҫма? Ача вӗт эсир...

— Çаплах каларĕ-ĕ. Çитменнине, асанне, вăл калани-не Саша та илтрĕ-ĕ. Тата мана Саша ташша чĕнчĕ. Эп вăтаннипе тухмарăм. Вăл вара Ритăпа ыталанса ташларĕ.

— Вăт чĕмере. Ивановсен хĕрне эс мĕн усал тунă-ши? Кушака та кӳрентерейместĕн вĕт эсĕ.

— Килти ĕçе пăхтарса çыртармарăм. Эп ăна ăнлантарма уроксем хыççăн юласшăнччĕ, вăл мана чухăнлăхпа тĕксе кӳрентерчĕ. Тата вăл мана кӳршĕри Кольăпа çӳретĕн тесе айăплать. Коля маншăн юлташ çеç.

— Çамрăк чухне каччăшăн та, хĕршĕн те хирĕçесси пулать паллах. Анчах çапла пĕтĕм шкул умĕнче намăслантарма пысăк сăлтав кирлĕ.

— Вăл Саша çумне çыпăçрĕ. Манран пĕтĕм шкул умĕнче кулчĕ.

— Ытлашши ан хуçăл, мăнукăм. Çапла çăмăллăнах урăх хĕр енне куçакан каччă сана мĕн тума кирлĕ? Вăл малашне те сан куççульне нумай юхтарĕ.

— Асанне-е-е... Эпĕ ăна... юрататăп пулмалла-а-а...

— Ай, пепкем, — асламăшĕ Дашăна хăй çумне чăмăртаса пусĕнчен ачашларĕ. — Санăн та, манăнни пекех, юратăву телейсĕр пулĕ-ши? Эй, Турăçăм, — асламăшĕ ерипен ура çине тăчĕ те чӳрече енне пăхса сăхсăхрĕ. — Пĕртенпĕр хĕрĕм-пепкеме телей парах, тархасласа ыйтатăп. Ку манăн юлашки ыйтăвăм пулĕ. Вилĕм те алăк умĕнчех тăрать. Турăçăм, санран тархасласа ыйтатăп, çак Ташука эп курман телее парах.

— Мĕн пулнă сирĕн кунта?! Çывăрма памастăр! Каллех темле Сашăна асăнатăр, кам вăл? Пурпĕрех хăçан та пулин пĕлеп! Ну, калăр йалт! — пӳлĕм каррине сирсе амăшĕ кĕрсе тăрсан Даша ура çине çĕкленсе асламăшĕпе юнашар ларчĕ. — Эс татах унпа тĕл пулатăн-и-ха? Миçе хутчен каламалла сана каччăсемпе ан явăçнă пултăр тесе!

— Ара, кин, мĕн пулнине ыйтса пĕлмесĕрех Ташука ан ятла-ха.

— Мĕн ыйтмалли... Паллă пурте! Каччă шухăшне пуçунтан кăларса пăрах! Сан шкул пĕтерсе института кĕмелле! Тухтăра вĕренмелле!

— Юратмастăп эп тухтăр ĕçне! Ун пек пулсан институтне те каймастăп вĕренме! Асанне, кала ăна, тархасшăн, мана пустуй ан ятлатăр, — Даша ĕсĕкле-ĕсĕкле куçĕсене сăтăркаларĕ, асламăшĕн хулпуççийĕ çине таянса пуçне чикрĕ. — Кĕпешĕн те эсĕ айăплă, анне. Асанне панă укçана мĕншĕн Нина аппа урлă Сашăна партармарăн? Нивушлĕ эсир мана аттепе иксĕр кĕпе те туянса параймастăр?

— Каллех мана айăплать. Нина аппу хăй вăйпах пачĕ мана укçине. Леш ачи пурпĕрех илмест терĕ. Тупнă, тепĕр тесен, калаçмалли. Пули-пулми çынпа калаçмалла марччĕ çул çинче! — Унтан Натали аппа хунямăшĕ енне çаврăнса пӳрнипе юнарĕ. — Эсех пăсатăн хĕре. Мана та, ашшĕне те итлеми пулчĕ. Ялан тем пăшăлтатса калаçатăр иксĕр! Ку мĕнле тутăр тата? — Натали аппа Даша мăйĕнчи тутăра салтса илсе урайне печĕ. — Кай-кай, ăçтан тупрăн эс ку çĕтĕке?

— Анне! Мĕн калаçатăн эсĕ?! Ку...

— Ташук... Çавăнта... Эмел пурччĕ. Пар-ха, тархасшăн... — Даша асламăшĕ унран аллисене вĕçертсе вырăн çине кайса ӳкнине асăрхаса калаçма чарăнчĕ, амăшĕ енне тинкерчĕ. — Анне! Мĕн туса хутăн эсĕ?!

— Мĕн каларăм вара эп? Асаннӳн чĕри начар. Ме, пар эмелĕсене.

— Анне, вăл тутăр асаннен. Юратнă çын парни. Ăна вăл аллă çул ытла упранă, эсĕ пур...

— Эп мĕн... Эсир мана нимĕн те каламан. Ăçтан-ха ман пурне те пĕлес?

— Пĕлместĕн пулсан мĕншĕн калатăн, шăп лармаллаччĕ сан.

— Эс аннӳпе çапла тавлашатăн-и? Сире шкулта аслисене хисеплемелли пирки каламаççĕ пулас.

— Кин... Ташука ан ятла... Лайăх хĕр ӳсрĕ, тавах Турра. Эп... Çакăнтан... Питĕ хытă хĕссе ыратать. Вилетĕп пулас...

— Каларăн та. Пурăнан-ха эс. Иртсе каять. Кун пекки сан малтан та пулнăччĕ-иç.

— Пулсан-пулсан ҫапса та хуҫать. Ташук, минтере тӳрлет-ха. Кин, шыв ӗҫес килет... Илсе кил-ха.

Амӑшӗ тухса кайсан Даша асламӑшне меллӗ вырнаҫтарса вырттарчӗ те пукан илсе ун умне ларчӗ.

— Ташук... Мӑнукӑм... Кил-ха кунтарах. Арча тӗпӗнче манӑн пӗчӗк арча пур. Унта сана качча кайма пӗчӗккӗн укҫа пуҫтарса пынӑччӗ. Никам куриччен ил-ха, кайран памӗҫ тата.

— Асанне, эп качча каймастӑп. Кайран, шкулпа сывпуллашнӑ уяв валли ҫӗнӗ кӗпе, туфли туянма парӑн. Ун чухне, чӑн та, мана укҫа нумай кирлӗ пулать. Вӗренме те каймалла. Эс пухса пырах, асанне.

— Эй, ачу-пӑчу, итлемест тата... Ил тенӗ сана. Кайран, аннӳ аллине лексен, илеймӗн. Ӑна та ӑнланатӑп. Ҫитмен пурнӑҫ тарӑхтарать. Укҫи тивӗҫсе пымасть. Кил-ҫуртне те юсамалла. Аҫу Мускавран укҫаллӑ таврӑнтӑрах. Унта ӗҫлеттереҫҫӗ те укҫасӑрах кӑларса яраҫҫӗ тенине илтрӗм.

— Асанне, хӑв парӑн кайран.

— Итлемест тата... Ил теҫҫӗ сана хӑвӑртрах. А-ах, аннӳ ӑҫта ҫухалчӗ ҫак? Хӗссех ыратма пуҫларӗ... Пуҫ ҫаврӑнать... Вилӗм ҫитрӗ пулмалла... Укҫине илтӗн-и тетӗп?

— Асанне, мана пӑрахса ан кай-ха. Ман кампа калаҫса йӑпанас?

— Ара, аннӳ пур сан, унпа калаҫ.

— Вӑл ӑнланмасть мана... Ялан кӑшкӑрать.

— Ара, мӑнукӑм, ан кӳрен аннӳне. Каҫар ӑна. Вӑл усал сунса каламасть. Сире, Гришӑпа иксӗре, юратать вӑл. Аҫу таврӑнсан йӗркеленсе кайӑр-и...

— Эс, асаннеҫӗм, ан пӑшӑрхан, вӑл, ҫапах та, ман анне, эп кӳренместӗп. Эс анчах чӗрӗ пул.

— Акӑ ҫитрӗм. Витрере шыв пӗтнӗ, ҫӑлран тухса ӑсрӑм. Ӑҫтаччӗ-ха эмелӗ?

— Асанне аллинче, анне.

— Анне, пар-ха эмелне. Анне тетӗп! — хунямӑшӗ чӗнменнине кура Натали аппа пӗшкӗнсе ӑна куҫран тинкерчӗ. — Анне тетӗп! Даша, пӑх-ха, мана асаннӳ сывламан пек туйӑнать.

— Асанне! Асанне тетĕп! — Даша асламăшĕн чĕрине итлеме пĕшкĕнчĕ. — Анне! Асанне сывламасть!

— Ак чĕмере! Мĕн туса хутăмăр капла? Пăхса тăрсах вĕлерсе ятăмăр.

— Асанне, мана пăрахса ан кай, тархасшăн! Сансăр пуçне кам ăнланĕ мана? Асанне-е-е...

— Лăплан, Даша, асанне вилнĕ, эс йĕнипе чĕрĕлмĕ, — шава илтсе Гриша та вăраннă-мĕн. Вăл урайне кукленсе ларса йĕрекен аппăшне ура çине тăратрĕ. — Тухтăрсем килчĕç. Анне сана асаннен пытарма хатĕрленĕ япалисене пуçтарма каларĕ.

Асламăшне пытарни усал, хăрушă тĕлĕк пекех туйăнчĕ Дашăшăн. Çăва çинчен те вăл чи кайран тухрĕ. Пуçне чиксе çынсем хыççăн шăппăн утрĕ. Куç умĕнчен асламăшĕн сăнарĕ каймарĕ...

Пĕррехинче Гришăпа иккĕшĕ сĕм тĕттĕмччĕнех урамра ачасемпе мечĕкле вылянăччĕ. Амăшĕ çĕр улми анине çумлама хушни те манăçа тухнă. Эх, тустарчĕ те вĕсене çакăншăн. Юрать-ха, асламăшĕ хута кĕчĕ.

— Ара, кин, вĕсем урама çĕр улми анине çумласа пĕтерсен çеç тухрĕç. Хам тĕрĕслерĕм, тап-таса çумланă.

— Вĕсен хутне ан кĕр! Хăш вăхăтра çумлама ĕлкĕрнĕ вĕсем?! Иртенпе урамра чупса çӳреççĕ! Ăçтан ман пĕччен пур ĕçе те ĕлкĕрес?! Ыран ирхи виççĕре тăратса лартатăп!

— Ĕненмесен тухса пăх ара, — асламăшĕн лăпкă сасси амăшне те лăплантарчĕ: вăл пĕрре ачисем енне, тепре хунямăшĕ çине тинкерсе пăхрĕ те пӳртрен васкавлăн тухса утрĕ. — Чăн та, йалт çумланă. Хăш вăхăтра ĕлкĕртĕр? Çинук сирĕн пирки: «Иртенпех уйри çерем çинче мечĕк хăвалаcа чупаççĕ, хамăн Верука киле хӳтерсе ятăм», — терĕ. — Натали ерипен хунямăшĕ енне çаврăнчĕ. — Эсĕ çумланă пулĕ-ха, анне. Ачасене мĕншĕн пăсатăн? Ахаль те нимĕн те тумаççĕ. Пĕри кунĕпе кĕнеке вулать, тем çырать. Теприне мечĕк пулсан çăкăр та кирлĕ мар.

— Эп паян урама та тухман, — мăнукĕсем енне пăхса куçне хĕсрĕ асламăшĕ. — Ман урасем ыратаççĕ. Çум çумлама мар, пусма çинчен те анаймастăп.

— Анне, ан пăс ачасене, кахала, суйма вĕрентетĕн вĕт.

Даша урăх тӳссе тăраймарĕ: амăшĕ умне пуçне чиксе пырса тăчĕ.

— Каçар пире, анне, урăх ун пекки пулмасть. Асанне-не ан вăрç, вăл пире хӳтĕлесшĕн çеç пулчĕ.

— Камран? Тăван аннӳнтен-и?

— Ытла та хаяр эс, кин. Ху ача пулман-им? Ан вăрç мăнуксене. Выляс та килет вĕсен. Тарăхнă чух шарлас мар терĕм, ыран хамах калăттăм.

— Анне, тĕлĕнтеретĕн мана. Ман ачасене манран хӳ-тĕлеме шут тытнă. Ăçта пулнă кун пекки?..

Амăшĕ мăкăртатса пӳлĕмрен тухсан асламăшĕ мăнукĕ-сене хăй çумне ыталаса илчĕ те çумне лартрĕ.

— Сире пула эпĕ те суеçĕ ятне илтрĕм. Урăх ун пек ан тăвăр, ачамсем. Малтан хушнă ĕçе пурнăçлăр, кайран ура-ма тухма та юрать...

Тепрехинче Даша урамра кӳршĕре пурăнакан Кольăпа тытăçсах вăрçнăччĕ. Ушкăнра пĕр çын çитмен пирки фут-бол выляма арçын ачасем Дашăна чĕнсе тухрĕç. Савăнсах мечĕк хăваласа чупрĕ хĕрача. Кĕç Даша футбол хапхине хӳтĕлекен Коля пĕшкĕнсе нускине тӳрлетнине асăрхарĕ. Çав самантпа усă курса чупса пырса мечĕке хыттăн тапрĕ. Вăл хапхаран кĕрсе кайнине курса уй тăрăх сиккелесе чуп-ма пуçларĕ. Тарăхнă арçын ача хĕрача умне чупса пырса ăна пĕсехинчен ярса тытрĕ.

— Эп сире пурне те кăшт тăхтама ыйтрăм, тĕрĕс мар кун пек!

— Тĕрĕс! Мĕншĕн тесен эс каланине пирĕн команда илтмен. Сăмсу айĕнче мăкăртатмалла пулман! — Даша Ко-льăна пĕтĕм вăйĕпе тĕртсе ячĕ. Лешĕ каялла чакса пырса çĕр муклашки çине ӳксе хыттăн çухăрса ячĕ.

Çав вăхăтра çынсем уйран курăк çулса таврăннă пулнă иккен. Кольăн амăшĕ ывăлĕ кăшкăрнине илтсе çавине пă-рахсах ачасем патне чупса çитрĕ. Дашăна асăрхаса Натали аппа та ун хыççăн васкарĕ.

— Путсĕр ача эсĕ, арçын ачасемпе вăрçса çӳретĕн! Хĕра-часем ав вылямалли вак чул пуçтараççĕ çырма тĕпĕнче.

Эсĕ мана ҫапла намăс кăтартса ҫӳретĕн-и-ха?! — амăшĕ пилĕкне ҫыхнă чĕн пиҫиххипех хĕнерĕ ун чухне Дашăна.

Даша ыратнине тӳсеймесĕр авкалана-авкалана килне чупрĕ. Пӳрте кĕнĕ-кĕмен асламăшне ыталаса илчĕ.

Эх, вăрҫрĕ те асламăшĕ ун чухне амăшне. Ашшĕ те Даша хутне кĕрсе амăшне ятларĕ. Ҫилли кăраччĕ ҫав амăшĕн ун чухне. Мĕн пулса иртнине тĕпĕ-йĕрĕпе тишкермесĕрех аллине ҫĕклетчĕ. Пурăна киле лăпланчĕ. Хушăран халĕ те тарăхса кăшкăркалать те часах лăпланать...

Даша умра арҫынсемпе калаҫса пыракан ашшĕне асăрхарĕ. Вăл пуҫне чикнĕ. Тăмлă кĕреҫине хулпуҫҫийĕ ҫине хунă та васкамасăр утать. Хушăран ҫанă вĕҫĕпе куҫĕсене шăлса илет. Амăшĕ те пуҫне уснă. Мĕн шухăшлать-ши вăл ҫав вăхăтра? Асламăшне кӳрентернĕ вăхăтсене аса илет-ши е вăл вилнишĕн хăйне айăпласа хурланать-ши?

...Кинĕ тутăра ҫĕре илсе персен ватă ҫын сылтăм аллипе чĕрине ярса тытрĕ те Даша енне ҫаврăнса куҫне хĕсрĕ. Мăнукĕ ăна пĕр сăмахсăрах ăнланчĕ: вăл ăна шăп тăма ыйтрĕ, мĕн пĕлнине никама та ан кала терĕ. Юлашки вăхăтра чĕре ыратни пирки час-часах калатчĕ ҫав асламăшĕ. Ҫулĕпе те ҫамрăк мар ĕнтĕ: сакăр вунна ҫитрĕ. Хăй ĕмĕрне юратнă ҫыннишĕн хурланса ирттерни те чĕрине чылай амантнă-тăр...

Даша ҫак шухăшсемпе амăшĕ патнелле васкарĕ. Ăна хăваласа ҫитсе юнашар утрĕ.

— Анне, асанне халĕ ăҫта-ши, пире курать-ши вăл?

— Вилнĕ ҫын чунĕ хĕрĕх кунччен килтех пурăнать теҫҫĕ те, кам пĕлет — курать те пулĕ, — терĕ амăшĕ ассăн сывласа.

— Анне, эс асанне вилнишĕн хăвна пачах та ан айăпла. Вăл сана яланах мухтатчĕ, эс тем каласан та нихăҫан та кӳренместчĕ сана.

— Эп уншăн мар-ха. Аҫу Мускава паянах тухса каятăп тет. Ăна ҫула хатĕрлесе кăларса ямалли пирки шухăшласа пыратăп. Асаннӳ вара... Эп ун ҫулне ҫитиччен пурăнаяс та ҫук. Маттурччĕ ҫав асаннӳ...

Даша пуҫне чиксе амăшĕнчен тăрса юлчĕ. Натали аппа

хёрё тăрса юлнине те асăрхамарĕ пулас, хăй тĕллĕн калаçса килне васкарĕ.

Коля та Дашăран инçе мар утса пычĕ. Вăл хĕр пуçне чиксе вăрттăн йĕнине асăрхасан ун патне çывхарма тăхтарĕ. Хыçалта килекен Герăпа унăн амăшне, Марук аппана, асăрхаса вĕсене кĕтсе тăчĕ.

— Гера, — терĕ вăл хуллен кӳршисем хăйпе танлашсан. — Калаçмалли пурччĕ. Класс пухăвне кайран, Пĕрлехи патшалăх экзаменĕн тĕрĕслевлĕ тапхăрĕ иртсен, ирттермелле пулĕ. Куратăн-и Дашăна? Сăнран кайнă. Вăл асламăшне питĕ юрататчĕ. Тата пухура сӳтсе явсан... Пачах ютшăнĕ пирĕнтен. Пулăшмалла пирĕн ăна.

— Юрĕ. Анчах Ольга Якимовна килĕшĕ-ши? Ачасем пурте шăмат куна кĕтеççĕ.

— Якимовна ăнланатех. Даша — ун чи юратнă вĕренекенĕ. Сăмах май, вăл та çăва çине кĕрсе тухрĕ йăпăртлăха. Эпĕ аякран курса юлтăм.

— Эпĕ те куртăм. Анчах Даша патне пымарĕ.

— Паян Дашăпа калаçнин усси çук. Вăл сана илтмĕ те, ăнланмĕ те. Асламăшĕ вилни уншăн питĕ пысăк çухату. Ну, эсĕ мана ăнлантăн пулĕ тетĕп. Эпир кӳршĕсем, ачаран пĕрле выляса ӳсрĕмĕр, пĕр класра вĕренетпĕр, пĕрне-пĕри ăнланатпăр.

— Çапах та каласа пар-ха, мĕнпе вĕçленчĕ ун чухне харкашу? Эпĕ Регина хыççăн чупрăм. Аран хăваласа çитрĕм. Вăл Дашăнне сехет вăрлама пултарайман. Вĕсен ратĕнче те вăрă тавраш çук.

Коля тăп чарăнса тантăшне хăй енне çаврĕ.

— Тупнă кама ĕненмелли! Эс Ритăна пĕлместĕн-им?

— Эсир унпа туслă, эппин, эс ăна манран ытларах пĕлме кирлĕ.

— Туслă... Пĕлмене персе ан тăр. Рита... Вăхăт ирттермелле çеç эп унпа. Даша Регинăна сехет вăррине тытма пултарайман. Çитменнине, эп нихăçан та вăл сехет çыхса çӳренине асăрхаман.

— Йăлт пăтрантăмăр ун чухне. Эс манран юлтăн, каласа пар мĕн пулса иртрĕ кайран?

— Эпӗ шкултан тухсан инçех мар тӑракан ушкӑна асӑрхаса вӗсем патнелле утрӑм. «Ачасем, эсир Дашӑна курмарӑр-и?» — тесе ыйтрӑм ушкӑнра тӑракан çамрӑксенчен.

— Эх, эсир те çав, кӳршӗ хӗрне хӳтӗлесе сӑмах та каламарӑр! — тесе ман ума карттусне чалӑш тӑхӑннӑ яштака вӑрӑм каччӑ пырса тӑчӗ. — Ӑçта шырамалла халь ӑна?

— Вӑл килнелле чупса кайрӗ! — илтӗнчӗ ачасем хушшинче.

— Эс кам пулатӑн? — тӳррӗнех ыйтрӑм хӗремесленсе каччӑран.

— Мана Саша тесе чӗнеççӗ. Кусем ман юлташсем — Петя тата Миша. Эпир Дашӑпа ӑнсӑртран паллашнӑччӗ. Çул çинче. Кайран... хӗрарӑмсен уявӗ ячӗпе кӗпе парнелерӗм. Çавӑ çеç. Манран парне пултӑр терӗм. Çакӑнтан йӗпрен лум туса хунӑ. Нивушлӗ çынна хисеплесе парне пани те усал ӗç шутланать, каччӑсем? Атте-анне чаплӑ çынсем тесе ыттисене çапла хур тума юрать-и вара? Пӗр класра вӗренетӗр вӗт эсир. Пӗр ялта пурӑнатӑр. Нивушлӗ халиччен те пӗр-пӗрне пӗлсе çитерейменӗр? — ӳпкелерӗ вӑл пире.

— Эпир Даша пирки пачах та иккӗленместпӗр. Анчах Рита мӗншӗн çапла хӑтланнине ӑнланма пултараймастпӑр. Дашӑна хурласа калаçнине халиччен те илтмен. Унӑн мӑн кӑмӑлланасси пур, паллах, — терӗç ушкӑнрисем.

— Даша ӑна килти ӗçсене çыртарса илме пӑрахнӑ, — илтӗнчӗ çав вӑхӑтра. Пурте сасӑ енне çаврӑнчӗç. Дина иккен. — Тата вӑл эсӗ те, Гера та... Дашӑна килӗштеретӗр тесе шухӑшлать.

— Эпӗ Дашӑна килӗштеретӗп-и? — сылтӑм аллине чӗри тӗлне тытса ыйтрӗ Гера. — Эпир кӳрщӗсем çеç унпа.

— Вӑл вара урӑхла шухӑшлать.

— Юрӗ, кайран кун пирки сӳтсе явӑпӑр. Халӗ Дашӑна тупасчӗ. Хайпе тем туса ан хутӑр.

— Паян шырани усси пулмӗ. Пӗлетӗп эп Дашӑна. Ыран уроксем хыççӑн пухӑнӑпӑр. Халӗ киле каяр терӗм. Çавӑн пек салантӑмӑр. Ирхине анне Алтатти кинемей вилсе кайни пирки пӗлтерчӗ. Унтанпа никам та Дашӑпа курса ка-

лаçман. Ыран — Пĕрлĕхлĕ патшалăх экзаменне хатĕрленмелли тĕрĕслев.

— Дашăшăн хăрамалли çук. Вăл тытатех.

— Эпĕ те çаплах шухăшлатăп.

Зоя Гавриловна ĕçе каяс умĕн пӳлĕмĕнче канлĕ çывăракан хĕрне вăратса хăварас шутпа алăка хуллен уçса Рита умне пырса тăчĕ.

— Хĕрĕм, — терĕ вăл лăпкăн. — Паян сан экзамен, тăратăн пулĕ. Кайиччен тепре вуласа тух.

— Анне-е-е, мĕн ирех вăратан мана, — Рита амăшĕн аллине сирсе ывăтса тепĕр май çаврăнса выртрĕ. — Мĕн вуламалли халь. Пурнăçран кая юлнă эс. Эпир Петьăпа йăлт хатĕрленнĕ.

— Эп сана кĕнеке тытса ларнине пĕрре те курмарăм. Хăçан вĕренме ĕлкĕртĕн?

— Халь кам кĕнеке тытса ларать, анне-е? Тарăхтаратăн эс мана. Интернет тата телефон пур вĕт.

— Экзаменра вĕсемпе усă курма кам ирĕк парать? Çавăн пирки шухăшланă-и эс?

— Эпир Петьăпа пĕр-пĕрин хыççăн кĕретпĕр. Вăл — мана, эп ăна телефонпа хуравсем ярса паратпăр.

— Тытсан? Эс пире, аçупа иксĕмĕре, çапла намăс кăтартас тетĕн-и?

— Никам та тытмасть, анне. Пĕлтĕр те хăшĕ-пĕри çаплах экзамен тытрĕ. Институтра вĕренме кĕчĕ.

— Рита! Мĕнле тăна кĕртмелле сана, пĕлместĕп! Калаха, мĕншĕн пачах та вĕренесшĕн мар эсĕ? Мĕн çитмест сана? Мĕн кирлине йăлт туянса паратпăр. Интернет та ялта виçĕ çыннăн çеç. Аçупа иксĕмĕр тăрăнса кайса ĕçлетпĕр. Йăлт сана валли юлать.

— Ман мĕншĕн тăрăшса вĕренмелле, анне? Ман пурте пур. Ыттисем вĕренччĕр.

— Юрĕ, халĕ калаçни усси çук, каçхине аçупа пĕрле сӳтсе явăпăр. Ĕçе кая юлатпăр, аçу машинне кăшкăртать ав.

Амăшĕ хыççăн алăк хупăнсан Рита анаслакаласа ура çине тăчĕ те юлхав уттипе кил картине тухрĕ. Ашшĕн

çăмламас сарă йыттине апат пама вăхăчĕ çитмен пулас: Рита тухнă-тухманах чĕлхине кăларса ун умне чупса пычĕ те хыçалти икĕ ури çине ларса ăна куçран пăхрĕ.

— Кай-ха кунтан, хам та çиме ĕлкĕреймен, — текелесе Рита кил карти тавра чупса çаврăнчĕ те сивĕ шыва хăй тăрăх ярса пӳрте кĕчĕ. — Ы-ых, кĕлетке-çурăма упрамалла ăна. Хама йӳле яма юрамасть.

Даша паян шуçăмпа пĕрлех вăранчĕ. Асламăшĕ вилнĕ хыççăн ун вырăнĕ çинче çывăрса пурăнаканскерĕн ыйхи те килмерĕ. Экзамена хатĕрленес тесе кĕнекисене уçса пăхкаларĕ — мĕн вулани пачах та пуçа кĕмерĕ. Даша тарăхнипе кĕнекине хыçлă пукан çине печĕ. Унтан асламăшĕ «вилес умĕн сывласа тăранияс çук» тенине аса илчĕ те майĕпен шкула кайма пуçтарăнма пуçларĕ. Вăл хатĕрленсе çитнĕ тĕле шăллĕ те вăранчĕ.

— Тумлан хăвăртрах, пĕрле каятпăр, — тесе Даша Гриша валли апат хатĕрлеме пуçларĕ.

— Эсир тăнă-çке, — текелесе амăшĕ те пӳрте кĕчĕ. — Вылььăхсене апат патăм-ха. Гришăна апат çитертĕн-и?

— Ăхă. Сан, анне, пĕрре те пулин манран эс ху çирĕн-и тесе ыйтасчĕ. Ялан «Гриша» та «Гриша». Эп çак килте çук та тейĕн.

— Даша, мĕн пулнă сана ирех? — алăкран тухма хатĕрленнĕ шăллĕ чарăнса аппăшĕ енне çаврăнса пăхрĕ.

— Çывăрса тăранман пуль, çĕрĕпех йăшăлтатса выртрĕ. Ăна пула эп те çывраймарăм. Аçу килсен калаçăпăр-ха. Мана итлеми пултăн. Асту, сана хӳтĕлеме асаннӳ çук халь.

— Мĕн пулнă сана, Даша? — урама тухсан та аппăшне тĕпчеме чарăнмарĕ Гриша. — Эс яланах савăнăçлă, вĕçнĕ пек çӳреттĕнчĕ. Нивушлĕ асанне вилни сана çапла хурлантарать.

— Вăл та, — аяккалла пăхса каларĕ аппăшĕ.

— Тата мĕн пулчĕ? Экзамена ăнăçлă тытасса шанса тăратăп. Эс вырăс чĕлхипе «тăваттă» та илсе курман пуль, йăлт «пиллĕк» сан.

— Эх, шăллăм, эсĕ çеç мана ăнланатăн, куратăн. Асанне пурччĕ те... — Даша шăллĕ çине ăшшăн пăхса ун çӳçне

тăрмаларĕ. — Пĕчĕк-ха эс, ӳс кăштах. Халĕ сана пурне те каласа параймăп.

— Эп пĕчĕк-и? — Гриша аппăшĕпе юнашар пырса тăрса куçран пăхрĕ. — Куртăн-и, эп санран шит ытла çӳллĕ.

— Çӳллĕшĕ пур-ха сан, Гриша, — ассăн сывларĕ каллех Даша. — Эпĕ çулу пирки каларăм. Çамрăк-ха эсĕ мана пăшăрхантаракан ыйту пирки калаçма.

— Пачах та çамрăк мар вара — саккăрмĕш класа çитрĕм. Эсĕ çав иртнĕ эрнери пăтăрмах пирки хурланатăн пулĕ-ха.

Даша тăп чарăнса шăллĕне аллинчен ярса тытрĕ.

— Эсĕ тата кун пирки ăçтан пĕлетĕн?

— Даша! Мана пĕчĕк тетĕн, эсĕ хăв нимĕн те курмастăн та, илтместĕн те. Кун пирки шкул çеç мар, пĕтĕм ял калаçать!

— Мĕнле... Пĕтĕм ял мĕн калаçать? Мĕн теççĕ? — Даша хăй сисмесĕрех шăллĕне хулпуççийĕсенчен лăскарĕ.

— Даша! Мана ан ыраттар-ха! Мĕн калаçаççĕ?.. Сан пирки темĕнле арçынпа çӳрет, лешĕ сана кĕпе те илсе панă теççĕ. Тата...

— Мĕн тата? Мĕншĕн чарăнтăн? Кала малалла!

— Сан... ача пулать теççĕ.

— Ман... ача пулать? Турăçăм! Епле намăс мар вĕсене çапла калаçма?! Эп килтен ниçта тухмасăр пурăнатăп. Асанне вилнĕренпе анне лавккана та яма пăрахрĕ мана. Анне... Вăл пĕлет-и?

— Пĕлмест пуль. Атту пулсан вăл тахçанах сан çӳсне тăпăлтармалла. Эс ытлашши ан пăшăрхан. Астăватăн-и асанне каланине? Калаçсан-калаçсан лăпланаççĕ.

— Лăпланаççĕ... Сăмахĕ пурпĕрех чĕрене амантрĕ. Кам çавăн пек сăмах сарнине пĕлсе тăратăп. Рита, паллах. Гриша, кала-ха, мĕн тунă эп ăна? Мĕншĕн вăл мана çав тери кураймасть?

— Мĕн тунине пĕлместĕп. Анчах вăл сана Кольăшăн тавăрать теççĕ.

— Мĕнле Кольăшăн тата?

— Ултутти аппасен Коли, хамăр кӳршĕ.

— Коля ман юлташ. Пĕр класра вĕренетпĕр. Çавă çеç. Эп... Эс никама та ан кала, юрĕ-и? Урăххине килĕштеретĕп эпĕ.

— Лавккана тавар турттаракан Сашăна-и?

Даша чарăнчĕ. Сумкине ума тытрĕ те пĕр вăхăт аяккалла пăхса тăчĕ. Унтан ассăн сывласа илчĕ те:

— Кун пирки те ял пĕлет, эппин, — терĕ.

— Кун пирки ял мар, эпĕ çеç пĕлетĕп, — Гриша аппăшне куçран пăхса ун патнелле утрĕ. — Эп уявра эс ун çине мĕнле пăхнине асăрхарăм. Даша, мĕн тума кирлĕ вăл сана? Вăл санран аслă. Эс кĕçех шкул пĕтерсе Шупашкара вĕренме каятăн. Унта темĕнле чипер каччăсене те тĕл пулăн. Тата... Эх, аппа-çке эс ман, каласах пуль, — Гриша пуçне чиксе кăшт шухăша кайса тăнă хыççăн аллипе сулласа илчĕ те малалла калаçрĕ. — Эпĕ уяв хыççăн вăл Ритăпа сăмахласа тăнине асăрхарăм. Питĕ шавлăн калаçатчĕç.

— Пĕлетĕп... Рита-çке вăл. Ташша та Сашăна хăех чĕнчĕ. Рита манран хитререх, чаплă тумланать. Ашшĕпе амăшĕ те ятлă çынсем. Ăçтан танлашăн ĕнтĕ Ритăпа...

— Кам? Рита хитре-и? Эсĕ унран та чипер, аппа, хăвна ху курмастăн анчах. Атя, васкăр шкула, кая юлăпăр. Киле пĕрле таврăнăпăр, юрĕ-и?

— Гриша, кĕместĕп эпĕ шкула...

— Мĕнле кĕместĕн? Сирĕн паян экзамен. Ольга Якимовна мĕн тейĕ?

— Эп паян пурпĕрех нимĕн те хуравлаймăп. Ман пуç ыратать.

— Шкул умĕнче сирĕн класра вĕренекенсем тăраççĕ. Пурте кунталла пăхаççĕ, Даша. Атя, ут малалла.

— Юрĕ. Эс каланă пек пултăр. Анчах...

— Даша! — Ума Коля çитсе тăни хĕре малалла калама памарĕ. — Эс кая юлтăн паян, эпир сана кĕтетпĕр.

— Мана? Мĕншĕн? Мансăр класс тĕлне пĕлместĕр-им? — Даша юлташĕсем енне пăхмасăрах шкула васкаса кĕрсе кайрĕ.

Ольга Якимовна экзамен хучĕсене валеçсе панă хыç-

ҫӑн та Даша ирхи калаҫу тыткӑнӗнчен хӑпаймарӗ. Хӑй пирки шкулта вӗренекенсем, ял ҫыннисем мӗншӗн ҫапла киревсӗрле калаҫма пултарнине ӑнланаймарӗ вӑл. «Ӑҫта йӑнӑш утӑм турӑм-ши? Эх, асанне пулнӑ пулсан... Йӑлт ӑнлантарса парӗччӗ. Вӑл мана ҫур сӑмахранах ӑнланнӑ. Аннепе атте пӗлсен мӗн калӗҫ? Мӗншӗн айӑп ҫукранах хама айӑплӑ пек туйса пурӑнмалла, ыттисем умӗнче тӳрре тухмалла? Мӗншӗн вӗсем ман пурнӑҫа сӗкӗнсе кӗреҫҫӗ? Саша... Лайӑх ача пек туйӑнатчӗ. Анчах та вӑл мана нимӗн пирки те сӑмах паман. Кӗпе туянса пачӗ ӗнтӗ. Эп ӑна уншӑн укҫа парасшӑн пултӑм — илмерӗ. Анчах вӑл ирӗклӗ ҫын, кирек кампа та ҫӳреме пултарать. Эпӗ хам ӑна юратрӑм. Кунта та Рита хушша кӗчӗ. Мӗншӗн ҫут тӗнчере тӗрӗсмарлӑх нумай-ши? Рита — хитре хӗр, ӑна такам та савмалла. Эпӗ вара — пӗчӗк, сӑнӑм-пуҫӑм та чипер мар. Авӑ ларать вӑл. Паян та ҫӗнӗ кӗпе тӑхӑннӑ, пукане пекех сӑрланнӑ. Питӗ савӑнӑҫлӑ. Ӗнер Сашӑпа тӗл пулнӑ ӗнтӗ. Ай, ҫитӗ-ха, ман экзамен тытмалла. Анчах нимӗн те пуҫа кӗмест».

— Ҫак тӑватӑ сӑмахра хӑшӗнче «и» ҫырмалла, — Даша пуҫне икӗ аллипе тытса шухӑша кайрӗ. — Хӑшӗнче-ши? Ҫук, вӗренсе тухсан, Гриша калашле, хулана тухса каятӑп. Йӑлт манма тӑрӑшӑп. Тӗлӗнмелле, Рита ӑҫта вӗренме кӗрӗши? Вырӑс чӗлхипе те питӗ начар вӗренет. Паян вӑл экзамен тытаймастех. Тен, Саша та сивӗнӗ унран... Ритӑн мана мӗншӗн Коля ҫумне хушмалла-ши? Тен, ҫавӑншӑнах мана тавӑрать? Эпир юлташсем ҫеҫ пулнине пӗтӗм шкул пӗлет.

— Вӑхӑт вӗҫленчӗ. Хутсене сӗтел ҫине хурӑр та класран тухма пултаратӑр, — Ольга Якимовнӑн сасси Дашӑшӑн уяр кунра аслати авӑтнӑ пекех пулчӗ. Вӑл хӑйӗн хучӗ ҫине кӗҫ-вӗҫ йӗрсе ярас пек пӑхса илчӗ те юратнӑ вӗрентекенне куҫран тӗллерӗ. — Сидорова, саншӑн ку ыйтусем хӗвел ҫаврӑнӑш евӗрех ҫӑмӑллӑн шӗкӗлченеҫҫӗ. Эп эс «пиллӗклӗх» тытасси пирки пачах та иккӗленместӗп.

— Эп...Эп...

— Ну-ну, Сидорова, пуринпе пӗрлех пар хутна, — кунта

та Рита ҫитсе тăма ĕлкĕрнĕ. Вăл ҫăварти пылак чăмлакне Даша умĕнче чĕлхи вĕҫне кăларса хăмпăлантарса илчĕ те каялла пытарчĕ. — Пур ыйтăва та хуравларăн пулĕ-ха? Эсĕ вĕт пирĕн «ботаничка». Пур ҫĕрте те маттур, ха-ха-ха.

Даша хăй ҫине ҫĕнтерӳллĕн пăхакан Рита енне куҫĕсене чарса пăхрĕ, анчах нимĕн те хуравласа калаймарĕ. Хăй паянхи тĕрĕслеве пурнăҫлайманнине ăнланса илчĕ те никама нимĕн каламасăр класран тухса чупрĕ.

Уҫă сывлăш хĕрĕн питне-куҫне ҫеҫ уҫăлтарма пултарчĕ. Чĕрери йывăр ҫĕклемĕ ыраттарса куҫҫуль кăларттарчĕ. Даша пӳрте кĕнĕ-кĕмен асламăшĕн вырăнĕ ҫине выртса хыттăн ӳлесе йĕме пуҫларĕ. Ҫакна илтнĕ амăшĕ тĕпелтен хыпкаланса тухса хĕрĕ патне пычĕ.

— Даша, тем пулмарĕ пулĕ те?

— Эп экзамен тытаймарăм, анне-е-е...

— Епле тытаймарăн? Эс мана яланах аван вĕренеп тесе шантарса пурăнтăн мар-и? — амăшĕ ҫилленсе кайса хĕрне тăратса лартрĕ. — Кала, мĕншĕн тытаймарăн? Ыйтăвĕсем йывăр пулчĕҫ-им?

— Ҫ-ҫук...

— Эппин, мĕншĕн тытаймарăн тата?

— Мана вăхăт ҫитмерĕ-ĕ...

— Тĕлĕнмелле... Ыттисене ҫитнĕ, сана — ҫитмен! Мĕн, ҫывăрса кайрăн-им экзаменра?

— Ҫ-ҫук... Эп шухăша кайрăм...

— Экзаменра кам ухмаххи шухăша кайса ларать?! Кай-кай, пĕтĕм яла култартăн, хĕрĕм. Халь института каясси те пулмасть пулĕ. Аҫупа иксĕмĕр сана тем пек тухтăр тăвасшăнччĕ. Чĕн йĕвен ҫитмест сана! Малтан асаннӳ хута кĕрсе пурăнчĕ! Халь аҫу ҫитĕннĕ хĕре ан хĕне тесе вăрҫать. Кун пеккине пĕлсен вăл та алă ҫĕклемесĕр тӳсеймĕ. Чим-ха, эп сана...

Амăшĕ пĕчĕк пӳлĕмрен хыпкаланса тухса кайсан Даша каялла вырăн ҫине выртса йĕме пуҫларĕ. Натали аппа та тĕпелте нумай тытăнса тăмарĕ: васкаса таврăнса упăшкин чĕн пиҫиххийĕпе хĕрне ҫурăмран туртса ҫапрĕ.

— Акă сана, чупкăна! Пĕтĕм яла каластартăн! Шкул

пĕтерме ĕлкĕреймерĕн — каччăсемпе çапкаланса çӳрен! Намăс кăтартрăн пире, аçупа аннӳне!

— Анне! Ан хĕне мана! Эп тӳрлететĕп! Ку чăн экзамен мар-ха...

— Тӳрлетет вăл! Яла ят янине мĕнле тӳрлетĕн?! Ак сана, ак сана! Асаннӳ çук халь хӳтĕлеме! Намăссăр хĕр! Урама мĕнле тухса çӳремелле пирĕн? Шăллу пирки шухăшласчĕ!

— Эп айăплă мар, анне-е... — Даша амăшĕнчен хăтăлас тесе сиксе тăчĕ те ирĕке тухма хатĕрленчĕ.

— Ниçта та каймастăн! Вĕрен!

— Вĕренетĕп, анне...

— Пĕтĕм вăя пĕтертĕн. Аçусем паян Мускавран таврăнаççĕ. Пĕлсен иксĕмĕрĕнне те пуççене касать. Эс ăна пĕлетĕн.

— Вĕренетĕп, анне, — амăшĕ тухса кайсан Даша шăпланса сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. — Вĕренетĕп. Анчах эп вăл ыйтусене йăлтах пĕлетĕп вĕт-ха... Мĕншĕн шухăша кайса лартăм-ши?

Даша ура çине çĕкленсе чӳрече умне пычĕ. Кил картинче чупса çӳрекен йытти ăна асăрхаса çывăхарах пырса икĕ ури çине ларчĕ. Хĕре куçран тинкерсе пуçне унталла-кунталла суллакаларĕ те нăйкăшса витене кĕрсе çухалчĕ.

«Эх, Çил-тăманăм эсĕ ман, эсĕ те манран таратăн. Мĕнле пурăнмалла малашне? Асанне калашле, кун пек чухне пите кĕççе çĕлемелле е шыва кайса чăммалла... Шыва кайса чăммалла... Ку питĕ çăмăл çул-йĕр... Шампăр! сикетĕн те... çухалатăн. Эс вилсен кирек кам мĕн калаçтăр сан пирки — пурпĕрех. Эс илтместĕн ăна. Пурăна киле пурте манăçĕ. Ята та манса кайĕç... Шăллăма шел, паллах. Пурăна киле вăл та манĕ ăна. Анчах та хăрушă! Сикесси хăрушă! Шыв ăшăнса çитмен-ха. Пурпĕрех мар-и?.. Малтанлăха çеç хăрушă... Кайран, чĕре тапма пăрахсан, нимĕн те ыратмĕ... Эппин...»

Даша пĕр чарăнми юхакан куççульне шăлса илчĕ те асламăшĕн юратнă сăнӳкерчĕкне алла илчĕ.

— Кĕт мана, асанне... Часах тĕл пулăпăр...

Хĕр сумкинчен хутпа ручка кăларса сĕтел хушшине

кĕрсе ларчĕ. Аллисем чĕтренине, чĕри кăкăртан сиксе тухас пек тапнине туйса хут листине икĕ аллипе ярса тытрĕ. Унтан васкаса «Эпĕ никама та кирлĕ мар...» тесе çырчĕ те пӳртрен такам хăваланă пек чупса тухса кайрĕ.

— Ăçта каятăн?! — тĕпелте апат хатĕрлекен амăшĕ ăна хирĕç тухса тытса чарма хăтланчĕ.

— Эпĕ... Выльăхсене апат пама тухатăп...

— Тухса уçăлса çӳре-ха эппин, тен, ăс пырса кĕрĕ.

Вĕренекенсем салансан Ольга Якимовна комисси членĕсене пӳлĕме чĕнсе илчĕ те хут тĕркемне сĕтел çине хучĕ. Чи çиелте Маргарита Ивановăн ĕçĕ выртнине асăрхарĕ. Вĕрентекен ăна алла илсе васкамасăр вулама пуçларĕ. Унтан, пуçне сулласа, куçĕсене чарчĕ, вĕçне çитиччен пачах чарăнмасăр вуласа тухрĕ.

— Тĕлĕнмелле,— терĕ вăл пĕрле тĕрĕслекенсене. — Пĕр йăнăш çук. Маттур, Рита. Тăрăшсан пултарать иккен.

Аллине Дашăн ĕçĕ лексен Ольга Якимовнăн куçĕсем çуталса илчĕç.

— Акă чăннипех те пысăк пуласлăх, — сасăпах каларĕ вăл. — Пур предметпа та аван вĕренет. Кирек мĕнле ĕç хушсан та хирĕçлесе тăмасть. Чăннипех те маттур. Эх, çакăн пек вĕренекенсем нумайрах пулсанччĕ. Эпир те урăхларах пурăннă пулăттăмăр.

Дашăн хуравĕсене вуланă май Ольга Якимовнăн сăнĕ улшăнса пынине, вăл куçĕсене чарса хута уçа-уçа пăхнине асăрхасан пурте ĕçлеме чарăнса ун еннелле çаврăнчĕç.

— Мĕн пулчĕ, Ольга Якимовна? — ура çине тăрса ун патне утса пычĕ районти пĕлӳ управленийĕнче ĕçлекен Всеволод Данилович Петров. — Тĕрĕс мар-им?

— Хам та ăнланмастăп... Сидорова Дарья икĕ ыйтăва çеç хуравланă.

— Парăр-ха кунта, — Всеволод Данилович, пĕчĕкрех самăр арçын, çăра куç харшийĕсене вылятса илчĕ те Дашăн ĕçне вулама пуçларĕ. — «Иккĕ», Ольга Якимовна. Любимчиксем пулмалла мар пирĕн ĕçре. Как всем, так и ей. Юрать-ха, ку тĕрĕслемелле çеç ирттернĕ экзамен. Чăн-чăн-

ни пулнӑ пулсан? Кун пек ӗҫпе института ҫул хупӑнать. Вӑт мӗн патне илсе ҫитерет, Ольга Якимовна, ачасене уйӑрни. Вӗсемпе пуринпе те пӗр пек пулмалла.

— Эп никама та уйӑрман, Всеволод Данилович. Даша, чӑннипех те, питӗ пултаруллӑ хӗр. Килӗнче те ашшӗ-амӑшне пулӑшать. Ҫапах та Даша ытларах асламӑшӗпе ҫывӑхчӗ. Нумай пулмасть вилсе кайрӗ. Тен...

— Никама та тӳрре кӑларма ан тӑрӑшӑр. Эсир — вӗрентекен! Сирӗн куҫҫуль шӑлмалла мар, ачасене пӗлӳ памалла!

— Даша ун пек хӗрача мар. Кунта сӑлтавне тишкермеллех, — ура ҫине тӑчӗ шкул директорӗн ҫумӗ Нина Васильевна Орлова та. Вӑл куҫлӑхне хывса илсе Дашӑн ӗҫне вулама пуҫларӗ. — Пулма пултараймасть! Анчах ним тума та ҫук, «иккӗ» лартма тивет.

Ольга Якимовна нимӗн те хуравлаймарӗ. Пуҫне чиксе Дашӑн ӗҫне аяккалла илсе хучӗ те малалла тӗрӗслеме пуҫларӗ. «Ӗҫсене тӗрӗслесе пӗтерсен Даша патне килне кӗрсе тухмаллах», — шухӑшларӗ вӑл ӑшӗнче.

— Тӑватӑ вӗренекенӗн паллисем начар, — Всеволод Данилович ӗҫсене пуҫтарса сумкине чиксен вӗрентекен те ура ҫине тӑчӗ. — Ку ачасемпе тимлӗрех пулмалла, Ольга Якимовна. Вӗренӳ ҫулӗ вӗҫленесси нумай юлмарӗ.

— Тӑрӑшӑпӑр, Всеволод Данилович. Сидорова Дарья патне паянах кӗрсе тухасшӑн. Ку хӗрача — пирӗн шкул шанӑҫӗччӗ. Ҫырма юратать. Журналист пуласшӑн ҫунать.

— Пуринпе те ӗҫлемелле. Тепӗр хутчен калатӑп: ачасене суйлама кирлӗ мар.

— Эп суйламастӑп. Анчах пултаруллӑ вӗренекенсене пулӑшасах килет.

— Ҫапах та дисциплина кирлех.

Ольга Якимовна Сидоровсем патне ҫитнӗ тӗле тавралӑх тӗттӗмленнӗччӗ ӗнтӗ. Даша амӑшӗ, витерен тулли витрепе тухакансккер, вӗрентекене курсан витрине шап! лартрӗ ҫӗр ҫине.

— Дашӑпа... Тем пулман пулӗ те? Таҫта чупса тухса кайрӗ... Телефонне те киле пӑрахса хӑварнӑ. Ашшӗн парнине ялан пӗрле чиксе ҫӳрекенччӗ.

— Вăл килте çук-им? — пăшăрханса ыйтрĕ Ольга Якимовна.

— Эсир вăл экзамен тытайманнине пĕлетĕр вĕт... — сĕт витрине çĕклесе пӳрте кĕме хатĕрленчĕ Натали аппа. — Пирĕн Даша пек лайăх вĕренекенсене те «иккĕ» лартса паратăр та...

— Эпĕ шăпах çавăн пирки калаçма килнĕччĕ Дашăпа...

— Çук вăл килте! — Даша амăшĕ алăка шанлаттарса хупса килне кĕрсе кайсан вĕрентекен те кăмăлсăрланса урама тухрĕ.

«Ăçта кайма пултарнă-ха Даша? — вĕлтлетсе иртрĕ ун пуçĕнче шухăш. — Телефонне те илмен. Хальхи вĕренекенсем унсăр çӳреме юратмастчĕç. Юрĕ, ыран та кун пур, калаçăпăр. Киле таврăнас».

Вĕрентекен тухса кайнине Даша амăшĕ чӳречерен сăнаса тăчĕ.

— Çӳреççĕ чăрмантарса! Ман Дашăна «иккĕ» лартса панă! Хăйсем пухусенче ун пек лайăх вĕренекенни çук тесе палкатчĕç, халĕ вара ме сана! «Иккĕ»!

Çав вăхăтра урам алăкне хыттăн шаккани Натали аппана шартах сиктерчĕ. Алăри чашăкĕ çĕре ӳксе ванса кайни Даша амăшне пушшех тарăхтарчĕ. «Мĕнле кун пулчĕ паян, пĕр канăç çук», — текелесе урама тухрĕ. Палламан каччă пăлханса унталла-кунталла утни Натали аппана кăштах лăплантарчĕ те, тĕлĕнтерчĕ те. Вăл пĕр вăхăт ют çынна сăнарĕ.

— Эсир... — каччă та пăлханчĕ. — Даша амăшĕ пулас.

— Çапла. Эс тата ăçтан пĕлетĕн ман хере?

— Эпĕ... Саша пулатăп. Тен, Даша каласа панă сире ман пирки...

— А-а! Эсĕ-и-ха вăл Саша текенни?! Ман хĕр пуçне пăтратаканни! Килте çук вăл! Мĕн кирлĕ сана унран?

— Эп... Дашăпа курса калаçасшăнччĕ çеç. Вăл киле чупсах кайнă терĕç те... Тен, килтех?

— Çук тенĕ сана и всọ!

— Эп, эппин, каям-ха. Ыран шкул хыççăн та курса калаçма пулать.

— Парап сана шкул хыҫҫӑн! — Даша амӑшӗ палламан каччӑ патне чышкисене чӑмӑртаса ҫывхарчӗ. — Ача-ха вӑл каччӑсемпе ҫӳреме! Малтан шкултан вӗренсе тухмалла!

— Калаҫнӑшӑн нимех те пулмӗ ӗнтӗ, — Саша пӗр ури ҫинчен тепри ҫине пускаласа Даша амӑшне куҫран пӑхрӗ.

— Пӗлеп сире мӗнле калаҫнине! Ӑс кӗрсе ҫитеймен хӗрсене суйса-улталаса ҫӳретӗр! Ан ҫыпӑҫ ман хӗрача ҫумне! Унсӑрӑн ашшӗ Мускавран таврӑнсан йӑлт каласа паратӑп! — Даша амӑшӗ каччӑ курӑнми пулсан ҫеҫ мӑкӑртаткаласа кил картине кӗчӗ.

— Анне, кампа вӑрҫӑнатӑн эс, пӳртренех илтӗнет, — хыпаланса тухакан ывӑлӗ ҫенӗкре амӑшне пырса тӑрӑнчӗ.

— Ҫӳреҫҫӗ ҫапкаланса! Даша патне хайхи леш... Саша текенни вӗҫтерсе килнӗ! Малтан Якимовни килсе кайрӗ. Ман хӗртен мӗн кирлӗ вӗсене пурне те? Эс тата ӑҫта васкан?! Ҫамкасӑр хӑвараттӑнччӗ вӗт!

— Анне, сан ялан вӑрҫасси. Саша мана питӗ кирлӗччӗ, чупам-ха.

— Паратӑп сана кирлӗ! Сан мӗн ӗҫ пур ют ҫынпа?! Ку мӗнле хут тата, аллунти? Мӗн пытаран манран? Пар-ха кунта ӑна!

— Анне, Даша каҫа хирӗҫ шыв хӗрринелле чупса кайнине куртӑм. Эпӗ ӑна шырама каятӑп. Тен, Сашӑна та пӗрле чӗнӗп. Вӗсене куҫа-куҫӑн калаҫтармалла... Унсӑрӑн... Ку... ахаль хут таткки ҫеҫ, сана кирлех мар вӑл.

— Пар-ха ӑна кунта! Хамах пӗлеп унпа мӗн тумаллине!..

Гриша амӑшӗ мӗн хуравласса кӗтсе тӑмарӗ: Саша кайнӑ еннелле вӗҫтерчӗ.

Ольга Якимовна юнашар ялта пурӑнать. Ҫулӗ Ҫавал шывӗ хӗррипе пулнӑран килне васкарах утма пуҫларӗ вӑл. Кам пӗлет: ҫурхи шыв ашкӑнчӑк. Сисеймӗн те — ҫыранран тухса кайса улӑх-ҫарана хӑй айне тӑвӗ, ҫула хуплӗ. Тӗттӗмленсе ҫитиччен килне ҫитме васкарӗ хӗрарӑм. Анчах нумай та каяймарӗ — ҫыран хӗрринче такам питӗ хурлӑхлӑн, хушӑран кӑшкӑра-кӑшкӑра йӗнине илтрӗ. Туйӑнмарӗ-ши тесе Ольга Якимовна унталла-кунталла пӑхка-

ларĕ, унтан чăнкă çыран хĕрринче кĕç-вĕç шыва сикме хатĕрленсе аллисене каркаланă хура ĕмĕлкене асăрхаса ун патнелле васкавлăн утрĕ.

— Эй! Сире мĕнпе те пулин пулăшма пултарайăп-ши эп?

Хирĕç сас паракан пулмарĕ. Çапах та ĕмĕлке хускалса ун еннелле çаврăнчĕ.

— Пулăшу кирлĕ мар-и тетĕп? — ун патнех çитсе тăрса тепĕр хутчен ыйтрĕ вĕрентекен.

— Ольга Якимовна? Эп... мана...

— Даша?! Эсĕ мĕн тума килнĕ кунта? Мĕн пулчĕ? — юратнă вĕренекенне палласа илсе тĕпчеме пуçларĕ вăл. — Аннӳ те çухатнă сана. Телефонна киле пăрахса хăварнă.

— Ольга Якимовна... Ман пурăнас килмест... Асанне патне каятăп. Вăл мана ăнланатчĕ...

— Ай-яй, ачам, мĕншĕн усал шухăша хăв çывăхна яратăн? Пурнăçа пĕрре кăна панă, ăна савăнăçлă та усăллă пурăнса ирттермелле. Капла хăтланса кама мĕн каласшăн эсĕ? Пĕрре хăв пурнăçна пурăнма пуçламасăрах тататăн, тепре аçупа аннӳне, шăллуна пысăк хуйхă кӳретĕн. Эсĕ вĕсене юрататăн, çапла вĕт?

— Ăхă...

— Вĕсем яланах савăнăçлă, телейлĕ пулччăр тесе шухăшлатăн, ку та тĕрĕс-и?

— Ăхă...

— Эсĕ мĕнле шухăшлатăн: хăвăн пурнăçна çапла сарăмсăр татсан вĕсем телейлĕ пулĕç-ши?

Даша пуçне чиксе шухăша кайса тăчĕ. Ольга Якимовна сумкине çĕр çине лартрĕ те майĕпен, урисене хуллен шутарса Даша патнелле çывхарчĕ.

—Даша, мĕншĕн чĕнместĕн? Тин çеç асаннӳне пытартăр. Эпĕ каярах юлса çитрĕм те аçу еплерех хурланса йĕнине асăрхарăм. Эсĕ çут тĕнчерен çапла уйрăлса кайни ăна çапсах хуçĕ тесе шухăшламастăн-и? Аннӳпе шăллу та сана питĕ юратаççĕ.

— Анне мана юратмасть! Яланах ятлать. Кирек мĕн тусан та юраймастăн ăна! Вĕсем аттепе иккĕшĕ Гришăна

çeç юратаççĕ! Ман тухтăр пулас килмест! Юнран хăратăп эпĕ!

— Даша, професси суйласа илесси — санăн ĕç. Кун пирки кайран аçу-аннŭпе калаçăпăр.

— Эпĕ экзамен та тытаймарăм! Намăс! Манран пĕтĕм шкул кулĕ малашне! Уйрăмах Ритăпа Дина савăнĕç ĕнтĕ! — вĕрентекенĕ хăй патнелле çывхарса пынине курсан Даша пĕр утăм малалла турĕ. — Ман пурăнас килмест! Асанне-е-е...

— Даша, вилме ĕлкĕрĕн-ха, ан васка, атя пуплер. Эсĕ калаç, Даша, калаç. Ăшра мĕн пуррине, чĕрŭне мĕн ыраттарнине йăлт çиеле кăлар.

— Манран Рита пĕтĕм шкул ачи умĕнче тăрăхлать, уявра та намăс кăтартрĕ. Эпĕ нимĕнле усал ĕç те туман. Сашăна килĕштернине пĕлсе тăрсах мана ун умĕнче намăс кăтартрĕ.

— Саша кам вăл, Даша? Санăн тусу-и? Эпĕ паллатăп-и ăна?

— Эпĕ ăна... эп ăна.... — хĕр чыхăнса кайса ŭсĕрме пуçланипе усă курса Ольга Якимовна хăвăрттăн утса пырса Даша патне çитрĕ, ăна ыталаса илсе хăй çумне чăмăртарĕ.

— Ай, айван хĕр пĕрчи, мĕн хăтланатăн-ха эсĕ? Пурнăçран таратăн вĕт. Турра хирĕç каятăн. Сана вăл пурнăçа савăнăçлă ирттерме панă. Эсĕ вара ăна татасшăн.

— Ольга Якимовна... Эп никама та кирлĕ мар...

— Епле кирлĕ мар, хĕрĕм? Эсĕ аçу-аннŭне, шăллуна, юлташусене кирлĕ. Эпир те, учительсем, эсĕ вĕренсе тухсан çĕршыва кирлĕ çын пуласса шансах тăратпăр. Ку сăмахсемшĕн асаннŭ те сана мухтаман пулĕччĕ. Вăл вĕт эсĕ ăслă хĕр пулнине ĕненсех тăнă, юратнă сана. Тен, шăпах вăл çŭлте тăрăшнипе эпĕ паян сана çăлма пултартăм.

— Саша Рита патне çŭреме пуçлану-ă-ă... Анне ăнланмасть мана. Саша пирки пĕлсен чĕн йĕвенпе хĕнерĕ. Эпĕ тек пĕчĕк ача мар ĕнтĕ. Манăн хамăн тĕллевсем, шухăшсем, яваплăх пур...

— Ку питĕ хаклă енсем, Даша. Эс çакна хăв тĕллĕн ăнланса илнĕшĕн питĕ савăнатăп. Анчах çакна ăнлан, — хĕрĕн куçĕсене хуплануă сарă çŭç пĕрчисене аяккалла сирчĕ

вĕрентекен. — Аннесем ачи-пăчине нихăçан та усал сунмаççĕ. Вĕсем сирĕн пурнăçшăн, пуласлăхшăн яваплă. Сире тĕрĕс çулпа уттарасшăн, йăнăшсенчен упрасшăн. Тĕрĕсех калатăн: ӳссе çитĕннĕ хĕр эсĕ. Анчах атте-аннешĕн эпир утмăлта та — вĕсен ачисем. Çавăнпа та ан кӳрен аннӳне. Ăшшăн кулса пăх та уççăн калаç. Ăшра мĕн пуррине йăлт каласа пар.

— Итлемест вăл мана — кăшкăрса тăкать. Эпĕ унпа калаçма пултараймастăп.

— Эсĕ вăл лăпкă чухне пуçар сăмахна. Эпĕ те амăшĕ. Çулсем малаллах шăваççĕ. Ывăнатпăр та. Аннӳ сана итлессипе-итлемесси йăлт хăвăнтан килет. Ху мĕнле калаçассине, ун чĕри патне çул мĕнле тупассине эсĕ çеç татса пама пултаратăн. Пурнăçу йăлт санран килет. Эсĕ мĕнле шухăшлатăн — çавăн пек пулĕ. Пирĕн шухăшсем пурнăçа кĕреççех.

Даша инçете пăхса шухăша кайрĕ. Унтан пĕрре капланса, пĕтĕрĕнсе-явăнса юхакан Çавал шывĕ енне, тепре ял енне пăхса илчĕ те Ольга Якимовнăна ыталаса илсе тепĕр хутчен ĕсĕклеме пуçларĕ.

— Атя, киле таврăнар. Сана ăсатсах ярам, — иккĕшĕ пĕр-пĕрин çумне тĕршĕнсе ял еннелле утма пуçларĕç вĕрентекенпе вĕренекен. — Чим-ха, темĕнле ушкăн кунталла çывхарать. Ăçта кайма тухнă-ши?

Даша та пуçне çĕклерĕ, çывхарса килекен çынсене тĕсесе сăнарĕ. Акă умра пыракана Кольăпа Герăн сăнĕсем курăнса кайрĕç... Темĕн йăтнă пулас: çурăмĕсем пĕкĕрĕлнĕ. Вĕсем хыççăн шавласа-кĕрлесе пыракансене те сассисенчен палласа илчĕç.

— Вăт телей, — вунпĕрмĕш класра вĕренекенсене хирĕç утрĕ вĕрентекен. — Пĕтĕм класс тенĕ пек пĕрле пуçтарăннă. Ман шăпах сирĕнпе калаçмалли пурччĕ.

— Ольга Якимовна... Тархасшăн, мана ан сутăр. Намăс...

— Эпĕ ăнланатăп. Ман пирки ан иккĕлен. Паянхи каç çинчен иксĕмĕр çеç пĕлĕпĕр. Анчах та эсĕ урăх нихăçан та ун пек хăтланмастăп тесе тупа ту.

— Сăмах паратăп.

— Ольга Якимовна? Эсир кунта мĕнле лекнĕ? Эпир Дашăна шыраса хăшкăлтăмăр. Ыранхи пуху умĕн пуçтарăнса калаçасшăнччĕ. Даша шыв хĕррине аннă терĕç те, эпир те пăр кайнине курма анас терĕмĕр. Даша, мĕн пулнă сана, сиксе чĕтретĕн? — Коля хăйĕн пиншакне хывса кӳршин хулпуççийĕ çине ерипен хучĕ.

— Эпир... Эп...

— Каçа юлтăм та, Даша мана кăштах ăсатас терĕ, — хĕрача хумханнипе нимĕн калайманнине курса уншăн хуравларĕ Ольга Якимовна.

— Ачасем! Пăхăр-ха! Уйăх çутинче юхан шыв епле йăлтăртатать! Анатран юхса анакан пăр катăкĕсем карапсемпе пĕрех! — тантăшне асăрхаса ун çумне пырса тăчĕ Вера.

— Сиссе те ĕлкĕреймĕпĕр — çуркунне шăнкăртатса юхса иртĕ, — класс ертӳçи те ачасем умне пырса тăрса тухăçалла тинкерчĕ. — Унтан çулла çитĕ. Çавăн пекех вăхăт малалла шăвать. Сирĕн вара кăçал экзаменсем. Эсир ăна пурте ăнăçлă тытасса шансах тăратăп эпĕ.

Çав вăхăтра вĕренекенсем пурте Даша еннелле çаврăннине асăрхаса Ольга Якимовна хĕр патне утса пырса куçран тинкерчĕ.

— Санăн та пурте йĕркеллĕ пулать, Даша. Эпир пурте хамăр йăнăшсенчен вĕренсе пыратпăр. Ĕçлемен, нимĕн туман çын çеç йăнăшмасть. Класс пухăвĕнче сирĕнпе эпĕ юлташлăх пирки калаçасшăнччĕ. «Кам сирĕншĕн чăн-чăн юлташ» темăпа ирттересшĕн ăна. Мĕнле, йышăнатăр-и ман сĕнĕве? — вĕренекенсене пурне те куçĕсенчен тинкерсе тухрĕ асли.

— Килĕшетпĕр!

— Рита, эсĕ мĕнле шухăшлатăн? — ушкăнран аяккарах тăракан хĕре асăрхаса ыйтрĕ Ольга Якимовна.

— Эпĕ... эпĕ... — Унтан Даша енне пуçне сĕлтсе хыттăн ыйтрĕ Рита: — Мĕншĕн вăл вĕреннипе, нумай пĕлнипе хăйне мăнна хурать?

— Атьăр, сӳтсе явар. Сан шутупа, Даша хăйне мăнна

хуни ун хăш ĕçĕсенчен палăрчĕ? — Рита патне çывăхарах пырса тăрса куçран пăхрĕ вĕрентекен.

— Вăл... пуçне каçăртса çӳрет!

— Даша-и? — илтĕнчĕ çав вăхăтра ушкăнран. — Урок-сем пăхса çыртарма пăрахнăшăн кӳреннĕ вăл ăна.

— Эпĕ урока пăхтарса çыртарни ăна сиен кӳни тесе шухăшлатăп, — куççульне ачасем курасран вăрттăн шăлса илсе хуллен каларĕ Даша. — Рита хăй пуçне пачах та ĕçлет-тересшĕн мар. Ăнлантарма пултаратăп терĕм те — мана кӳренчĕ.

— Урăх кам мĕнле шухăшлать? — класс енне çаврăнса ыйтрĕ Ольга Якимовна.

— Эпĕ те Даша пекех шухăшлатăп, — ушкăн умне тух-са тăчĕ Гера. — Шкулта вĕреннĕ чухне пăхса çырса илме, лайăх паллăсем илме пулĕ-ха. Анчах пирĕн малалла вĕренмелле. Вĕренсе тухсан ĕçлемелле. Рита, эсĕ ун чухне камран çырса илес тетĕн?

— Эпĕ вырăс чĕлхипе ирттернĕ экзамен пирки те ка-ласшăн, — Дина сасси хыçалта ерипен илтĕннĕрен ушкăн икĕ енне уйрăлчĕ.

— Дина! — хыттăн пӳлсе чарчĕ ăна Рита.

— Кала, Дина, кала! Мĕн вăтанса тăратăн! — хĕрачана хавхалантаракан сасăсем унтан та кунтан илтĕнчĕç.

— Калатăп та... Эпир экзаменра телефонпа усă куртă-мăр...

— Вăт намăссăрсем! — шавласа кайрĕ ушкăн.

— Çавăнпа вĕсен «пиллĕк»!

— Ыттисем вĕреннĕ, тăрăшнă вăхăтра пасар тăрăх йăрк-каса çӳрерĕç!

— Экзамена кĕсйисене тĕрĕслесе кĕртмелле вĕсене!

Рита пуçне чиксе шарламасăр тăчĕ. Çакна асăрхаса Ко-ля ушкăн умне тухса тăчĕ.

— Юлташсем! Капла пĕр-пĕрне тиркесе çапса хуçнипе эпир малалла каяймăпăр. Пирĕн тĕллев — кама та пулин путарасси мар, ăна пулăшасси, йăнăш тăвасран асăрхасси. Эпир кĕçех шкулпа сывпуллашăпăр. Пирĕн умра — çĕнĕ, эпир пĕлмен, çул. Вăл ăçта илсе çитересси, мĕн кӳресси

йалт хамăртан килет. Çавăнпа та эпĕ те Ольга Якимовнăпа килĕшетĕп: пухăва чăн-чăн экзаменсем пуçланиччен ирттермелле. Рита, эсĕ паян: «Ыттисене улталарăм, Дашăна намăс кăтартрăм, ман «питĕ лайăх» паллă», — тесе шухăшлатăн пулĕ. Анчах эсĕ чи малтан хăвна улталарăн. Çакăн пек хăтланнипе сан пуçунта пĕлӳ çуралмарĕ. Даша аван вĕренни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Çакна учительсем те пĕлеççĕ. Çавăнпа вăл экзаменсене ăнаçлă тытса тухса малалла вĕренесси пирки никам та иккĕленмест.

— Тĕрĕс, Коля!

—Даша, мĕншĕн нимĕн те чĕнместĕн? Ыйтусене мĕншĕн хуравламанни пирки кала! — илтĕнчĕ ушкăнран.

Даша пуçне çĕклесе ачасене кашнине куçран тинкерчĕ. Çав вăхăтра ял енчен шавласа килекен сасăсене илтсе пурте хыçалалла çаврăнса пăхрĕç.

— Анне... Гриша... — теме çеç пултарчĕ Даша хуллен.

—Ай-вай-вай, хĕрĕм, Гришăран туртса илнĕ хута вуланă хыççăн ухмаха тухаттăм вĕт! Ăçтан пырса кĕчĕ сан пуçна усал шухăш? Аçу патне те шăнкăравларăм. Çывăх вăхăтра килекен пуйăспа ларса тухатăп терĕ. Ах, ачам, чĕресĕр хăвараттăн вĕт... — Натали аппа Дашăна пуçран ачашласа ыталаса илчĕ, хай çумне пăчăртарĕ. — Пире тăлăха хăварасшăн-и эс?

— Анне-е... Каçар мана...

—Эсĕ хăв мана каçар. Ара, журналистсем те кирлĕ, вĕренех. Çын сăмахне ĕнентĕм. Ман санран лайăхрах ыйтса пĕлмеллеччĕ те çав.

— Лайăх хĕр çитĕнтернĕ эсир, Наталья Петровна. Дашăран чăн-чăн журналист пулатех. Хăюллă хĕр.

—Даша... — Гриша та амăшĕ хыçĕнчен тухса аппăшне шăппăн чĕнчĕ. — Аппа тес-и сана çакăн хыççăн? Ху мана сăмах панине астăватăн-и? Эсĕ кирек мĕн пулсан та мана ăнланма, пулăшма шантарса тупа турăн.

— Манман эпĕ хам сăмаха, шăллăм. Каçар эсĕ мана, юрĕ-и? Урăх ун пек шухăш тытмăп тесе шантарса калатăп.

— Атя ача чухнехи пек чышкă тытар, эппин, — Гриша чышкине чăмăртаса Даша еннелле тăсрĕ.

— Шантарсах калатăп, шăллăм.

— Сана Саша клуб умĕнче кĕтсе тăрать.

— Саша? Вăл... Ритăпа... Ман пирки те каларăн-и ăна?

— Эс мĕн? Ача мар вĕт эп текех. Эпĕ эс çырнă хута та аннене кăтартас теменччĕ, алăран туртсах илчĕ. Саша Ритăпа ахаль çеç калаçнă. Сана кĕтсе илетĕп терĕ. Эпĕ ăна эс шыв хĕррине япаласем чӳхеме аннă терĕм. Эпĕ каялла вĕçтертĕм, кĕç телевизорпа футбол вăййи пуçланать. Çула май Сашăна эс часах çитесси пирки пĕлтерĕп.

— Ачасем, сивĕте пуçларĕ, килсене саланар пулĕ, ыттине пухура сӳтсе явăпăр, — Ольга Якимовна сивĕпе чĕтренсе илчĕ те ачасемпе сывпуллашса ялĕ еннелле тинкерчĕ.

— Ольга Якимовна, тăхтăр, эпир сире пĕтĕм класпах леçсе ярăпăр, — шавлă ушкăн пĕр-пĕрне тĕрткелесе вĕрентекен тавра пуçтарăнчĕ.

Ольга Якимовна кулса илчĕ.

— Хисеплĕ ачасем, паянхи куна пурте астуса юлăр. Пĕр-пĕрне ăнланса, хисеплесе пурăнни, ырă ĕçсем туни çеç çынна хавхалантарса пырса çӳлелле çĕклет, вăй-хал кӳрет. Тата çакна ăнланăр: çынна пылчăкпа пеме пулĕ-ха, анчах ăна персе çитерейместен те пултаратăр. Сирĕн аллăрта вара пылчăк йĕрĕ юлатех.

Пурте ушкăнран аякра тăракан Рита еннелле çаврăнчĕç. Хĕр пуçне чиксе хуллен ĕсĕкленине асăрхарĕç.

— Эсĕ йĕни хăв йăнăшна ăнланса илнине пĕлтерет, Рита, атя эсĕ те пĕрле, — терĕ вĕрентекен, унтан савăнăçлă кăмăлпа туллин сывласа илчĕ те малалла калаçрĕ. — Пурнăçра такам та йăнăшма пултарать. Чи кирли те, чи пахи — ăна хăв туйса-ăнланса илсе тӳрлетни. Кĕçех экзаменсем пуçланĕç. Унта никамăн та телефон пулмĕ. Сире видеокамерăсемпе курса тăрĕç. Çавăнпа сирĕн пĕр-пĕриншĕн тăмалла, пулăшмалла. Халĕ кайрăмăр.

Вĕрентекенпе ачасене курăнми пуличченех ăсатрĕç Дашăпа амăшĕ. Хыçалта пуçне чиксе пыракан Ритăна Коля

кĕтсе илчĕ те, вĕсем алла-аллăн тытăнса ушкăн хыççăн чупрĕç.

— Эх, çамрăклăх... Пиреччĕ вĕсен çулĕ... — Натали аппа ассăн сывласа хĕрне пырса çупăрларĕ.

— Эпĕ килĕшместĕп санпа, анне. Вăхăт айăплă мар тенĕччĕ мана пĕррехинче асанне. Ăна эпир, çынсем, калăплатпăр. Кашни тапхăрăн хăйĕн çул-йĕрĕ: япăххи те, лайăххи те пур. Пурнăç вăл — ула-чăла. Чи пахи — сан çумăнта сана ăнланакан, чĕререн хисеплекен çын пурри. Çын вĕт вăл хай йăнăшсем туса вĕренсе пырать. Пирĕн йăнăш тепĕр çыншăн ăс пухмалли тĕслĕх мар. Чăрмантарар мар вĕсене, йăнăшчăр, шухăшлаччăр, пĕтĕмлетӳсем туччăр. Сăмахăн пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк: вăл çынна лапчăтма та, çӳле çĕклеме те пултарать. Вăт çавăн пек каланăччĕ мана асанне.

— Ăслăччĕ çав асаннӳ. Шел, кăштах пурăнмаллаччĕ те...

— Анне.. Мана... Эп... — ял еннелле пăхса пуçне чикрĕ Даша.

— Ара, чуптарах, кĕтсе те ывăнчĕ пулĕ. Кĕпе те парнелерĕ те — япăх мар пулĕ каччи. Журналистне пулас килсен вĕренех, урăх чармăп. Аçу та кĕçех килсе çитĕ, эпĕ те килелле утам. Анчах тăнна тытса çӳре. Халиччен ялта ят яманччĕ.

— Пĕлетĕп, анне. Эпĕ нумай çӳремĕп.

— Э-эх, ача-пăчана вăрçнипе кăна пулăшаймăн пулĕ çав. Ăнланма та пĕлмелле. Утчăр-и хăйсен çулĕпе. Пирĕн, ваттисен, пурнăçĕпе пурăнаймĕç ĕнтĕ...

Даша, çурхи çил хирĕç касса вĕрнине пăхмасăрах, ял еннелле чупрĕ.




# Чечек çыххи

Калав

Амăшĕ çурăмран пырса тĕртсен те Юркка вырăн çинчен тăма васкамарĕ-ха. Пӳлĕм алăкĕ шанлатса хупăнсанах пуç çийĕн утиялпа витĕнсе кăмака енне çаврăнса выртрĕ.

— Кĕнекесене вырăнне пуçтарса хумалла тесе миçе хутчен каламан пулĕ çав чĕмере ачине, çук вĕт, итлемест, хăйĕннех тăвать! — пысăк пӳлĕмре амăшĕ ятлаçни Юркка хăлхине те аванах кĕчĕ. — Ашшĕ! — Акă ăна та ярса илчĕ иккен амăшĕ. — Эсĕ те пулин тăна кĕрт-ха ывăлна, мана итлеми пулчĕ. Кунĕн-çĕрĕн юрласа çеç çӳрет. Кама кирлĕ ун юррисем? Кĕнеке вуласчĕ хуть. Ĕнер каллех Лена инке пахчине кĕрсе тустарса тухнă. Пан улмийĕ килте те пур. Мĕн тумалла ку ачапа, ашшĕ?

— Мĕн кĕрлетĕн-ха ирех? Тăрать те пуçтарать, — ашшĕ ĕçе кайма хатĕрленет пулас, çекĕлте çакăнса тăракан курткки хытах чаштăртатрĕ. — Шкула каяс умĕн хăех пуçтара-

канччĕ, ахалех ятлатăн ывăлă. Ĕнер те кĕнекеччĕ аллинче. Вĕреннĕшĕн савăнас чухне урама илтĕнмелле шăв-шав çĕклен.

— Мĕн вĕренни унта, пăх-ха эс, йăлт артистсем пирки çырнă журналсемпе кĕнекесем кунта!

— Пар-ха, — ашшĕ таплаттарса утса сĕтел патнелле пычĕ. — Чăн та, вăт, мур илесшĕ ачи, кăтартап эп ăна артист. Юркка! — ашшĕ ывăлĕ пĕркеннĕ утияла сирсе вырăн вĕçне кайса хучĕ, — тăр теççĕ сана! Мĕн, илтмене персе выртан?!

— Иртерех-ха тăма, — Юркка куçне сăтăркаласа тăрса ларчĕ. — Паян пĕрремĕш урок физкультура, Владимир Васильевич Вăрнара каймалла терĕ, урок пулмасть.

— Эс аçупа аннӳне суйма камран вĕреннĕ? — тарăхма пуçларĕ ашшĕ.

— Эп никама та суймастăп, ĕненмесен çула май Клавдия Ивановнăран кĕрсе ыйт, вăл суйма памасть.

— Ыйтатăп та, сана пурпĕрех тăрă шыв çине кăларатăп! Аçуна суйма ан хăйнă пул, ачамккă!

— Ара, эпир вĕреннĕ вăхăтра пĕр учитель пулмасан тепринпе улăштаратчĕç. Тăр тенĕ сана. Юркка, ан тарăхтар ирех, манăн та ĕçе кайма вăхăт çитрĕ, — ашшĕ тухса кайсан амăшĕ ывăлне тата та хытăрах силлеме пуçларĕ.

— Анне, эп тĕрĕссине калатăп сире. Владимир Васильевич чăннипех те улттăмĕш класра вĕренекенсемпе Вăрнара ăмăртăва кайрĕ.

— Сана мĕншĕн нихăçан та ăмăртусене илсе каймаççĕ, э-э? Çынсен ачисем ача пек, ашшĕ-амăшне итлеççĕ, шкулта аван вĕренеççĕ. Мĕншĕн эс çавăн пек итлеми пултăн, Юркка? — ывăлĕ вырăнтан та тапранманнине кура амăшĕ йĕмех пуçларĕ. — Пăх-ха, дневникӳ хĕп-хĕрлĕ, çырла пек. «Митрофанов нимĕç чĕлхи учительницине урокра кӳрентернĕ». «Митрофанов çĕнĕ глобус ӳкерсе çĕмĕрнĕ». «Митрофанов доска умне тухсан указкăна çурмалла хуçнă» ...Ара, ачам, каплах пулсан шкултан кăларса яраççĕ вĕт, мĕншĕн ашкăнма чарăнмастăн?

— Юрĕ-çке, тăратăп. Каллех коридорта ачасене кĕтсе

лармалла пулать ёнтĕ. Указкине эпĕ мар, Сидоров хуçрĕ. Ашшĕне шкула чĕнтересрен хăраса айăпа хам çине илме ыйтрĕ.

— Эс ыттисен айăпне мĕншĕн йышăнса ларан? Çынсен ачисем мĕнле ăслă. Айăплă пулсан та айăпсăр юлаççĕ. Эсĕ пур... Ма çавăн пек пултăн-ши эс: ни аçуна, ни мана хывмарăн.

— Юрĕ-çке, анне, ку юлашки пулĕ, — Юркка кĕнекисене сумкине чикме пуçларĕ.

— Ав сĕтел çине кăлпассипе çăкăр хутăм, сумкуна чик, кун каçипе хырăму та выçĕ.

Амăшĕ ĕçе тухса кайсан Юркка сĕтел çинчи яшкана шĕрĕплеттерсе çирĕ те сумкине хулпуççи çине çакса кил хушшине тухрĕ. Унта ăна яланхи пекех Палкан кĕтсе тăрать иккен. Пĕчĕк хуçине куçран пăхса пуçне енчен енне пăрса хӳрине вылянтарчĕ, вăрăм чĕлхине кăларса урисемпе ташласа илчĕ.

— Юрĕ-çке, юрĕ, акă, ме, çи, тăрантар пĕчĕк хырăмна, — Юркка, никам та курмасть-ши тенĕ пек, йĕри-тавра пăхса илчĕ те сумкинчи кăлпассипе çăкăра йытă çурине пачĕ. — Эсĕ çеç мана ăнланатăн, çамрăк тус, анчах шел, калаçма пĕлместĕн. — Йытă çури тав тунăн хамлатса вĕрсе арçын ача тавра чупса çаврăнчĕ. — Эсĕ çисе те ятăн-им? Ну, каçар, урăх çук, каçчен кĕтме тивет. Халĕ ман шкула каймалла. Сывă юл, Палкан.

*Çакна хамах курса илтнĕ пек каласа кăтартрăм-ха. Анчах ăна эпĕ кайран çеç пĕлтĕм. Ĕç-пуç тĕрĕссипе мĕнлерех пулса иртнине аса илсе сăмаха йĕркипех пуçлар-ха.*

Чӳречерен кăвак шуçăм çути сăрхăнса кĕрсенех эпĕ ура çине сиксе тăтăм та кӳршĕре пурăнакан Лена аппа килĕ еннелле тинкертĕм. Вăл та вăраннă иккен: витре йăтса витене кĕчĕ. Лена аппа сакăр вуннăран иртнĕ ёнтĕ, çаплах выльăх-чĕрлĕх тытать. Çынна вăрттăн сăнама аван мар та, вырăн çинчен тăрсан пуç хăех ун чӳречи еннелле пăрăнать. Чăн-чăн будильник маншăн кӳршĕн чӳречи: кашни кунах шăп улттă çурăра çутăлса каять. Эппин, ман та тăма вăхăт.

Шкула кая юлса ҫитме юрамасть. Эпӗ, университетран тин ҫеҫ вӗренсе тухнӑ ҫамрӑк учитель, паян хамӑн пурнӑҫри пӗрремӗш урока каятӑп. Чирлесе выртнине пула вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ тӗле килейменни те чӗрене канӑҫ памасть. Кая юлтӑмӑр программӑран, хӑваласа ҫитмелле пулать. Ӗнертенпе канӑҫ паман шухӑш паян пушшех те пуҫа минретрӗ. Ара, ачасем хама мӗнле кӗтсе илесси хӑрататать. Шкул директорӗ Олег Владимирович лӑплантарни те пулӑшмарӗ. Анчах тем пек хӑрасан та урока каймаллах. Ҫӗнӗ костюмпа ҫӗнӗ туфли тӑхӑнтӑм та сумкӑна ҫӗклесе тухса утрӑм. Шкула васкакан ачасем сывлӑх сунса иртни кӑштах лӑплантарчӗ. Илтнӗ ӗнтӗ вӗсем шкула ҫӗнӗ учительница килнине: ҫаврӑна-ҫаврӑна пӑхаҫҫӗ. Эпӗ, пӗрремӗш класа каякан ача пек, именсе пуҫа таятӑп.

Акӑ линейка хыҫҫӑн урока ларма йыхӑрса шӑнкӑрав вӑрӑммӑн янӑраса кайрӗ. Эп чӗтрекен аласемпе ҫиччӗмӗш класс журналне ҫӗклесе тӑваттӑмӗш кабинета ҫитсе кӗтӗм. Сывлӑх сунма тесе ҫӑвара уҫрӑм ҫеҫ... класра пӗр ача та ҫук. «Ӑҫта кайма пултарнӑ-ха кусем?» — вӗҫсе иртрӗ пуҫра шухӑш. Тӳрех тавҫӑрса илме те ҫук. Унччен те пулмарӗ урайне темскер кӗмсӗрт! туса ӳкрӗ. Сас пулнӑ енне пуҫа чалӑштарсах тинкеретӗп. Сӗтел айӗнче сумка выртать иккен. Кӗҫех сумка хыҫӗнчен шурӑ туфли курӑнса кайрӗ. Мӗн япалине пӗлес тесе сӗтел айне тата та тинкеререх пӑхатӑп. Кашни сӗтел айӗнчех туфлисем иккен. Вӗсен хуҫисем ӑҫта пулнине тавҫӑрса илсе лӑпкӑн урока пуҫлатӑп.

— Эсир, ачасем, ман умӗн ӗҫленӗ учительница ҫуллахи каникулта вулама сӗннӗ кӗнекесене тытса та пӑхман пулас? Эпӗ сирӗнпе паян шӑп та лӑп килти вулав урокӗ ирттересшӗнччӗ. Юрӗ, ҫӗнӗ тема пуҫлӑпӑр, — тетӗп те ӑна доска ҫине ҫырса хунӑ хыҫҫӑн чӳрече умне тӑрса калаҫма тытӑнатӑп. Ҫав вӑхӑтрах ачасем хӑҫанччен сӗтел айӗнче кукленсе ларма пултарнипе кӑсӑкланса пӑха-пӑха илетӗп. Акӑ хыҫри сӗтел хушшинче иккӗн лараҫҫӗ те ӗнтӗ. Сылтӑм ретрисем те туха-туха кӗнекисемпе тетрачӗсене туртса кӑларчӗҫ. Пӗр вӑхӑт класра шав тӑчӗ. Эпӗ нимӗн чӗнмесӗр

ачасене куçран тинкеретĕп. Пурте вырнаçса пĕтсен класс журналне уçса вĕренекенсем умне пырса тăтăм.

— Халĕ ĕнтĕ паллашма та юрать, — тесе ачасен хушамачĕсене вулама пуçларăм.

Çакăн пек пуçланчĕ шкулти пĕрремĕш ĕç кунĕ. Савăнмалли те, пăшăрханмалли те чылай пулчĕ каярахпа.

Кĕçех Çĕнĕ çул уявĕ те çывхарса килчĕ. Пĕррехинче уроксем вĕçленнĕ хыççăн ачасен тетрачĕсене тĕрĕслеме ларнăччĕ çеç, шкулта урай çăвакан Лиза аппа чупса çитрĕ.

— Олеся Григорьевна, сана директор хăй патне чĕнет, питĕ кирлĕ терĕ, васкама хушрĕ.

Темĕн пулман-ши тесе Олег Владимирович патне чупнă пекех утрăм.

— Хăрушши нимех те пулман, Олеся Григорьевна, — директорăн сасси мана лăплантарчĕ. — Шел пулин те, Мария Павловна чирлесе ӳкнĕ, çавăнпа çиччĕмĕш класа вăхăтлăха сире шанса парас тетпĕр. Нимĕн те ан калăр, — эп хирĕçлеме пуçлассине сиссе Олег Владимирович пӳлĕмĕнче каллĕ-маллĕ утма пуçларĕ, — ыттисен пурин те хăйсен класĕсем пур. Ку çеç те мар-ха, — директор пĕр вăхăт мана куçран тинкерсе тăчĕ те малалла калаçрĕ. — Мария Ивановна класс тулашĕнчи ĕçсемшĕн те явапла. Çавăнпа çак лава та сирĕнех туртма тивет. Эсир çамрăк, сире ачасем юратаççĕ, учительсем те хирĕç мар. Олеся Григорьевна, Çĕнĕ çул уявне хатĕрленме те сирех шанса парасшăн.

— Юрĕ, вăхăтлăха пулсан килĕшетĕп, — терĕм те хамăн класа васкарăм.

Аслисем хушнине пурнăçламаллах, нимĕн те тăваймăн.

* * *

Юратнă журналĕсене уçкаласа ларса Юркка паян урока кая юлса çитрĕ.

— Митрофанов, эсĕ мĕншĕн класс алăкне шаккамасăр уçса кĕретĕн, тух каялла! — доска çине тăрăшсах çыракан Нина Ивановна Юркка çине тарăхса пăхрĕ.

— Мĕншĕн яланах «Митрофанов... Митрофанов...»

Пилĕк минут кая юлса килме те юрамасть-им? — кăмăлсăр пулчĕ пулин те арçын ача тухрĕ.

— Юрамасть, Митрофанов, урока вăхăтра çитмелле, — арçын ача хăйĕн вырăнне вырнаçса ларсан та лăпланаймарĕ вырăс чĕлхи учителĕ. — Эсĕ манăн тата юлташусен пилĕк минутне «çисе» ятăн. Эсĕ çилхăван тесе ыттисен те вĕренмелле мар-им, Митрофанов? Эс пурпĕрех тракторист çеç пулатăн.

— Пулин, ман атте те тракторист, эпĕ те тракторист пулатăп, кирлĕ професси, Нина Ивановна. Тата эпĕ вăхăт çиместĕп, пирĕн килте унсăрăн та çимелли пур.

— Митрофанов, кĕнекӳсене кăлар та шăпланса лар, санпа калаçнин усси пурпĕрех пулас çук!

Юркка сĕтел хушшине ларса хут çине ӳкерме пикенчĕ. Унтан сумкинчен апат кăларчĕ те çиме пуçларĕ. Кĕçех класс шавлăн кулса ячĕ. Нина Ивановна вĕренекенсем мĕншĕн кулнине ăнлансан тарăхнипе кăвакарса кайрĕ.

— Ну лекрĕн, Митрофанов, — илтĕнчĕ сасă ачасем хушшинчен.

— Митрофанов, халех чиксе хур апат юлашкисене!

Юркка пусне аяккалла пăрчĕ те çăвар туллин чăмларĕ.

— Митрофанов! Намăс та мар-и сана, эс мĕншĕн аслисем каланине итлеместĕн?!

— Нина Ивановна, эсир тесе ман выçса вилес-им? — Юркка вырăнтан хускалмасăр çăкăра татах пысăккăн çыртса илчĕ.

Класра каллех хыттăн кулса ячĕç.

— Митрофанов! Чарăн теççĕ сана! Унсăрăн... Унсăрăн...

— Мĕн, унсăрăн, Нина Ивановна? Аттене чĕнсе илетĕр-и? Ун шкула килме вăхăт çук, ăна кӳршĕ яла ĕçлеме янă.

Нина Ивановна алăка шанлаттарса хупса кабинетран тухса кайрĕ. Кĕç вăл Олег Владимировичпа пĕрле килсе кĕчĕ.

— Митрофанов, эс мĕншĕн урок вăхăтĕнче апат çиетĕн? Хăвна та, юлташусене те хисеплеменни пулать ку. Хăвăрт чиксе хур та кĕнекӳсене кăлар, — директорăн лăпкă сасси Юрккана аванмарлантарчĕ. Вăл кĕнекине уçрĕ.

* * *

— Олеся Григорьевна, уроксем хыççăн ман пата кĕрĕрха, — директорăн çирĕп сасси мана сисчĕвлентерчĕ. — Мария Павловна кайнăранпа çиччĕмĕш класра дисциплина чакнă. Митрофанов каллех уроксенче ашкăнса ларать, учитель каланине итлемест, ыттисене вĕренме чăрмантарать. Хăй пеккисем икĕ юлташ пур ун çак класра — Лаврентьевпа Иванов. Сидоровăн амăшĕ района пĕлӳ управленине кайса калассипе хăратать, ашкăнса ларса ман ачана вĕренме памаççĕ, шкулта дисциплина тăваймастăр тесе ятлаçать. Кун пек май килмест. Паян уроксем хыççăн хыттăнах калаçса илĕр.

— Юрĕ, — терĕм те шухăша путса çиччĕмĕш класа утрăм.

— Ачасем, капла юрамасть, — шăпăрт ларакансем енне пăхса лăпкăн каларăм эп класа кĕрсен. — Атьăр-ха Митрофановпа пурте пĕрле юлташла калаçса илер. Эсир шкула алхасма-ашкăнма мар, пĕлӳ илме килетĕр. Митрофанов, эсир те — Лаврентьевпа Иванов, капла хăтланса юлташăрсене чăрмантаратăр. Аçăрсемпе аннĕрсене те хĕрхенместĕр. Вĕсем сире лайăх та ăслă çын туса ӳстерессишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ, эсир вара... — каварçă арçын ачасене ертсе пыраканĕ Митрофанов пулнине пĕлсе ун енне куç айĕн тинкерсе пăхрăм.

Юркка чĕнмерĕ. Пуçне чикнĕ те тăрăшсах темĕн ӳкерет. Ыттисем те шăпăрт.

— Мĕн ӳкеретĕн-ха эс тăрăшсах, Митрофанов? Тен, пире те кăтартăн? — терĕм Юркка енне пăхса.

— Çын пуçĕсене ӳкерет вăл, Олеся Григорьевна, — терĕ юнашар ларакан Лаврентьев ура çине тăрса.

— Эсĕ хăв çын пуçĕ! Артистсем вĕсем! — хĕремесленсе кайнă Юркка юлташне хулĕнчен туртса вырăна лартрĕ.

— Пирĕн Юркка артист пуласшăн, ха-ха-ха, — класра пĕр харăс кулса янăран арçын ача хĕрелсе кайрĕ.

— Эх, эсир те çав, геометри, литература... Акă ăçта вăл чăн-чăн пурнăç, — Митрофанов алăри хутне ачасем енне çĕклерĕ те каялла вырăнне ларчĕ. — Çын пуçĕ... Сирĕншĕн

вĕсем — çын пуçĕсем, маншăн вара — чăн-чăн Стас Михайлов.

Арçын ача кам пирки каланине тӳрех тавçăрса илеймесĕр хут таткине алла тытрăм. Чăн та, Стас Михайлов юрăç иккен.

— Маттур, Юрий, — ачана пуçĕнчен шăлса мухтарăм. — Каснă-лартнă Михайлов. Эсĕ чăн-чăн художник иккен. Эпĕ вара Çĕнĕ çул ячĕпе хаçат кăларма çын шыратăп. Тен, ыран уроксем хыççăн юлатăн, Юрий? Киле пĕрле таврăннă пулăттăмăр, эпир санпа кӳршĕсем вĕт.

Арçын ача чĕнмерĕ.

— Мĕн шанмалли ăна, Олеся Григорьевна? Вăл каллех улталĕ, — илтĕнчĕ мана.

— Митрофанов вăл хăйне çеç юрататъ. Класри ачасене те яланах хĕнет! — тепри те чăтса тăраймарĕ.

— Ĕнер сумкăна çапса ӳкерчĕ! — кăшкăрчĕ виççĕмĕшĕ! — тарăхрĕ тахăшĕ.

— Пирĕн кушак çурине йывăç тăррине ывăтнă, атте аран антарчĕ!

Юркка сасăсем илтĕннĕ еннелле çаврăна-çаврăна пăхса хĕремесленсе кайрĕ.

— Юрий, куртăн-и, епле юлташ эсĕ? Кун пекех пулсан малашне санпа калаçакан та пулмĕ.

— Шкултан кăларса ямалла ăна! — терĕ тата тепри.

— Эпир тунă усал ĕçсем, ачасем, пурăна киле хамăр патах çаврăнса çитме пултараççĕ. Этем усал ĕçпе мар, кама та пулин ырă тунипе вăйланса пырать. Кур-ха, Юрий, класра эс кӳрентермен ача та çук иккен. Вĕсем — сан юлташусем. Эсĕ вара вĕсене хăвăнтан сивĕтнĕ. Чышкăпа çĕнтерме пулать, анчах санран вăйли те тупăнать. Эс ăсупа пурăнма тăрăш. Ăшри хаярлăха пусарма пĕлмелле. Унсăрăн вăл çиеле тухса этеме пачах пĕтерме, усал çулпа уттарма пултарать.

Ачасем пуçĕсене усса шăпăрт лараççĕ. Эпĕ те урăх каласса тăмарăм. Пурне те киле кайма хушса класран тухрăм.

Тепĕр кунне уроксем хыççăн Юркка мана кабинет умĕнче кĕтсе илчĕ.

— Ну, мĕнле, пуçлатпăр-и ӳкерме?

— Пуçлатпăр, Олеся Григорьевна, анчах эп художник мар, ахаль çеç ӳкеретĕп, — арçын ача ман умра ун-кун пускаласа тăчĕ.

— Пурпĕрех сан ӳкерчĕкӳсем лайăх, мана килĕшрĕç.

— Чăнах-и? — ачан куçĕсем савăнăçпа çиçсе ялкăшрĕç. — Анне вара вĕсене яланах çурса тăкать. Нина Ивановна та вăрçать.

— Урок вăхăтĕнче ӳкернĕшĕн çеç вăрçнă вăл сана. Малашне ун пек ан ту. Аннӳ те вĕренменшĕн тарăхать ĕнтĕ. Аван мар капла. Урокра вĕренӳ пирки çеç шухăшламалла. Хăвна килĕшекен ĕçпе пушă вăхăтра аппаланма пултаратăн. Нина Ивановна питĕ лайăх учительница. «Тăрăшсан питĕ аван вĕренме пултарать, анчах хаклă вăхăтне пустуй пакăлтатса иртерет», — терĕ сан пирки те.

— Чăнах-и? Мана вара ытларах Олег Владимировичăн физика урокĕсем тата рисованипе музыка килĕшеççĕ. — Стена хаçатне ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ май Юрккан кăмăлĕ уçăлчĕ. — Тен, тĕрĕс те калатăр. Аслисем каланине итлемеллех, — пăшăлтатрĕ вăл.

— Паллах итлемелле. Шкултан вĕренсе тухсан эсир хăвăра кирлĕ пек пурăнма тытăнатăр. Халĕ вара аçу-аннӳ сăмахне, учительсене итлемелле. Эсир кам пулма хатĕрленесси шкултанах пуçланать.

— Эпĕ тем пек шăпăрт ларасшăн, калаçмалли тупăнсах пырать.

— Юрий, курса тăратăп, эсĕ — ăслă ача. Çавăнпа улшăнасса шанатăп. Шкулта илнĕ пĕлӳ малашне питĕ кирлĕ пулĕ. Пĕчĕкренех пур енлĕн аталанма тăрăшмалла. Çавăн чухне ӳлĕм малалла вĕренме те, пурăнма та çăмăл пулĕ. Паянлăха çитĕ, ыран малалла ӳкерĕпĕр, халĕ киле кайма вăхăт. Ыранччен, — стена хаçатне чĕркесе хутăм та хваттере таврăнма хатĕрленсе урама тухрăм.

Митрофанов та кайман иккен: мана шкул умĕнче кĕтсе тăрать.

— Темскер каласшăнччĕ-и мана? — кăсăклантăм эпĕ.

— Олеся Григорьевна, эп сире киле çитиччен ăсатса

ярасшăн. Эсир Лена аппапа юнашар пурăнатăр. Ман çула май ун патне кĕрсе тухмалла. Çитменнине, урамра хуçасăр йытăсем нумайланчĕç, çыртма пултараççĕ. Мана вара вĕсем палласçĕ.

— Тавтапуç, Митрофанов, пĕрле кайăпăр. Лена аппа патĕнче мĕн ĕçĕ пур-ха сан?

— Намăс мана, Олеся Григорьевна. Эп ун пахчине кĕрсе пан улми вăрласа тухрăм, вăл вара мана ĕнер пан улми хăй çитерчĕ. Пахчине кам кĕнине пĕлмест пулас. Каçару ыйтас тетĕп.

— Тĕрĕс шухăш. Анчах Лена аппа килте çук, кÿршĕ яла тăванĕсем патне кайрĕ. Выльăх-чĕрлĕхне пăхма мана хушса хăварчĕ.

Юркка пĕр вăхăт шухăша кайса пуçне чиксе тăчĕ.

— Эпĕ сире пулăшăп, Олеся Григорьевна,— терĕ ача хавхаланса.

Акă сана япăх вĕренекен тата шкулта пурне те хăратса тăракан! Юркка хăй йăнăшне туйса тÿрлетме те пĕлет иккен. Класра уççăн калани ачашăн усăллă пулнăшăн савăнса эпĕ киле кĕтĕм. Пÿрте кĕрсен хăнăхнă йăлапа чÿречерен Лена аппан кил картине сăнарăм. Юркка чупсах выльăхсене апат парать иккен. Акă пÿртрен витре йăтса тухрĕ те витене хыпаланса кĕрсе кайрĕ. Эпĕ те урăх тÿссе тăраймарăм, тум улăштарса кÿрше каçрăм. Тулли сĕт витри йăтса пыракан Юркка мана курсан аванмарланса кайрĕ.

— Олеся Григорьевна... Эсир эп ĕне суни пирки шкулта, тархасшăн, никама та ан калăр, хĕрача тесе кулма пултараççĕ.

— Эсĕ хăв ыттисенчен кулнă пек-и? Ан пăшăрхан, каламăп. Анчах та ĕçленĕшĕн вăтанма кирлĕ мар. Ĕç алла çыпăçмасть тенĕ ваттисем. Хăй нимĕн тума пĕлмен çын çеç тепринчен кулма пултарĕ. Ĕçлекен, тăрăшакан, теприне ырă сунакан çын нихăçан та никамран та тăрăхламĕ. Ĕç мар, çын ĕçе илем кÿрет. Çитĕнсе çитнĕ арçынсем хушшинче те ĕне суса чапа тухакансем пур.

— Тен, тĕрĕсех калатăр...

— Эс çитĕнсен кам пуласшăн-ха, Юрий? — ачан кăмăлĕ улшăннине туйса татах калаçтартăм ăна.

— Кулмастăр-и, Олеся Григорьевна? — тăп чарăнса ман ума пырса тăчĕ Юркка.

Хама темĕнле разведкăра ĕçлекен çын пекех туйма пуçларăм. Ара, хăйĕн чĕри тĕпĕнчи вăрттăнлăхне пĕлтересшĕнçке ку мана.

— Çук паллах, — шантарсах тупа турăм арçын ачана.

— Эпĕ артист, юрăç, эппин, пуласшăн. «Юрăç професси мар, тăрантармасть, кун пирки манмалла», — тет анне. — Юркка ассăн сывласа пуçне чикрĕ.

— Юрăç професси те пур, Юрий, — ачана сцена çинче ялан курăнакан çынсем, вĕсен пултарулăхĕ пирки ăнлантарма пуçларăм. — Анчах эсĕ урăх професси суйласа илсен те юрлама пултаратăн. Юрăç професси çеç мар, Турă панă талант та. Халăх юратаканни пулма питĕ нумай вĕренмелле тата тимлемелле.

— Эп ĕçлеме хатĕр, Олеся Григорьевна, анчах хăшĕсем мана ăнланмаççĕ.

— Эсĕ вара вĕсене усал ĕçӳсемпе таварма шут тытрăн-и? Çакă сана япăх енчен кăтартса пĕр-пĕччен тăратса хăварма та пултаратчĕ. Юрăçа вара камсем кирлĕ?

— Куракансем тата итлекенсем.

— Тĕрĕс. Эпир вара санпа çапла тăвăпăр. Çĕнĕ çул касĕнче пĕчĕк концерт лартса парасшăн. Музыка учителĕпе ыранах калаçăп. Эс хăв юратнă юрра суйласа ил те хальтерех хатĕрленме пуçла.

— Тантăшсем манран кулмĕç-ши?

— Çук, Юрий, ĕçлекен, тăрăшакан çынран кулакан этем хăй кахал, вăй хума-ĕçлеме юратманскер, унран хăйĕнчен тăрăхламалла.

Арçын ачапа калаçнă хыççăн уншăн савăнса хамăн та кăмăл уçăлнине туйрăм. Хваттере кĕрсенех чӳречерен Лена аппа пӳрчĕ еннелле тинкертĕм. Юркка кил картинче ĕçлет пулас: сутă ялкăшать.

Тепĕр ирхине урока кайма та ĕлкĕрейменччĕ, мана шкул директорĕ хăйĕн кабинетне кĕме ыйтрĕ.

— Олеся Григорьевна, каллех сирĕнтен пулăшу ыйтма тивет, — директорăн сассинче пăлханни палăрнине туйрăм. — Людмила Сергеевнăн паян çуралнă кун. Парнине туяннă, анчах чечек çыххи илме маннă. Çапах та вăл пирĕн шкулта çирĕм çул ытла ĕçлет. Хисеплĕ çын. Чечек çыххисĕр аван мар пулĕ тетĕп.

— Олег Владимирович, манăн уроксем пур, каяймастăп, — тӳрре тухма аван мар та, ачасене те пăрахса хăвараймастăп вĕт. — Тен, вĕренекенсенчен хăшне те пулин хушăпăр.

— Вăрнара кайса килме вăхăт самай кирлĕ, учительсем вара пысăк тăхтавра пухăнасшăн. Сирĕн паллакан водительсем пур, тен, çула май леçсе те ярĕç.

— Ман паян тĕрĕслев ĕçĕ, ыран районти конкурса тăратмалла. Кирек мĕн калăр, Олег Владимирович, каяймастăп.

— Çиччĕмĕш классемпе калаçса пăхăр, эппин. Людмила Сергеевна вĕсен пĕрремĕш вĕрентекенĕ пулнă, — килĕшрĕ манпа директор. — Анчах шанчăкларах ачана чуптарăр.

Класа кĕрсен журналпа тетрадьсене сĕтел çине хутăм та лару-тăрăва ăнлантарса патăм.

— Çавăнпа ку ĕçе пурнăçлама шанчăклă ача кирлĕ терĕ директор та. Питĕ хăвăрт кайса килмелле. Кам каяс тет? — ыйтрăм класс çине пăхса.

Ачасем пуçĕсене чикрĕç. Алă çĕклекен пулмарĕ.

— Эпĕ каятăп! — кĕç шăплăха татрĕ уçă сасă.

Пурте сасă еннелле çаврăнчĕç. Класра кулă янăраса кайрĕ.

— Тупăннă шанчăкли... — пĕр харăс каларĕç темиçен.

— Укçипе пĕремĕк туянса çиет вăл, пĕремĕк юратать.

— Вăл физкультурăра та чи юлашкинчен чупса килет.

Класра каллех шавлăн кулни илтĕнчĕ.

Эпĕ ăнлантăм: çак ĕç Юрккашăн класс умĕнче хăйне тӳрре кăлармаллискер. «Е халĕ, е нихăçан та», — вĕçсе иртрĕ пуçра шухăш.

— Эпĕ ăна шанатăп, — терĕм лăпкăн. Ачасем шăп-

ланчĕç. Пурте мана куçран тинкерсе пăхаççĕ. — Кашни çын пурнăçра йăнăшма пултарать. Йăнăшни мар, ăна тӳрлетме тăрăшни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Тыт, Юрий, укçа, эпир сана шанатпăр. Мĕнле, ачасем, шанатпăр-и?

Класра шăна вĕçни илтĕнет тейĕн: ачасем пĕр-пĕрин çине куç айĕн пăхса Юрккана сăнаççĕ, вăл мĕн каласса кĕтеççĕ.

— Эпĕ питĕ хытă тăрăшăп, — йĕрес пек илтĕнчĕ Юрккан сасси.

— Санпа пĕрле Лаврентьевпа Иванов пырĕç, — лăпкăн малалла калаçрăм эпĕ. Ачасем пушшех те тĕлĕнсе мана куçран тинкерчĕç. — Вĕçтерĕр. Тĕрĕслев ĕçне сирĕнпе уроксем хыççăн юлса çырăпăр.

— Олеся Григорьевна, эпир туххăмра кайса килĕпĕр, пĕр ури кунта, тепри Вăрнарта пулĕ! — савăнса ура çине сиксе тăнă Лаврентьев хыпаланса тумланма пуçларĕ. — Юркка! Сашук! Хăвăрт ман хыççăн!

Ачасем вĕçнĕ пекех класран вирхĕнсе тухса кайрĕç. Эпĕ те урока пуçларăм.

Виççĕмĕш урок та вĕçленчĕ, тăхтав пулнине систерсе шăнкăрав та вăрăммăн янăраса кайрĕ — чечек илме янă ачасем курăнмарĕç. Эпĕ чӳречерен куçăма илместĕп. Вăрнар çулĕ çинче хамăн вĕренекенсем курăнса каясса кĕтетĕп. Кĕç кабинета Олег Владимирович васкаса килсе кĕчĕ.

— Олеся Григорьевна, чечек çыххи ăçта? Пуçтарăнма пуçларĕç Людмила Сергеевнăна саламлас текенсем. Васкамалла.

Эпĕ директор çине пăхма хăяймасăр пуçа чиксе ларатăп.

— Халĕ те килеймерĕç-и? Камсене ятăр? — пушă пӳлĕмре аслати авăтнăнах илтĕнчĕ пуçлăх сасси.

— Митрофановпа юлташĕсем кайрĕç... — хам сасса та аран илтрĕм.

— Камсем?! Эпĕ сире шантăм! Шанчăклисене ярăр терĕм! Эсир вара?! Тупнă камсене ямаллине... Митрофанов урокран ирĕке тухнăшăн савăнса килне тарчĕ пулĕха, ыттисем — ун хыççăн ĕнтĕ. Хăвăр та пырса каламастăр нимĕн те!

Директора хуравлама сăмах тупаймасăр асаплантăм. Айăплă, чăннипех те айăплă эп учительсем умĕнче. Пурне те лайăх мар лару-тăрăва кĕртсе ӳкертĕм пулать-и-ха? Анчах учитель чĕри Митрофановпа юлташĕсем директор каланă пек тăвасса ниепле те ĕненесшĕн мар. Хăй вăхăтне шеллемесĕр ватă çынна пулăшакан ача пĕрремĕш учителĕ валли чечек туянмасăр тăма пултараймастех. Директор та акă ман енне çилĕллĕн алă сулчĕ те кабинетран тухса кайма васкарĕ. Çав вăхăтра алăк уçăлса кайрĕ те, тарланипе йĕпйĕпе пулнă вĕренекенсем класа хашкаса чупса кĕчĕç, чечек çыххине ман сĕтел çине типтерлĕн хучĕç.

— Олеся Григорьевна, каçарăр, хитре чечек шыраса Вăрнарĕпе чупса çаврăнтăмăр, кунтан илемлĕреххине тупаймарăмăр, — Юрккан хыпăнчăк сасси ман хăлхара илемлĕ кĕвĕ пек янăрарĕ.

— Кун пекки урăх ниçта та çукчĕ, — Лаврентьевпа Иванов та ман сĕтеле хупăрласа илчĕç. — Сутуçи апата кайнă пулнă, чĕнме килнех çитме тиврĕ, кая юлтăмăр-и?

— Тавтапуç сире, ачасем, эсир питĕ вăхăтра çитрĕр, — савăнăç куççулĕнчен вăтанмасăр ачасене пуçĕсенчен шăлса илтĕм. — Сирĕн учительница питĕ савăнать ĕнтĕ ку парнешĕн.

— Чăн та, маттурсем эсир, — директор та ачасем енне ăшшăн пăхрĕ. — Олеся Григорьевна, васкар, кĕтсе ывăнчĕç пулĕ.

Эпĕ пуçа мăн кăмăллăн каçăртса директор хыççăн утма хатĕрлентĕм.

— Олеся Григорьевна, — Юркка умĕпе иртнĕ май илтрĕм хыçалта. — Эпĕ юрă суйласа илтĕм. Çар службине кайма хатĕрленекен çамрăк ача пирки пулĕ вăл.

— Маттур ача эсĕ, Юркка. Юлташусем те лайăх, сана пулăшрĕç. Сирĕнтен чăн-чăн салтак пулатех, — эпĕ чарăнса тăрса ачасене пуçĕсенчен шăлтăм. — Шаннине тӳрре кăлартăр.

Директор каялла çаврăнса хăйсем çине ăшшăн кулса пăхни ачасене пушшех те хавхалантарчĕ: виççĕшĕ те йăлйăл çиççе, пĕр-пĕрне тĕрткелесе тăваттăмĕш урока васкарĕç.

# Тупмалли

Сарă кĕпе. *Повесть* . . . . . . . . . . 3
Чечек çыххи. *Калав* . . . . . . . . . . 82

*Литературно-художественное издание*

Для детей старшего школьного возраста

**Улькка Эльмен**
**(Куликова Ольга Геннадьевна)**

*Сарă кĕпе*
*Желтая рубашка*

**Повесть, рассказ**
*На чувашском языке*

Редактор *В.Г. Кошкин*
Художник *И.В. Алексеев*
Художественный редактор *А.В. Семенова*
Технический редактор *Е.Е. Фомина*
Корректоры *О.П. Рубцова, Н.Г. Герасимова*
Компьютерная верстка *Е.В. Васильевой*

16+ Информаци продукцийĕн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции
согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 20.05.16. Формат 60×90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 6,0. Уч.-изд. л. 4,74. Тираж 1000 экз. Заказ № К-6078. Изд. № 40.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Мининформполитики Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел. / факс (8352) 28-85-51.

Отпечатано в АО «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.

60.00



**Улькка Эльмен**
(Ольга Геннадьевна Куликова)
1961 çулхи августăн 31-мĕшĕнче
Вăрнар районĕнчи
Авшак Эльмен ялĕнче çуралнă.
И.Н. Ульянов ячĕллĕ
Чăваш патшалăх университечĕн
историпе филологи факуль-
течĕн чăваш чĕлхипе литератури
уйрăмĕнчен вĕренсе тухнă.
Нурăсри, Санарпусĕнчи вăтам
шкулсенче, районти «Çĕнтерӳ çулĕ»
хаçатра, район администра-
цийĕнче, «Капкăн» журналта ĕçленĕ.
Халĕ — акционерсен
«Вурнары-дорстрой» уçă пĕрлешĕвĕн
генеральнăй директорĕ.
Унăн уйрăммăн пичетленсе тухнă
кĕнекисем: «Ма инçе-ши çăлтăрăм?»,
«Кая юлнă ӳкĕнӳ»,
«Çирĕп чунлисем телейлĕ» тата
«Упраймарăм сана...».

Чăваш
кĕнеке
издательстви

ISBN 978-5-7670-2473-5